К 84.09(=Чув)
К43
Ч-43650

Тарас КИРИЛЛОВ



# СУЙЛАСА ИЛНИСЕМ

Национальная библиотека ЧР
4-043650

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К24.09(=4чув)
К43

ЧӐВАШ ПАТШАЛӐХ ГУМАНИТАРИ
ӐСЛӐЛӐХӖСЕН ИНСТИТУЧӖ

# ТАРАС КИРИЛЛОВ

# СУЙЛАСА ИЛНИСЕМ

Сӑвӑсем
Поэмӑсем

Г.Ф. Юмарт пухса хатӗрленӗ

Шупашкар
2010

УДК 821.512.111
ББК 84 (2 Рос=Чув) 6—5
К 43

*Пичете Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн Ăслăлăх канашĕ çирĕплетнĕ*

Пухса хатĕрлекенĕ ***Г.Ф. Юмарт***

Редколлеги: ***В.С. Григорьев, Н.Г. Ефремова-Ильина, В.В. Никифорова, В.Г. Родионов, Г.Ф. Юмарт***

Ум сăмахне çыраканĕсем
***Г.Ф. Юмарт, И.Г. Трофимова***

Кĕнекене XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăвашсен паллă поэчĕ Т. Кириллов (1880—1921) çырнă сăвăсемпе поэмăсене кĕртнĕ.

Хуплашки çинче Т.К. Кирилловăн 1904 çç. сăн ӳкерчĕкĕ.

Проверено 8 СЕН 2017

ISBN 978—5—87677—158—2

© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2010

И-43650



**Тарас Кириллов**



## ТАРАС КИРИЛЛОВ ПОЭЗИЙĔ

Тарас Кириллов тăван литература историйĕнче паллă йĕр хăварнă. Вăл XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш поэзийĕнче чи нумай пичетлenме ĕлкĕрнĕ поэт шутланать. Унăн сăвă кĕнекисем 1917 çулччен 12 яхăн тухнă. Вĕсенчен чылайăшĕ — пысăк калăплă поэмăсем. Кунсăр пуçне Т.Кириллов прозăпа та çырнă, вырăсларан та куçарнă. Çапла нумай пичетлenме ăна ытларах тĕн çинчен çырни пулăшнă. Çитменнине сăвăç Н.В. Никольскипе хурăнташлă пулнă (вăл тĕпчевçĕн йăмăкне качча илнĕ). Н.Никольский вара Хусанта чăваш кĕнекисене пичетлес ĕçе ертсе пынă. Т.Кирилловăн пултарулăх еткерĕнче халиччен кун çути курман ал çырусем те пур.

Совет тапхăрĕнче çыравçăн пĕр кĕнеке те тухман. Хăш-пĕр сăввисемпе поэмисен сыпăкĕсене кăна унта-кунта пичетленĕ. Çав вăхăтри идеологи унăн пултарулăхне халăхшăн сиенлĕ тесе шутланă, вăл çырнисене хытă критикленĕ. Калас пулать, М.Сироткин, И.Тукташ, Ю.Артемьев сăвăçăн тăван поэзи историйĕнчи хисеплĕ вырăнне палăртмасăрах иртмен — ытти хăш-пĕр критиксем (Г.Титов, В.Долгов, В.Канюков, А.Изоркин) унăн çынлăхлă енĕсене ним уямасăр тиркесе тăкнă. Çавăнпа Т.Кириллов хайлавĕсене вĕренӳ программисене питĕ сахал кĕртнĕ, вăл çырнисене пĕрре те уйрăм кĕнекен пухса кăларман.

Тарас Кириллович Кириллов 1880 çулхи нарăс уйăхĕн 12(24)-мĕшĕнче Чăваш Республикин Красноармейски районĕнчи Çеçмер ялĕнче вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Малтан Мăн Шетмĕри пуçламăш, унтан Ишекри икĕ класлă шкулсенче вĕреннĕ. 1899 çулта Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарирен вĕренсе тухсан икĕ çул Етĕрнери прихут шкулĕнче

ĕçленĕ. 1901 çулта вăл Шăхасанти икĕ класлă шкула куçнă. 1903—1905 çулсенче Т.Кириллов Хусанти миссионерсен курсĕнче вĕреннĕ, ун хыççăн тĕрлĕ çĕрте чиркÿ ĕçĕнче тăнă. 1918 çулта ку ĕçе пăрахнă та Чулхула (Горький) облаçĕнчи Воротынец районĕнчи Кукша ту ялĕнче шкулта вăй хунă. Поэт ÿпке чирĕпе чирлесе 1921 çулхи чÿк уйăхĕн 6-мĕшĕнче вилнĕ.

Т.Кириллов литература ĕçне 1904 çулта тытăннă. Вăл ытларах сăвăсемпе поэмăсем çырнă, вĕсем нумайăшĕ пичетленсе тухнă. Сăвăç публицистика хайлавĕсем пайтах пичетлесе кăларнă, куçару енĕпе те чылай ĕçленĕ, фольклорпа этнографи материалĕ нумай пухнă.

Сахал пурăннă пулин те вăл тăван литературăра пуян еткер хăварнă. 1917 çул хыççăн поэт çырав ĕçне хутшăнни паллă мар. Урăх çĕре куçса çĕнĕ çурт-йĕр çавăрма тивнине кура Т.Кириллов ун валли  вăхăт та тупайман пулас.

Çыравçă пултарулăхне совет саманиччен тишкерсе хаклама тытăннă. Кунта чи малтан Н.В. Никольский 1904 çулта çырнă «Взгляд у чуваш на воинскую повинность» статйине асăнмалла. Унта пулас поэт пухса панă халăх юррисене хакланă. Çав çултах Т.Кириллов çуралса ÿснĕ тăрăхри халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене нумай пуçтарнă иккен. Вĕсене çамрăк учитель çийĕнчех Хусана ăсатнă.

1913 çулта Г.Комиссаров «Чуваши Казанского Заволжья» ятлă пысăк тĕпчев ĕçĕ пичетлесе кăларнă. Унта автор чăваш литературин малтанхи утăмĕсене пĕтĕмĕшле тишкернĕ май Т.Кириллова К.Ивановпа тата Н.Шупуççыннипе пĕрле ун чухнехи паллă çыравçăсен шутне кĕртнĕ, хăш-пĕр кĕнекесен тематикине асăннă. Вăлах 1920-мĕш çулсенче çырнă хăйĕн статйисенче поэтăн сăввисемпе поэмисене час-часах хак панă.

1947 çулта М.Сироткин ятарласа Т.Кириллов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен очерк çырать, каярахпа ăна «Очерки дореволюционной чувашской литературы» кĕнекинче пичетлет. Тĕпчевçĕ тăван поэзире нумай ĕçленĕ сăвăçăн чăваш литература историйĕнчи пĕлтерĕшне палăртать, вăл пурнăçа чылай анлă çутатса панине кăтартать. И.Тукташ та Т.Кириллов тăван поэзире силлабо-тоника виçисемпе ăнăçлă çырма пуçланине ятарласа тишкерет, тĕслĕхсем илсе парать («Чăваш литератури» учебник. 9 класс. 1953).

Гурий Титов «К вопросу об идейных направлениях в дореволюционной чувашской литературе» статьяра Т.Кириллов пул-

тарулăхĕ çинче нумай чарăнса тăрать. Автор сăвăçа акă еплерех хаклать: «Т.К.Кириллов был наиболее колоритным и самым типичным, но далеко не единственным представителем правительственно-миссионерского направления в дореволюционной чувашской литературе»[1]. Çапла вара совет идеологийĕнчен иртме хăяйман критик поэт пултарулăхĕнчи çынлăха, ырра вĕрентекен енсене пачах та тенĕ пекех асăрхамасть, вĕсене сиенлĕ (е «реакциллĕ») тесе калать, çакна ĕнентерес тесе çине-çинех тĕслĕхсем илсе кăтартать.

Çак пĕтĕмлетĕве каярах В.Долгов, В.Канюков, А.Изоркин ялав пек вĕлкĕштерсе тăраççĕ. Сăмахран, В.Долгов «Юрăхсăра ырланине хирĕç» статьяра çакăн пек калать: «Т.Кирилловăн «паяна тивĕçлĕ еткерĕ» тесе, тен, пĕр-ик произведенине кăларма пулĕ, анчах ыйту тухса тăрать: вĕсем хăш енчен «литературăн кун-çулне тĕплĕрех çутатма» пулăшĕç-ши?; Кириллов поэзийĕ чăваш литературин тĕп çулĕнчен, гражданла-демократилле юхăмран аякра тăнă, ăна хирĕç пынă, халăхшăн ют пулнă»[2]. Критиксем çапла хĕрсе калаçасси Г.Юмарт Тарас Кирилловăн тĕн сăввисенче çынлăха вĕрентекен енсене ырланинчен хускалнă[3].

Ытти паллăрах ĕçсенчен Ю.Артемьевăн «Ĕмĕр пуçламăшĕ» кĕнекинчи ятарлă литпортрета асăнмалла. Тĕпчевçĕ, асăннă критиксемпе танлаштарсан, Т.Кириллов пултарулăхне объективлăрах, тĕрĕсрех хак парать, М.Сироткинпа И.Тукташ пĕтĕмлетĕвĕсене малалла аталантарать. Вăл çыравçăн тăван литературăри пĕлтерĕшĕ пĕчĕкех маррине ĕнентерет.

Т.Кириллов сăввисен шучĕ пысăк мар, пĕтĕмпе 9 кăна: «Турра манса ан кайăр» (1904), «Пулăшăр» (1905), «1861 çулхи нарăсăн 19-мĕшĕ — 1911 çулхи нарăсăн 19-мĕшĕ» (1911), «Патша çинчен хывнă юрăсем» (1913), «1914 çулта вăйлă вăрçă тапранса кайсан çырса хунă сăмахсемпе салтак юррисем, çырăвĕсем» (1914), «Çӳлти Сион» (1915), «Львовпа Перемышле илни çинчен хунă юрă» (1915), «Салтак арăмĕ сăпкари ачине сиктерсе ларнă чух юрланă юрри» (1916), «Чăваш халăх юрри» (1917).

Асăннă сăвăсенчен иккĕшĕ, малтанхипе юлашки, 10 çулсем каялла кăна пичетре тухнă, ыттисем 1918 çулчченех кун çути курнă. 1906—1910 çулсенче поэт сăвăсемпе поэмăсем çырни паллă мар. Вăл тапхăрти ĕçĕсем çинчен автор хăй асăнса хăварни те тĕл пулмарĕ.

Хăйĕн чи малтанхи сăввине вăл 1904 çулта çырнă[4]. Ал çырура хайлавăн ятне кăтартман. Текст «Эй, чун савнă тăвансем!» тенипе пуçланать, анчах та çакă сăввăн тĕп шухăшне уçăмлă пĕлтермест. Иккĕмĕш йĕрки вара шăпах хайлав ятне пама вырăнлă: «Турра манса ан кайăр». Вăл кĕскен те витĕмлĕн янăрать. Çак тĕп шухăша автор каярах урăх тĕрлĕ те калать:

1. Турă çине шанасса
Нихăçан та ан манăр,
Ăна хытă ĕненсе
Пĕтĕм чунтан юратăр.

2. Турă çыннисем пулăр.

Сăвва Т.Кириллов хăй пурăннă чухне пичетлеме ĕлкĕреймен. Текстри тĕп шухăш автор кулленхи пурнăçа сăнанă май вăраннă:

Кăçал тырă ӳснĕ чух
Çанталăк аван тăчĕ.
Кăçал эпир хамăр та
Тырă-пулă акрăмăр
Турă çине шаннипе.

Поэт шучĕпе, пурнăçри йывăрлăхсем çын куллен-кун çылăха нумай кĕнĕрен килеççĕ.

Хайлава çырса пĕтернĕ хыççăн сăвăç икĕ тĕлте хăш-пĕр йĕркесене чĕрсе хунă:

1. Пуринчен ытла малтан
Чăнлăх вырăнне шырăр:
Вăл вырăна чун каять,
Унта ĕмĕр пурăнать.

2. Кирлĕ çимĕç панăшăн.

«Пулăшăр» сăввăн тĕп геройĕ — 1904—1905 çулсенче Яппун вăрçинче аманнă салтак. Кунта сăмах ун ятĕнчен пырать. Вăл вăрçă хирĕнче хăй курнă инкек çинчен, кил-йышĕн нушисем тата аманнă салтаксем çинчен хурланса калаçать, пулăшу ыйтать. Хайлав теми — вăрçă хăрушлăхĕ.

1911 çулта Раççейри халăхсем хресченсене ирĕке кăларнăранпа 50 çул çитнине уявланă. Халĕ çĕр ĕçченĕсен пурнăçĕ пур енчен те çăмăл пулман пулсан та вĕсем 1861 çулччехни пек правасăр мар ĕнтĕ, пĕр хуçа патĕнчен теприн патне ирĕклĕн

куçма пултараççĕ. Çавăнпа хресченсене ирĕке кăларасси çинчен кăларнă саккун чăннипех ырă сăмаха тивĕçлĕ. Т.Кириллов çак паллă пулăма мухтаса çырни вырăнлă. Кунта автор II Александр патшана уйрăмах ырăпа асăнать, хресченсемшĕн «çĕнĕ пурнăç» пуçланнине палăртать:

Çирĕм виçĕ миллион
Пулнă унччен хĕресчен
Çĕрхи тĕттĕм аллинче
Улпутсен ирĕкĕнче.
Улпут аллинчен тухсан
Унччен туйман савăнăç
Çын чĕринче вылянчĕ,
Çав кун çутă хĕвел те
Çутăраххăн туйăнчĕ.

Малалла сăвăç тутар тĕнне тиркесе нумай çырать, христиан тĕнĕпе пурăнма чĕнет, ăна тĕрĕс тĕн вырăнне хурать. Ку сыпăк сăввăн тĕп темипе тӳрремĕн çыхăнман, вăл уйрăм хайлав пек те туйăнать.

1913 çулта Раççейре тепĕр пысăк юбилей ирттернĕ: Романовсен династийĕ çĕр-шывра 300 çул хушши патшалăха тытса тăнине палăртнă. Т.К.Кириллов та «Патша çинчен хывнă юрăсем» ятарлă сăвă çырнă. Ăна вырăсла «Песни о царе на Руси святой в 300-летие Дома Романовых (21 февр. 1613 г. — 21 февр. 1913 г.)» ятпа пичетлесе кăларнă. Хайлавра Романовсен династийĕн кун-çулне сăнласа тухман, унта çĕр-шыва тытса тăрас ĕçре патша мĕнле вырăн йышăнни çинче чарăнса тăнă. Автор çĕр-шыв ертӳçине халăх чунтан юратнине палăртать, ăна малашне те çирĕп тăма ырă сунать:

Турă пур ĕçре ăнтартăр...
Халăх тухтăр паттăра...
Русь патшалăх чаплăлантăр,
Патшана мухтав! Урра!!!

Çапла çĕр-шывпа халăх пурнăçĕнчи патшан пĕлтерĕшне кăтартасси сăввăн тĕп теми пулса тăрать.

1914 çулта Пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçлансан Т.Кириллов салтак юррисене тури чăвашсем хушшинче нумай çырса илнĕ. Вĕсене сăвăç уйрăм кĕнекен кăларма шухăш тытнă. Унта юрă тексчĕсем çумне тин çеç фронтран килнĕ çырусене хушса панă. Çав материалсен пĕлтерĕшне палăртса поэт сăвăлла ум сăмах

та çырса хатĕрленĕ. Ал çыру пичетленсе тухайман. Ăна «1914 çулта вăйлă вăрçă тапранса кайсан çырса хунă сăмахсемпе салтак юррисем, çырăвĕсем» ят панă[5]. Т.Кириллов вулакана акă еплерех чĕнсе калать:

Вăл килтен каяс чухне
Мĕнле юрă юрларĕ,
Мĕнле сăмах каларĕ,
Чунне мĕнле юрăпа
Лăплантарса юрларĕ,
Вăрçа кайсан вăрçăран
Мĕнле çыру ячĕ вăл,
Эсĕ çавна пурне те
Ĕмĕр çынсем асăнма
Çырса хума ан ÿркен.
Улăп тĕми айĕнче
Вăл юрланă юрăсем,
Эсĕ алтса хурсассăн
Ĕмĕрлĕхе çухалĕç.

1915 çулта «Вăрçă» альманахра тухнă «Çÿлти Сион» сăвăра Т.Кирилловăн яланхи теми — тĕн ыйтăвĕ — тĕпре тăрать. Сăвăç халăх Турра шанса тăни, унран пиллĕх ыйтни çинчен калать:

Эпир сана чунтан калатпăр:
Кун-çул курма пилле пире.
Сана анчах шанса тăратпăр:
Тăшмансенчен хăтар пире!

Тĕнче вăрçин малтанхи уйăхĕсенче Раççей çарĕсем чылай çĕнтерÿ тунă, тăшмансенчен тĕрлĕрен хуласене туртса илнĕ. «Çÿлти Сионпа» пĕрле пичетленнĕ «Львовпа Перемышле илни çинчен хунă юрă» сăвва шăпах çав çĕнтерÿсене халаллана.

«Салтак арăмĕ сăпкари ачине сиктерсе ларнă чух юрланă юрри» 1917 çулта уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă. Ăна 1916 çултах çырнă. Сăвăç çак сăпка юрринче пĕчĕк ачан пулас кун-çулне палăртать, çитĕнсе çитсессĕн вăл çĕр-шыв хÿтĕлевçи пуласса шанать. Çавăнпа пĕрлех кунта Пĕрремĕш тĕнче вăрçин тискерлĕхĕ те курăнать. Сăпка юрри пулсан та хайлавра вăрçă теми пысăк вырăн йышăнать.

«Чăваш халăх юррине» 1917 çулта Октябрьти революцичен пĕр уйăх маларах çырнă[6]. Ку вăл халăх гимнĕ валли хатĕрленĕ текст. Унăн тĕп шухăшĕ çапларах:

Чăвашсем. Пурте пĕрлешĕр —
Тĕрекленĕр тĕнчере,
Халăха çутта кăларăр
Ирĕклĕх хÿтлĕхĕнче.

Пĕтĕмĕшле илсен, поэт хăй сăввисенче пысăк та çивĕч ыйтусене хускатать. Вăл çĕр-шыв, халăх, этем пурнăçĕнчи уйрăмах пĕлтерĕшлĕ пулăмсем çинчен тарăн шухăша каять. Пурнăç тупсăмĕ, вăрçă хăрушлăхĕ, хресченсене ирĕке кăларни, патшалăха ертсе пыраканăн пĕлтерĕшĕ, халăх сăмахлăхĕн пуянлăхĕ — акă мĕнлерех темăсем канăç памаççĕ Т.Кириллова. Вăрçă пирки темиçе сăвăра çырнă пулсан та вăл кашнинчех хăйне евĕрлĕ шухăш тупса калать.

Поэт сăввисен тематикине вăл вăхăтри ытти авторсеннипе танлаштарсан çакăн пек ÿкерчĕк курăнать. Вăл хускатнă ыйтусем (тĕн, вăрçă) анлăрах та хăй евĕрлĕрех. Тĕн вĕрентĕвĕ çинчен XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Т.Кириллов чухлĕ çыракансем курăнсах каймаççĕ. Вантер Курийĕ, Хусанти тĕн академийĕ пĕтернĕскер, ку ыйтупа çырмасăр тăма пултарайманах, анчах та ун пек тĕслĕхсене хăйне айăпласран йăлтах пĕтернĕ пулас. Г.Кореньков вара «Турă, пур-и эсĕ, çук-и эс?» тесе иккĕленнĕ. Н.Шелепи Турра халалласа пĕр сăвă та çырман, К.Иванов, Н.Шупуççынни, Т.Тимкки, М.Трубина, Ф.Павлов поэзийĕнче те тĕн вĕрентĕвне ăнлантарса пани çук. Çитăр Ехримĕпе И.Козлов сăввисенче те Турă çинчен çĕнĕлле калани пулмарĕ. Т.Кириллов вара кашни сăвăра тенĕ пекех христианлăх йĕркипе пурăнма кирли çинчен ăнлантарать.

Вăрçă темине илсессĕн те çакăн пек ÿкерчĕкех куратпăр. 1812 çулхи вăрçă çинчен Т.Кирилловсăр пуçне ку тапхăрта никам та сăвă çырман. Яппун вăрçипе тĕнче вăрçи çинчен уйрăм сăвăсемпе уйрăм çаврасем сăвăланă автор йышĕ пĕчĕк мар ĕнтĕ, анчах вĕсем кĕскен те пĕтĕмĕшле кăна çырнă. Акă Г.Кореньков «Хăрушла çумăр» сăвăра çапла каланă:

Самани те латлă мар,
Кунĕ[н]-çĕрĕ[н] юн юхать.

1906 çулта Н.Шелепи «Çĕпĕр çулĕ — чукăн çуль» сăвăра «Пĕлтĕр пулчĕ вилĕм çуль» тесе асăнать.

М.Данилов хăйĕн «Салтак юррине» вырăс юррин тексчĕ тăрăх çырнă. Вăл унти уйрăм сыпăксене илсе малалла ăнлантарнă.

Кунта чăнах та Яппун вăрçин ӳкерчĕкĕ чылай анлă курăнать.

Н.Шупуççыннин Пĕрремĕш тĕнче вăрçи йывăрлăхĕсем çинчен çырнă сăвă темиçе те пур.

Асăннă тĕслĕхсемпе танлаштарсан Т.Кириллов сăввисем тĕрлĕ вăхăтри вăрçă-харçă инкекне пайăррăнрах та тĕплĕнрех çутатса параççĕ.

Сăвăсенчи сăнарсемпе ӳкерчĕксем те пăхса тухнă хайлавсенче хăйне уйрăм енсемпе палăраççĕ.

«Турра манса ан кайăр» сăвăра вулакан умне ӳкĕтлевçĕ сăнарĕ тухса тăрать: шăпах ӳкĕтлевçĕсем ĕнтĕ тĕттĕм халăха хистевсĕр те кăмăллăн тĕн йĕркипе пурăнма вĕрентеççĕ. Автор ӳкĕтлевçĕ сăнарне ятарласа ӳкермест, анчах та çакна эпир текстран тӳрех туйса илетпĕр.

«Пулăшăр» сăввăн тĕп персонажĕ — вăрçăра сусăрланнă салтак. Вăл ĕçлейми пулнă ĕнтĕ. Хайлава çав салтак ятĕнчен çырнă. Кунтан ытла сăнласа пани çук. Унăн сăмахĕсенчен эпир вăрçă хирĕнчи хăрушлăха, кил-йышри йывăрлăхсене тата салтаксен çĕр-шыва хӳтĕлес ĕçри вырăнне те лайăх туятпăр. Вăл хăйщĕн çеç мар, çемьешĕн, çĕр-шывшăн пăшăрханать. Салтака тулаш енчен сăнлани мар, ун шухăш-кăмăлне палăртни тĕп вырăнта.

«Патша çинчен хывнă юрăсенче» те автор тĕп героя тулаш енчен сăнласа памасть, ĕçĕ-хĕлĕпе чун хавалĕн хакне кăтартать.

Куртăмăр ĕнтĕ, вăрçă çинчен чылай сăвăра сăмах тапратнă. «Львовпа Перемышле илни çинчен хунă юрă» хайлавра ун сăнарне çапла ӳкерсе панă:

Вăрçă вучĕ вăйлă çунчĕ
Шатăртаттарса.
Тĕтĕм-сĕрĕм, тупă тарĕ
Çутта хуратса
Çил-тăвăл пек вăйлă тăчĕ
Чуна хăратса.

Салтак арăмĕн сăпка юрринче сăвăç ача амăшĕн шухăш-кăмăлĕ урлă халăх пурнăçне сăнлать.

Çапла Т.Кириллов пурнăçри йывăрлăхсене çырса кăтартмасăр иртмест, анчах вĕсем çинчен каласа вулакан кăмăлне вăйсăрлатса ямасть, малашлăха шанса тăма, йывăрлăхсене çĕнтерме чĕнет. Унăн персонажĕсем çĕр-шывпа пурнăç умĕнчи тивĕçе асрах тытаççĕ, вĕсене хӳтĕлес ĕмĕтпе пурăнаççĕ.

Т.Кириллов илемлĕх мелĕсемпе тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕрен усă курать. Ку вăл хускатнă темăран та, хайлав тытăмĕнчен те килет.

«Турра манса ан кайăр» сăвăра поэт тропсемпе питĕ сайра усă курнă. Чăнах та, пурнăç тупсăмĕ çинчен тарăн шухăша кайса калаçнă чухне ун пек стиль вырăнлăрах. Çакна сăвăç лайăх туйса тăнă. Хайлав ирĕклĕ сăвă шутне кĕрет, унта йĕрке вĕçĕсене састашламан. Çитменнине, вăл вăхăтра рифмăласа çырасси тăван поэзире йăлана кĕмен-ха.

«Пулăшăр» сăвăра малтанхинчи пек ăста оратор-ӳкĕтлевçĕ мар, хура халăх йышĕнчен тухнă çын сăмах илет. Вăл, халăх сăвви-юррине лайăх пĕлекенскер, сăнарсен параллельлĕхĕпе ăста усă курать. Этем хуйхи-суйхи çинчен калама салтак кайăк-кĕшĕк пурнăçĕнчи ӳкерчĕке анлăн илсе кăтартать.

Поэт ытларах пĕрремĕш сăпатран çырма юратать. Çакă ăна вулаканпа çывăххăнрах калаçма май парать. Автор хăй чиркӳре ĕçленĕ пирки халăхпа тăтăш хутшăннă, диалог пĕлтерĕшне çивĕч туйса тăнă. Кунпа пĕрлех çыравçă ыттисен диалогне те килĕшӳллĕн кĕртсе ярать (амăшĕпе ачисен калаçăвĕ).

Сăвăç халăх сăмахлăхĕнчи сăнарсемпе усă курнисем те тĕл пулаççĕ. Акă «1914 çулта вăйлă вăрçă тапранса кайсан çырса хунă сăмахсемпе салтак юррисем, çырăвĕсем» сăвăра улăп тăпри сăнарĕпе икĕ хутчен усă курнă. Çакă авторăн прозăлла пуплевне чĕртсе тăратать, шухăша контрастла мелпе калама май парать.

Çыравçă усă куракан илемлĕх мелĕсенчен тепри вăл — танлаштару. Акă II Александр патшана çăлтăрпа танлаштарса сăнланă. Тепĕр сăвăра автор патшана çĕр-шыври «пĕтĕм халăх Ашшĕ» тесе хаклать. Т.Кириллов Турра тĕнче çутипе танлаштарать («Çӳлти Сион»).

Поэт, ытти нумай автор пекех, эпитетсене те кăмăллать.

Пĕтĕмĕшле илсен, сăвăç илемлĕх мелĕсемпе сайрарах усă курать. Унăн чĕлхи прозăллăрах. Тишкернĕ хайлавсем сăвăланă статьясемпе калавсене аса илтереççĕ. Çакă поэт хутла сахал вĕреннĕ халăх валли çырнăран та килнĕ пулас.

Тарас Кириллов малтанхи сăввисемпе поэмисенче силлабикăна пăхăннă. Вăл кашни йĕркерех çичĕ сыпăка тытса пынă. 1913 çултанпа поэт час-часах силлабо-тоника виçисемпе усă курма тытăннă. Акă çав çулхи «Патша çинчен хывнă юрăсенче» тăршшĕпех хорей ритмĕ илтĕнет:

Патшапа пĕрле пур халăх
Ăшă кăмăлтан калать:
«Пысăк ырăлăх, тасалăх
Ырă турăран анать».

Кунпа пĕрлех тата акă мĕн курăнать: поэт çакăн пек виçеллĕ сăвăсенче рифмăсем тума та тăрăшать. Илсе кăтартнă тĕслĕхре пĕрремĕшпе виççĕмĕш тата иккĕмĕшпе тăваттăмĕш йĕркесем састашланаççĕ (<u>халăх</u> — <u>тасалăх</u>, <u>калать</u> — <u>анать</u>). Ку хайлавра сакăр сыпăклă йĕркесемпе çиччĕллисем черетленсе пыраççĕ. «Львовпа Перемышле илни çинчен хунă юрăра» тата салтак арăмĕн сăпка юрринче сыпăклă йĕркесем тĕл пулаççĕ. «Çӳлти Сионра» — тăхăр тата сакăр сыпăклисем. Çапла Т.Кириллов хăй сăввисен кĕвĕлĕхне пуянлатать, пусăмлăхне çирĕплетет. Каласа хăварасах пулать: силлабо-тоникăпа вăл Çеçпĕл Мишшичченех çырнă.

Акă хорей виçипе çырнă сăвă сыпăкĕсем. «Львовпа Перемышле илни çинчен хунă юрă»:

Вăрçă вучĕ вăйлă çунчĕ
Шатăртаттарса.
Тупăсем çĕр чĕтĕретрĕç
Кĕмсĕртеттерсе.

«Салтак арăмĕ сăпкари ачине сиктерсе ларнă чух юрланă юрри»:

Тутлă ыйăх килчĕ пулĕ,
Çывăрах, ачам,
Сăпкуна сиктернĕçемĕн
Юрăсем юрлам.

«Чăваш халăх юрри»:

Пирĕн Аслă Атăл вăйлă
Шурă Атăлпа пĕрле.
Халăх та унта хăватлă
Пĕр ăспа пĕрлешнипе.

Кирилловăн «Çӳлти Сион» сăввинче ямб кĕвви уçăмлă янăрать:

Çӳлти Сион, таса патшалăх
Этем пĕлми çарпа тулли.
Çарсем Турра савса юрлаççĕ:
Святой, Святой, Святой Турă,
Мухтав Сана, Святой пĕр Турă,
Мухтав Сана, тĕнче çути!

Сăвăç малтанхи тапхăрта силлабика виçипе хайланă. Силлабо-тоникăна вăл Пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче алла илет.

Пăхса тухнă текстсем жанр тĕсĕ тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ енлĕ. «Турра манса ан кайăр» сăвва пĕр иккĕленмесĕрех сăвăлла ӳкĕт теме пулать. Турра ĕненни пурнăçра мĕнле вырăн йышăннине лайăхрах ăнлантарас тесе автор шухăш повторĕсемпе усă курать: вулаканпа е итлекенпе тӳррĕн те ăшшăн калаçать.

«Пулăшăр» хайлава илсен унта кĕлĕ стилĕ сисĕнет. Кунта аманнă салтак пулăшу ыйтса тархаслать.

Т.Кириллов одăпа гимн çырма та кăмăлланă. «1861 çулхи нарăсăн 19-мĕшĕ — 1911 çулхи нарăсăн 19-мĕшĕ» сăввăн пĕрремĕш пайĕнче II Александра мухтаса çырнă. «Патша çинчен хывнă юрăсем» те чăн-чăн ода тĕслĕхĕсем шутланаççĕ. «Çӳлти Сион» вара — Турра аслăласа çырни. Хайлавра каланă тăрăх, «мухтав юрри — таса парне». «Чăваш халăх юрри» — тăван халăх гимнĕн тексчĕ (1917 çулта кун пек текстсем ытти çыравçăсем те çырнă — Турхан Энтри, Т.Алексеев). Сăввăн тĕп шухăшĕ — халăха пĕрлешме, чăмăртанма чĕнекен йыхрав:

Пурсăмăр пĕрле тан-харăс
Юнашар утса пырар,
Çынсерен пĕр çутă ĕмĕт
Тĕнчере чипер тытар.

Юлашки тĕслĕхсем юрă жанрне çывăх. Ячĕсенче автор хăй те юрă тесе кăтартнă. Чылай сăвă пуçламăшĕнче вĕсене мĕнле кĕвĕпе юрламаллине цифрăллă нотăпа палăртнă.

Куртăмăр ĕнтĕ, асăннă жанр тĕслĕхĕсем тĕн литератури витĕмĕпе аталаннă. Кун пек пуянлăх революцичченхи ытти сăвăçсен пултарулăхĕнче палăрсах каймасть.

Салтак арăмĕн сăпка юрри вара тĕрлĕ халăхăн ача-пăча поэзийĕн витĕмĕпе çуралнă. Автор уйрăмах М.Ю. Лермонтовăн «Казак майрин сăпка юррине» асра тытса çырни тӳрех курăнать (Ку юрра вырăсларан Т.Кирилловран маларах К.Иванов куçарнă). «Львовпа Перемышле илни çинчен хунă юрă» сăвва

гражданла лирика тĕслĕхĕ теме пулать. Унта та марш кĕвви сисĕнет.

Т.Кириллов сăвăран ытла поэма çырма юратнă. Тăван поэзире вăл 1905—1916 çулсенче хастарлăрах ĕçленĕ. Çак тапхăрта сăвăç 7 поэма çырма ĕлкĕрнĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ хăй вăхăтĕнчех пичетленнĕ: «Тырă пулнă çул» (1905, 1911), «1812 çулхи вăрçă çинчен хывнă юрăсем» (1911), «Хресчен хăй ĕçĕ çинчен хывнă юрăсем» (1911, 1912), «Турă тăрăшакана юратать» (1913), «Çар çынни 1914 çулта вăрçă тухсан юрлани» (1914), «Турă çинчен» (1915), «Çывăхри ял-йышсем» (1916).

Çыравçă поэмисене тематика тĕлĕшĕнчен 3 ушкăна уйăрма пулать: халăх ĕçĕ-хĕлĕпе йăли-йĕрки çинчен çырнисем, халăх историйĕ çинчен çырнисем, тĕн ыйтăвĕсемпе çырнисем.

Пĕрремĕш ушкăна çак поэмăсене кĕртмелле: «Тырă пулнă çул», «Хресчен хăй ĕçĕ çинчен хывнă юрăсем», «Çывăхри ял-йышсем».

«Тырă пулнă çул» хайлавăн 1-мĕш вариантне 1904 çултах çырнă[7]. Унта пуян кил-йышра çуралса ӳснĕ, хутла вĕреннĕ каччăпа хĕр пĕрлешни çинчен сăмах пырать. Автор çамрăксем пĕрпĕрне пĕрре курсах юратнă пек кăтартать. Поэмăн тĕп пайĕ шăпах çакă пулса тăрать. Вĕсен туйĕ çинчен питĕ кĕскен каланă. Хайлав малтан пуянсен кил-çурчĕпе паллаштарать, Уртеми евчĕ пахча ӳстернине мухтать, вăл ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăнине кăтартать. Уртеми пахчаран тупăш та туса илет иккен. Ăна кура ыттисем те килти ĕçпе укçа тума вĕреннĕ. Çапла автор кашни персонажăн ĕçне-хĕлне, сăн-сăпатне пайăррăн кăтартма пултарнă. Çапах та, хайлав сăнарĕсемпе сюжечĕ схемăллăрах пулса тухнă. Çакă вăл тĕп геройсене — Иванпа Татьяна — ытлашши хитрелетсе сăнланинчен те палăрать. Чăнах та кунта автор идеализацилесе çырать тени вырăнлă. Анчах Т.Кирилловăн малтанхи критикĕсем ялти çынсен пурнăçне илемлетсе кăна кăтартнă тенипе килĕшме çук. Поэмăра сăмах хреченсен пурнăçĕ çинчен мар, пуянсем çинчен пырать. Пуянĕсем те кунта нумай мар. Çитменнине вĕсем ĕçчен пуянсем, хăйсем ĕçлесе укçа тăваççĕ, пурнăçа хăйсен вăйĕпе ăнтараççĕ.

Поэмăн тĕп шухăшĕ — хутла вĕренсе çутта тухни çынна телей кӳрет. Ку уйрăмах хĕрарăмшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ:

Халăх хушши улшăнать;
Хĕрарăм çутта тухать,

Хĕрарăмăн çӳç вăрăм
Тенĕ сăмах пăçланать,
Хĕрарăм та ăсĕпе
Арçынпала танлашать.

Хайлавăн тепĕр вариантĕнче автор çĕнĕ сыпăк хушса панă. Унта сăмах Н.В.Никольскипе унăн юлташĕсем чăваш кĕнекисем кăларни çинчен пырать.

Маларах Т.Кириллов поэма геройĕсем хăш-хăш ялтан пулнине асăнса хăварнă. Çаксем поэт пурнăçри пулăмсемпе япаласене тӳрременрех, очеркларах сăнласа панине палăртаççĕ. Сăнарлă, сăнлăхлă вырăнсемпе юнашарах хайлавра прозăлла калани сике-сике тухать. Ку тапхăрта ăсталăха вĕренме чăвашла çырнă поэмăсем пичетленсе тухман-ха, поэма тавраше çыракан та сахал пулнă. Вĕсен шутĕнче М.Федорова, Турхан Яккăвне, П.Орлова асăнмалла. Иккĕшĕн хайлавĕсемпе («Арçури», «Варуççи») Т.Кириллов хăй «Тырă пулнă çул» поэма çырнă хыççăн паллашма пултарнă. Сăвăç, паллах, вырăс поэчĕсенчен те тĕслĕх илнĕ.

«Тырă пулнă çул» поэма малтанхи хут 1905 çулта пичетленнĕ. 1911 çулта ăна иккĕмĕш хут кăларнă, кăшт-кашт тӳрлеткеленĕ. 1905 çултах поэтăн «Пулăшăр» сăвви икĕ хутчен уйрăмшар кĕнекен тухнă. Поэмăпа çак сăвă халăх хушшине пĕтĕмпе 7000 экземпляр ытла сарăлнă теме юрать. Çапла Т.Кириллов 1905 çултах сăвăç ячĕпе палăрать. Асăннă кĕнекесем чăвашла тухнă малтанхи поэзи кăларăмĕсем шутланаççĕ. Çак ĕçĕн пĕлтерĕшĕ пĕчĕкех пулман. Ахальтен мар ун хыççăн сăвă кĕнекисем чăвашла самаях тухма тытăнаççĕ. Шăпах çав вăхăтран пуçласа чăваш поэзийĕнче сăвă çыракансен шучĕ хăвăрт ӳсет. Ку вăл ытти сăлтавран та килнĕ. Пирĕн шутпа, Т.Кириллов кĕнекисем К.Ивановпа Н.Шупуççыннине т. ыт. те поэзие хăюллăнрах кӳлĕнме хавхалантарнă. Асăннă хайлавсем («Тырă пулнă çул», «Пулăшăр») хальхи Чăваш Республикинчи ялсене кăна мар, Хусан, Чĕмпĕр, Самар кĕпĕрнисене те саланнă.

«Хресчен хăй ĕçĕ çинчен хывнă юрăсем» поэма 1912 çулта пичетленнĕ. Ялти çынсен пурнăçĕ çинчен сăвăçсем унччен те çыркаланă (М.Федоров, Турхан Яккăвĕпе Хĕветĕрĕ, Г.Кореньков т. ыт. те). К.Иванов, Н.Шупуççынни, В.Аниççи поэмисенче те хресчен ĕçне-хĕлне сăнласа пани сахал мар. Анчах унта эпир уйрăм пĕчĕк ӳкерчĕксем кăна куратпăр. Т.Кирилловăн асăннă поэминче вара чăваш хресченĕн çулталăкри ĕçĕсене пĕр-

4-43650

пĕринпе çыхăнтарса кăтартса панă. Автор поэмăна çурхи тапхăрпа пуçлать те хĕллехи ĕç-пуç çинчен каланипе вĕçлет, юлашкинчен тĕрлĕ вăхăтри тĕрлĕ ĕçсем пирки те хушса калать. Çĕр ĕçченĕсен пурнăçне çапла анлă çутатса пани, паллах, сумлăрах та пĕлтерĕшлĕрех.

Хайлава «юрăсем» тесе ят панă. Кунта пĕтĕмпе 17 сыпăк, кашнине хăйне уйрăм юрă теме юрать. Вĕсем пурте ял çыннин ĕçĕ-хĕлĕпе тачă çыхăннă. Автор ятарласах хресчен пурнăçĕ йывăррине палăртать, унăн хăш-пĕр сăлтавне кăтартать. Т.Кириллов чăваш хресченне килте те, хирте те анлă сăнлать. Кунта ун ятĕнчен çырнă юрăсем те пур. Калаçу пĕрремĕш сăпатран пырать. Малтан пирĕн ума пĕр çын сăнарĕ тухса тăрать. Хресчен хăй çулталăкра тăвакан ĕçсем çинчен пĕрреллĕ хисепре каласа парать. Юлашки юрăсене ушкăнпа тăвакан ĕçсене халалланă, çавăнпа та кунта нумайлă хисепре («эпир») тесе юрланă.

Кашни юрăра — уйрăм тема, уйрăм ӳкерчĕк. Вĕсене ятарлă ят парса тухма та пулать, автор вĕсене номерлесе çеç тухнă.

Поэма çакăн пек ӳкерчĕкрен пуçланать: хресчен ирпе ирех хăйĕн лашипе суха тăвать, çурхи сивĕ çиле пăхмасăрах ĕçлет. Тепĕр кунне вăл хура анана сĕлĕ акса шуратать.

Малтанхи юрра ум сăмах темелле пулсан, иккĕмĕшне кĕлĕ тесе шутламалла. Тĕне ĕненсе пурăнакан чăваш Турăран пулăшу ыйтать:

Калча хушшинче утатăп
Праçник кун ĕç пăрахса.
Çӳлти Турра кĕл тăватăп
Пĕлĕт çинелле пăхса.

Сана, Турăçăм, калатăп:
Çĕр-шыв ĕçĕ çăмăл мар;
Йăваш чунăмпа ыйтатăп:
Тырă-пулă туса пар.

Виççĕмĕш юрра эпир чип-чипер пейзаж сăвви теме пултаратпăр. Хресчен куçпа кăна мар, «чунпа пăхса» савăнать иккен.

Калча тĕлĕнче юрлаççĕ
Çӳлте таса тăррисем,
Чунăма савăнтараççĕ
Юратмалла кайăксем.

Кун пек пейзажсем кайран татах тĕл пулаççĕ. Вĕсене уйрăм сăвă пек пăхма та, усă курма та меллĕ. Тăваттăмĕш юрă та çавăн

пекех. Унта утӑ ҫи вӑхӑтне сӑнланӑ. Т.Кириллов поэмӑра хресчен ĕҫĕ йывӑррине темиҫе хутчен те палӑртать. Акӑ улттăмĕш юрӑри сыпӑк:

«Эй, хĕресчен, ĕҫĕ йывӑр:
Хĕл каҫма мул хатĕрле,
Шӑрӑхра чунна пит тӑвӑр,
Тӑвӑр пулин те ĕҫле!..»

Малтан эпир хресчене сухара, унтан утӑ ҫинче куртӑмӑр. Поэт вырмари ҫын кӑмӑл-туйӑмне те палӑртать.

Акӑ вырма хыҫҫӑн кĕрхи ака ҫитет. Сӑвӑҫ ӑна сӑнлама та манман, анчах ака тӑвасси пĕччен тумалли ĕҫ мар. Хресчене кунта унӑн тусĕ — лаша пулӑшать, йывӑр ĕҫре хӑйне тĕрек панӑшӑн хресчен лашана ҫывӑх ҫын пек хаклать (тӑххӑрмĕш юрӑ):

Кӑвак лаша, чунӑм пахи,
Эс манпа пĕрле ĕҫре.
Эс сыв пулсан ыраш аки
Туса хурӑпӑр пĕрле.

Ҫĕр ĕҫĕпе пĕрлех хресченĕн улма-ҫырла, хӑмла татса тирпейлеме тивет. Уншӑн яланах ĕҫ тупӑнать, авӑн ҫапас вӑхӑт пуҫланать. Кунта ĕҫ вĕресе кӑна тӑрать, йыш та хутшӑнать (вуннӑмĕш юрӑ).

Тыр-пул пухса пĕтерсен ял ҫынни Турра тав сӑмахĕ калать. Ӑна Т.Кириллов тав кĕлли тесе палӑртать.

Хир ĕҫченĕ Пукрав иртсен хӑна пуҫтарать, тыр-пул пухса пĕтернĕ ятпа уяв тӑвать, ĕҫкĕ-ҫикĕ юрӑсӑр пулаймĕ. Чӑваш асран кайми ашшĕ-амӑшĕпе алран кайми аки-сухине асӑнмасӑр иртмест. Т.Кириллов ҫавна палӑртма халӑх юррин сыпӑкĕпе ӑнӑҫлӑ усӑ курать (вун иккĕмĕш юрӑ).

Халӑх сӑмахлӑхĕпе усӑ курнӑ тĕслĕх маларах та пурччĕ. Поэт ваттисен урпа ҫинчен калакан сӑмахне вырӑнлӑ кĕртнĕ:

Урпа, аксан, утмӑл талӑк
Хушшинче пулса ҫитет.
Пулса ҫитсен, виҫĕ талӑк
Хушшинче ҫĕре ӳкет.

Хресчен хĕлле те ĕҫсĕр лармасть: унӑн тырӑ сутса укҫа тумалла, ҫурт-йĕре юсамалла т. ыт. те. Лӑпланса лармалли ҫук, ҫĕр

хěсěнет, ачи-пăчине тăрантармалла, тумлантармалла, пӳрчě тăвăр, парăма татас тесе «тӳшек-çитар сутма» тивет, укçа тума мел сахал. Çак йывăрлăхсене Т.Кириллов лайăх туйса тăрать:

Пурнăç пурăнма пит йывăр:
Мěнле пурнас, кун курас;
Çукшăн тěнче те пит тăвăр,
Мěнскер туса аслатас.

Чылай сăвăç чухăнлăха сăнласа панипе çырлахнă пулсан, Т.К.Кириллов хресченсене йӳнеçсе пурăнма тěрлěрен сěнӳ парать. Автор юлашки сыпăксенче хир ěçченне паракан канашсене асăнса тухнă. Пурнăçа ăнтарма хресченěн тěрлě япалапа сутă тумалла, кӳршě халăхсенчен вěренсе «хапрăк-савăт» лартмалла, тěрлě ěç пуçармалла. Çав шута кирпěч çапасси, тир тăвасси, çăматă йăваласси т. ыт. те кěрет. Сăвăç поэмăна хăйěн тěп сăмахне тепěр хут каласа пěтěмлетет:

Эй, тăванăм, ěçлě куна
Ху пěлнě ěçпе вěçле.
Ан ӳркен, кала юлташна,
Виççěн ěçлěпěр пěрле.

Поэт революционерла шухăшсем каламасть, пурнăç йěркине улăштарма йыхăрмасть. Вăл йывăрлăхран хăтăлассине кулленхи тăрăшуллă ěçре курать.

Поэма вěçěнче кěске хыç сăмах пур. Автор хăй юратса çырнине юрлама сěнет. Хайлав пуçламăшěнче унăн кěвви мěнле пулмаллине цифрăллă нотăсемпе кăтартнă. Чăнах та, поэмăн хăш-пěр сыпăкěсем халăх хушшине юрă пек сарăлнă. Сăмахран, пěрремěш текста Чăваш Республикин Красноармейски районěнчи Кайри Карăкра В.Антонова-Смирнова хăйěн амăшěнчен 1970 çулта халăх юрри пек çырса илнě.

Çапла Тарас Кириллов XX ěмěр пуçламăшěнчи чăваш хресченěн çулталăкри тěрлěрен ěçě-хěлне тěплěн сăнлать. Ялта ӳссе çитěннě сăвăç ял ěçченěн пурнăçне лайăх пěлет, çуклăхран хăтăлмашкăн ăнăçлă сěнӳ-канаш парать. Чăнах та, юрă евěрлě çырнă сыпăксем вулакан чунне витереççě. Вěсене ку темăпа çырнă малтанхи лайăх ярăм вырăнне йышăнатăн.

Калас пулать, хайлав текстěнче вырăнти сăмахсем тěл пулкалаççě. Хальхи вулакана вěсем ăнланмаллах та мар. Паллах, поэт хăй пурăнакан тăрăхри чěлхе уйрăмлăхěсене кěртмесěр

хăварма пултарайман. Тăван литература чĕлхин аталану шайĕ ун чухне аяларах пулнă-ха. Ăнланма йывăр вырăнсене хальхи вулакан валли текст айĕнче ăнлантарса пани кирлĕ. Юрать-ха, хайлавра ун пекки нумаях мар: шукля — шăчă, выт — утă, йосу — юсав, уçипе — ывçипе.

Ку хайлав юрăсенчен тăракан поэма шутланать. Ăна пĕтĕмĕшле темăпа çулталăкри вăхăт çаврăмĕ çирĕп шăнăрласа тăрать. «Хресчен хăй ĕçĕ çинчен хывнă юрăсем» паянхи куншăн та кивелмен. Унта ял хуçалăхне çирĕплетсе пырас ыйтупа пĕр кĕвĕллĕ шухăш тапса тăрать. Тăрăшса ĕçлесси, чунтан вăй хурасси — пурнăçа ăнтаракан ĕмĕрхи пахалăхсем.

Çак поэмăна çывăх хайлав кÿршĕ халăхсен поэзийĕнче курăнсах каймасть. Ку енчен Т.Кириллов ĕçне XVIII ĕмĕрти Литва поэчĕн Кристионас Донелайтисăн «Çулталăк хушши» («Времена года») поэмипе танлаштарса пăхма меллĕ. Ун пек хайлавсем Европăри ытти халăхсен литературинче те пулма кирлĕ. Чăваш поэчĕ вĕсемпе паллашма пултарни иккĕлентерет. Çак «юрăсене» вăл хăй тĕллĕнех çырма пултарнă.

1912 çулта Яков Иовлевпа Тарас Кириллов ячĕсемпе пичетленнĕ «Турă тăрăшакана юратать, тăрăшакан ырă курать» поэма шăпи, Г.И.Комиссаров каланă тăрăх, акă мĕнлерех: «Иовлев хутла сахал вĕреннĕ хресчен пулнă. Вăл Хусанти куçару комиссине сăвăлла повесть ярса панă. Анчах ку япала, хавшакскер, çав хальлĕн пичетлеме юрăхсăр пулнă. Н.В.Никольский çав ал çырăва юсама Т.К.Кириллова панă. Лешĕ повеçе пĕтĕмпех улăштарса çĕнĕрен çырнă. Вăл Иовлев ал çырăвĕн сюжетне кăна çаплипех хăварнă. Çапла юсаса çырнă повеçе пичетленĕ, автора йăпатас тесе кĕнеке хуплашки çинче малтан Иовлев хушаматне кăтартнă»[8].

Çак хыпарсене шута илсен, хайлава Т.Кириллов хăй пĕчченех çырнă теме юрать. Кунсăр пуçне Яков Иовлев çинчен çакă паллă. Вăл 1912 çулта Етĕрне уесĕнчи пĕрремĕш станри 5-мĕш участокăн полици страшникĕ пулса ĕçленĕ, хальхи Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи Очкасси ялĕнче пурăннă. Унăн кун-çулĕпе пултарулăхĕ хальлĕхе паллă мар. Вăл çырнă хайлавсем урăх тĕл пулмаççĕ.

Ыттисемпе танлаштарсан «Турă тăрăшакана юратать» поэма сюжечĕ анлăрах та кăткăсрах. Унти ĕç-пуççем пĕр-пĕринпе калкаллăн çыхăнса пыраççĕ. Ялта выçăллă-тутăллă пурăнакан вун иккĕри Ваçли телей шыраса хулана çитет. Кунта вăл хуçа патĕн-

че вунӑ ҫул хушши тарӑҫра ӗҫлет. Кайран ҫамрӑк тӑван яла таврӑнать те авланать, ҫурт-йӗр ҫавӑрать, ятлӑ-сумлӑ ҫын пулса тӑрать.

Автор акӑ мӗн каласшӑн: тирпейлӗ те ӑслӑ-пуҫлӑ пурӑнакан ҫын хӑй телейне тупатех. Поэт ҫак шахӑша хайлавӑн ятӗнчех палӑртса хӑварнӑ. Акӑ мӗн хушса калас килет. Т.Кириллов тӑтӑшах кулленхи пурнӑҫ йывӑрлӑхӗсене асӑнса хӑварать ҫеҫ мар, шӑпах ҫав йывӑрлӑхсенчен мӗнле хӑтӑлмаллине кӑтартать. Ҫӑлӑнӑҫ ҫулне сӑвӑҫ кӑмӑл-сипет ыйтӑвӗсене татса панинче курать. Вӑл нумай чухне ырӑ тӗслӗх илмелли сӑнарсене кӗртет.

Поэмӑри Ваҫли хӑйне ялан йӗркеллӗ тытма тӑрӑшать, тӗн вӗрентӗвӗпе ваттисем каланисене асран ямасть. Ҫакӑ ӑна чӑнах та хӑй пурнӑҫне юсаса яма пулӑшать.

Автор хайлавра хӑй хӑнӑхнӑ мелсемпех усӑ курать. Кунта пейзажсем те, диалогсемпе монологсем те, лирика ҫаврӑмӗсем те пур. Вӗсем пӗр-пӗринпе ҫӑмӑллӑн ҫыхӑнса пыраҫҫӗ. Вуланӑ май эпир чухӑн ял пурнӑҫӗпе, чӑваш вӑрманӗпе, нумай чиркӳллӗ хулапа, Атӑл шывӗпе паллашатпӑр. Хайлавра хула ятне асӑнман, анчах кунта сӑмах Шупашкар ҫинчен пыни сисӗнет-сисӗнетех. Вӑл Шӑмат ялӗнчен 50—60 ҫухрӑмра, вӑрмантан тухсан Атӑл хӗрринче курӑнать, унта чиркӳ нумай:

> Куҫ илме ҫук чиркӳсем,
> Калама ҫук паха ҫав.
> Пӗлӗт патне ҫитес пек
> Ҫӳллӗ хитре тӑрӑллӑ.
> Ылттӑн тӗслӗ хӗрессем,
> Хӗвел ҫутти ӳксенех,
> Хӑйсем хӗвел пулаҫҫӗ.

Ҫапла тӑван поэзире хулари пурнӑҫ ӳкерчӗкӗсем курӑнма пуҫлаҫҫӗ.

Асра юлакан вырӑнсенчен пӗри вӑл — инҫе ҫула каякан ывӑлне суккӑр амӑшӗ каланӑ пил сӑмахӗ:

> «Ай ывӑлӑм, ывӑлӑм,
> Пӗвӗм йӑтнӑ кӗлеткӳ,
> Ӳпке-пӗвер ывӑлӑм!
> Сана Турӑ усратӑр,
> Чир-чӗр, хаяр куҫсенчен
> Ҫӳлти Турӑ сыхлатӑр.
> Ҫӳренӗ чух сыхлӑ пул,
> Ҫын умӗнче йӑваш пул,
> Ҫын хыҫӗнче тӗрӗс пул...».

Чиркӳ ӗҫӗ — ӑса вӗрентесси. Пуп пулнӑ пирки Т.Кирилловӑн вӗрентӳ ӗҫне хастар хутшӑнма тивнӗ. Ҫавӑнпа унӑн пултарулӑхӗнче ӑс парса калани тӑтӑшах тӗл пулать. Тишкерекен поэмӑра ун пек вырӑн татах пур. Вӗсене йӗркеллӗ пулма вӗрентекен сӑмахсем тесе шутлама пултаратпӑр:

Ҫын ним те илсе каймасть.
Леш тӗнчене мул куҫмасть.
Ан манӑр ҫакна тесе
Каланӑ пек туйӑнать.
Ҫакна асӑма илсе:
Кун-ҫул иртме ӗҫлӗ пул,
Вилмеллине асра тыт,
Пухса хур сӑваплӑ мул,
Пурнӑҫна пит таса тыт.
Вилӗм куҫа курӑнмасть.
Сӑваплӑ ӗҫ хӑратмасть.
Кам таса, вӑл савӑнать.
Ҫылӑхли асапланать.

Ку сӑмахсене автор Ваҫлие хӑй ӑшӗнче калаттарать. Ҫапла вӑл тӗрлӗ лару-тӑрура тӗрлӗ ҫын урлӑ ӑс парать. Ун пек сӑмахсем ытти ӗҫ-пулӑмпа япаласем ҫинчен ҫырса кӑтартнипе черетленсе пыраҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсем вулакана питех йӑлӑхтармаҫҫӗ.

Ытти чухне Т.Кириллов юрӑ мелӗпе тӑтӑш усӑ куратчӗ пулсан, кунта вара вулакана канса илме май панӑ. Хайлавра юрӑ тени пӗрре кӑна тӗл пулать: ялти ҫамрӑксем хулана тухса кайнӑ Григорипе Ваҫли ҫинчен шӳтлесе юрлаҫҫӗ.

Т.Кирилловӑн хӑйне евӗр тепӗр япалине те палӑртма юрать. Вӑл лирикӑлла ҫаврӑмсем кӗртме юратать. Пӗр тӗслӗхре акӑ мӗн пӗлетпӗр. Хуларан яла таврӑннӑ Ваҫли «Тырӑ пулнӑ ҫул» поэмӑри Татьян йӑмӑкне качча илет имӗш:

Упаҫырми ялӗнчи
Салтак Петӗрӗн хӗрне
Татьян йӑмӑкне илтӗм.
Кӗнекесем илетӗр,
Хӑвӑр чухласа илӗр,
Татьян камне те пӗлӗр.

Ку поэмӑра йӑла-йӗркерен ытларах куллехни пурнӑҫ ӳкерчӗкӗсене куратпӑр. Унта XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнчи самана паллисем майӗпен кӗме тытӑнни те сисӗнет. Сӑвӑҫ ку хайлавра та чухӑнсене чунтан шеллени лайӑх палӑрать. Ҫак ҫынлӑх туйӑмӗ поэт пултарулӑхӗн пӗлтерӗшне ӳстерме пулӑшать.

«Çывăхри ял-йышсем» поэмăна Пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче (1915 çулта) çырнă[9]. Унти ĕç-пуçсем Яппун вăрçиченхи тапхăртанах пуçланаççĕ. Хайлав сюжетĕнче ялти улахпа ĕçкĕ-çике сăнласа пани тĕп вырăн йышăнать. Улаха ялти хĕрсемпе каччăсем хутшăнаççĕ. Кил хуçисем çав вăхăтра хăнара çӳреççĕ.

Поэмăра персонажсен йышĕ чылай пысăк. Вĕсене автор кашнинех анлăн ӳкерсе кăтартнă, ĕçсем контрастла пулса пынине кура сăнарсене те икĕ тĕрлĕ ушкăна уйăрма пулать. Т.Кирилловăн тĕп тĕллевĕ — урă пурнăç йĕркине мухтасси, ӳсĕр-пӳсĕрсене сивлесси.

Поэма хăйĕн калăпăшĕпе «Нарспине» çывăх. Сăвăç пĕр-пĕрне юратакан е пĕрлешсе пурăнакан çынсен шăписене тĕплĕн йĕрлесе тухнă. Ухинапа Михала, Утатипе Ухванеç, Анчăк мучипе арăмĕ, Яшмулапа карчăкĕ çинчен уйрăмах нумай çырса кăтартнă. Малтан асăннă икĕ çамрăк мăшăр вулакан умне илемлĕн те чыслăн тухса тăрать. Çулланнă мăшăрсем вара йĕрĕнмелле курăнаççĕ. Вĕсем ĕçкĕпе иртĕхнине хайлавра ытлашшипех вăрăм ăнлантарса панă. Т.Кириллов илемлĕх мелĕсемпе час-часах усă курса харкашакан ӳсĕр-пӳсĕр çынсене арçурипе, выçă кашкăрпа, йĕпе чăхпа, кăркапа танлаштарнă. Акă ытти танлаштарусем:

Урам алăкĕ сасси
Сысна çухăрнă пекех
Кариклатни илтĕнчĕ.

Хĕрарăмăн йывăр шăпине сăнланă май автор тăван литературăри сăнара та аса илет:

Ӳссен ăна укçалла
Ашшĕ-амăшĕ таçта
Сутса ярать ют яла,
Нарăспие панă пек.
Нарăспие Тăхтаман
Саламатпа хĕненĕ.
Хĕрарăм хăй ĕмĕрне
Ирттерет тĕттĕм çĕрте.

Поэма тытăмĕн паллăрах уйрăмлăхĕсенчен чи малтан юрă мелне асăнмалла. Чылай ĕç-пуç çинчен персонажсем юрласа пĕлтереççĕ имĕш. Пĕр юрăра тепĕр юрă тĕл пулать: Ухина тепĕр

çыннăн юррине пĕтĕмпех шăрантарса парать. Тĕрĕссипе, шăрантарать теме йывăр. Тексчĕ нумай чухне прозăллăрах илтĕнет. Унпа пĕрлех автор час-часах халăх юррисемпе, ваттисен сăмахĕсемпе усă курать. Çакă, паллах, сăвăлла очерк пек туйăнакан текста чĕрĕлĕх кĕртет.

Сăвăç ку хайлавра ытти ыйтусене те хускатнă. Тăван чĕлхе пĕлтерĕшĕ çинчен маларах Турхан Яккăвĕ, К.Иванов вирлĕ сăмах каланăччĕ. Вĕсен нацилĕх ялавне Т.Кириллов çӳлте тытать:

Кирек ăçта кайсан та,
Ху халăхна ан хурла.
Кирек ăçтан килсен те,
Халăхушăн усă кӳр.
Эпир чăваш, пĕр ухмах,
Тесе апла ан хурла.
Туррăн хура халăхне
Хурламашкăн юрамасть.
Санăн чĕлхӳ авалтан,
Начар тесе ан кулян.
Çыннăн ырă пуласси
Ырă кăмăлтан килет.
Ырă, ăшă кăмăла
Ырă сăмах палăртать.
Кирек мĕнле чĕлхе те
Ку таранччен пурăнать.
Çухаласси тахăçан;
Ăна кĕтсе пурăнсан,
Ху чĕлхуна ху мансан,
Кая юлăн выльăхран,
Вĕçсе çӳрен кайăкран.

Çакă интереслĕ. Илсе кăтартнă сăмахсене автор хăйĕнчен мар, поэмăри герой ятĕнчен калать. Поэма вĕçĕнче сăвăç хăй ятĕнчен вĕрентсе калани те пур. Унта кĕнеке усси çинчен сăмах пырать:

Кĕнеке вăл пил пек мар.
Тутанса пăхмалли мар.
Пĕтĕмпе вуламасăр
Ун туппине тупас çук.
Хура халăх кăмăлĕ.
Тула тухса мухтанмасть.
Ăна ĕмĕр юратни
Çынна сиен кăтартмасть,
Çынна усă кăтартать.

Поэт тăван культурăна çĕклесшĕн, вăл ытти халăхсенчен тĕслĕх илме йыхăрать:

Укçу арчара чухне
Капăрланас тĕлĕшрен
Виçĕ пусна ан хĕрхен,
Кĕнекесем курсанах
Илсе вула яланах.
Кĕнекепе çутталла
Тухса тăрать пур çын та.
Пăх-ха йĕри-тавралла:
Çут тĕнчери халăхсем
Çырăва вĕреннĕ те
Пуйса кайнă пур енчен:
Чукун çулпа çÿреççĕ,
Килĕсенче чул çуртсем
Аякран йăлкăшаççĕ.

Т.Кириллов тĕн вĕрентĕвне сарнипе кăна çырлахмасть, халăхăн кулленхи йăли-йĕркине çĕнетессишĕн тăрăшать.

Çапла, асăннă поэмăсем XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш ялне тĕрлĕ енчен çутатса параççĕ. Калас пулать, малтанхи поэма схемăллăрах, иккĕмĕшпе виççĕмĕшĕнче Т.Кириллов халăх юррисемпе анлă усă курнă. Иккĕмĕшĕнче пĕтĕмлетнĕ сăнар (хресчен) тăрать пулсан, ыттисенче персонажсен хăйне евĕрлĕхĕсене кăтартни лайăх сисĕнет.

Тарас Кириллова эпир тăван поэзире истори темипе çырнă авторсен шутне тивĕçлипе кĕртме пултаратпăр. Унпа пĕр вăхăталла ку енĕпе К.Иванов, Н.Шупуççынни, Л.Молгачев та пысăк калăплă хайлавсем çырса хăварнă. Малтанхи икĕ сăвăç «Хальхи самана» тата «Хĕрĕх çул хушши» хайлавсенче чăвашсем И.Яковлевчен тĕттĕмре пурăннине пĕтĕмлетсе панă. Виççĕмĕшĕ «Вильгельмпа Мухамет» поэмăра Пĕрремĕш тĕнче вăрçинчи лару-тăрăва сăнласа кăтартать. Т.Кириллов çырнисенче — хăйне евĕрлĕрех ÿкерчĕксем, шухăшсем.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш историйĕн темине ытларах çутатаканĕ Т.Кириллов шутланать. Вăл вăхăтра ку енĕпе Г.Комиссаров-Вантер, Н.Шелепи, К.Ивановпа Н.Шупуççынни çыркаланине асăнма пулать. Анчах та вĕсем ку ыйтăва кĕскен те пĕтĕмĕшле сăнланă, халăх халапĕсене каласа панă. Т.Кириллов хайлавĕсем 1812, 1904—1905, 1914—1917 çулсенчи вăрçă ÿкерчĕкĕсене анлăрах çырса кăтартнă. Ку ушкăна «1812 çулхи вăрçă çинчен хывнă юрăсем», «1914 çулта вăрçă тухсан çар çынни

юрланӑ юрӑсем» кӗреҫҫӗ. Унсӑр пуҫне «Ҫывӑхри ял-йышсем» хайлавра та чӑваш салтакӗ Пӗрремӗш тӗнче вӑрҫине хутшӑнни ҫинчен чылай каланӑ. Унта вӑрҫӑ хирӗнчи хӑрушлӑхпа пӗрлех ялти ҫынсен хуйхи-суйхине сӑнланӑ. Т.Кириллов кашни хайлаврах ҫак темӑна урӑх енчен ҫутатать. Малтанхи поэмине Француз вӑрҫи иртнӗренпе 100 ҫул ҫитнине халалланӑ, теприн-че вӑрҫа каяканӑн тивӗҫне палӑртнӑ. Хайлавсене тӑван ҫӗр-шыва юратма чӗнекен кӑмӑл-туйӑм витернӗ.

Поэт чи малтан халӑх историйӗнчи уйрӑм та паллӑ тапхӑр-сем ҫинчен сӑмах хускатнине асӑнмалла. Акӑ вӑл «1812 ҫулхи вӑрҫӑ ҫинчен хывнӑ юрӑсем» поэмӑра тутар-монголсен пусмӑ-рӗпе Француз вӑрҫи тапхӑрӗсене тӑван ҫырулӑх поэзийӗнче малтанхи хут ҫутатса парать:

Ӗлӗк-авал тутарсем
Хрансуссем пек тапӑнса
Пире ирӗксӗрленӗ,
Ик-виҫ ҫӗр ҫул йӗрттернӗ.

Сибирь ятлӑ ҫӗр урлӑ
Тутарсем куҫса килнӗ,
Ҫул ҫинче мӗн тӗл пулнӑ,
Вӗлернӗ, тытса ҫурнӑ.

Сап-сар тырӑллӑ уйсем
Тутарсемпе таптаннӑ,
Ҫамрӑк арӑмсем, хӗрсем
Тӑшман мӑшкӑлӗ пулнӑ.

Ун чухнехи вӑрҫӑра,
Ҫылӑхлӑ саманара,
Этем тӑкнӑ юнпала
Шыв юнланнӑ ҫырмара.

Автор Француз вӑрҫи ҫинчен калакан пайне халӑх юррисем тӑрӑх йӗркеленӗ (документсемпе вӑл прозӑлла ҫырнӑ очеркра усӑ курнӑ). Поэмӑри текстсене сӑвӑҫ хӑй илтсе ҫырса хунӑ пу-лас: вӗсем урӑх ҫынсен хучӗсенче тӗл пулмаҫҫӗ, И.Я.Яковлевпа В.К.Магницкий асӑннӑ вӑрҫӑ ҫинчен калакан урӑх юрӑсене ҫырса хӑварнӑ. Т.Кириллов хӑй пухнисене кӑшт-кашт улӑштар-ма та пултарнӑ (хӑш-пӗр вырӑнсем халӑх хушшинче каланӑ пек кӗвӗленеҫҫӗ). Ҫав текстсем вӑрҫӑ хирӗнчи хӑрушӑ самантсемпе паллаштараҫҫӗ:

Çĕр хĕрринчи сĕм вăрман —
Витĕр тухми сĕм вăрман
Кăн-кăвак çанталăка
Ĕмĕлкипе хуратать.
Ах, вăрман мар, ним те мар —
Хрансус çарĕн ĕмĕлки
Çӳле витĕрех ӳкет,
Унпа пĕлĕт хуралать.

Улăхри текерлесем
Çурхи тырра акнă чух
Хресчен пуçĕ тĕлĕнче
Явкаланса вĕçеççĕ.
Текерле мар, ним те мар —
Ютран килнĕ утлă çар
Лашасемпе таптатса
Пирĕн çие тăрăнать.

Смулен хули — шур хула,
Хула тавра уй хура,
Çунăк ялсем хуп-хура,
Çĕр вĕри, тӳсмест ура.

Хайлавра вăрçă вăхăтĕнче Бородино хирĕнче пулса иртнĕ пысăк çапăçу çинчен те асăннă.

Кун çинчен автор М.Лермонтовăн «Бородино» сăввине асра тытса çырма пултарнă. Унта та çапăçу пирки вăрçа хутшăннă салтак каласа парать. Çак меле Т.Кириллов вырăс поэтĕнченех алла илнĕ темелле. Салтак арăмĕн сăпка юррине те чăваш сăвăçи М.Лермонтовранах тĕслĕх илсе çырни яр уççăн курăнать. Шел пулин те, сăвăç пĕр япалана асăрхаса çитереймен. Хайлава 1911 çулта çырнă. Ку вăхăт тĕлне Француз вăрçинче пулнă салтак 120 çулсене çитнĕ пек пулса тухать. Çакна вулакан ĕненессĕн туйăнмасть. Автор çавна пĕлнех, анчах вулакана интереслĕ пултăр тесе ватă салтак ятĕнчен çырнă теме тивет.

Поэма пĕрлĕх, историлĕх, патриотлăх туйăмĕ çуратать. Раççее хӳтĕлеме 1812 çулта тĕрлĕ халăх çынни хутшăннă. Сăвăç вĕсене ятарласа асăнман пулсан та, эпир çакна лайăх туятпăр. Хайлавăн хăйне уйрăм пĕлтерĕшĕ шăпах çакăнта.

Умĕнхи хайлавра вăрçă-харçă хăрушлăхĕ çинчен калани тĕпре тăрать пулсан, «Çар çынни 1914 çулта вăрçă тухсан юрлани» поэминче эпир çĕр-шыв умĕнче тивĕçе туякан патриота куратпăр. Кунта та сăмах ун ятĕнченех пырать. Сăнарах пăхсан, хайлав темиçе тĕрлĕ юрăран тăни сисĕнет. Çакă çара каякан çын кампа тата мĕн çинчен калаçнинче палăрать.

Пуçламăшĕнче вăл хăйĕн тăван çĕр-шывне мĕн тери хакланине пĕлтерет:

Эй, суратнă çĕрĕм-шывăм,
Эй, аннем, çĕр кăкăрри!
Сан çинчен юрланă юррăм —
Юррăмсенĕн чи пахи.

Хăрушă инкек сиксе тухнă самантра вăрçă хирне ăсанакан çамрăк тăван çĕрне хӳтĕлеме Турăран хӳтлĕх ыйтать:

Хальтерех, çынсем, тасалăр:
Турă, çăл, хăтар пире.
Сан çине шанса тăратпăр,
Вилĕмрен хăтар пире.

Лирика геройĕ «вăрçă ĕçĕ — Турă ĕçĕ» тесе шутлать. Вăрçă-харçă çынсен чун-хавалĕ пăсăлнăран, Турра маннăран тапранать иккен.

Çар çынни авалхи йăлана асра тытса ял-йышпа сыв пуллашма та манмасть, унран хăйĕн кил-йышне пулăшса пыма ыйтать. Хăй вара çĕр-шыв умĕнчи аслă тивĕçе пурнăçлама ытти халăх ачисемпе каять:

Тĕрĕс тĕнлĕ Русь патшалăх
Тĕрлĕ халăхсем усрать.
Кирлĕ вăхăтра пур халăх
Пĕр çын пек пĕр ăс тытать.

Çапла юрăçă Раççей çĕр-шывне халăхсен пĕрлĕхĕ вырăнне хурать. Уншăн çакă тăшмана çĕнтерме шанчăк парса тăрать. Поэмăра çавăн пекех çĕр-шывăн çарĕсене тата пĕрле ӳснĕ тантăшсене ятарласа чĕнсе каланă вырăнсем те пур. Тĕллĕн-тĕллĕн шухăша темиçе хут калани сиксе тухать. Юрăра ун пек çаврăмсем каçаруллă, вĕсем шухăша лайăх кăна витерме пулăшаççĕ, хайлав лирикăлăхне вăйлатаççĕ.

Маларах пăхса тухнă поэмăсене 7 сыпăклă силлабикăпа çырнă. Унта йывăррăнрах вуланакан çаврăнăш сахал мар. Т.Кириллов хăйĕн хайлавĕсене юрă тесе шутлать пулсан та прозăллăрах илтĕнекен силлабикăпа кĕвĕлет. Тишкерекен поэмăна силлабо-тоника виçипе — хорейпа — хайланă. Автор ăна пĕр тикĕс тытса пынă. Çавăнпа ку произведени çăмăллăн вуланать. Хальлĕхе сăвăç рифмăсене йăвашрах тăвать-ха, вĕсен çирĕп йĕрки çук.

Поэмăсен текстне темăпа шухăш енчен пайласа пăхмасан вĕсен тытăмне уйăрса илме йывăр, уçăмлă палăртма çук. Çавăнпа эпир асăннă хайлавсене тишкернĕ чухне çакна асра тытрăмăр. Т.Кириллов Французпа Пĕрремĕш тĕнче вăрçи çинчен çеç мар, Яппун вăрçи çинчен çырнине те куртăмăр. «Пулăшăр» ятлă вăрăм сăвă хăйĕн тытăмне кура поэма енне сулăнать. Унта вăрçă инкекĕпе аманнă салтак шăписĕр пуçне унăн арăмĕпе ачисем пирки те уçăмлă çырса кăтартнă. Хăйĕн йăвине вилĕмрен хăрамасăр сыхлакан чĕкеç çинче те сăвăç самаях чарăнса тăрать.

Куртăмăр ĕнтĕ, кашни хайлаврах вăрçă ыйтăвне тĕрлĕ енчен çутатса панă. Пăхса тухнă тĕслĕхсем çĕр-шыв умĕнче яваплă пулма йыхăраççĕ, чунра патриотлăх туйăмĕ вăратаççĕ.

Виççĕмĕш ушкăна тĕн çинчен çырнă поэмăсем кĕреççĕ. Тĕн вĕрентĕвĕн теми — Т.Кириллов пултарулăхĕнчи тĕп ыйтусенчен пĕри. Астăватпăр ĕнтĕ, унăн малтанхи сăввинчех («Турра манса ан кайăр») Турă çинчен сăмах пырать. Автор ĕненекен этем пурнăçĕнче тĕн пысăк вырăн йышăннине палăртатать. Ытти сăввисемпе поэмисенче те çакăн çинчен калани тăтăшах тĕл пулать. Т.Кириллов ку темăпа ятарласа пĕр поэма кăна çырнă: «Турă çинчен» ятлăскер. Хăйĕн калăпăшĕпе вăл сăвăçăн чи пысăк хайлавĕсенчен пĕри шутланать, сăвă йĕркисен шучĕпе «Нарспи» патнелле çывхарать. Ку поэма сăнар-сюжет енчен те пуян. Çавăнпа та ăна малтанхи икĕ ушкăнран уйăрса хăйне тĕллĕн пăхма тивĕçлĕ тесе шутлатпăр.

Т.Кирилловччен чăваш поэзийĕнче христианлăх темине çутатса паракансем пулман мар. Чи малтан кунта Турхан Яккăвĕпе Хĕветĕрĕн сăввисене асăнмалла. Вĕсем иккĕшĕ те 1900 çул тĕлнелле Библири уйрăм сюжетсем тăрăх икшер-виçшер пейĕт (баллада) сăвăланă. Унта сăмах Христоса пăталани, Магдалина, ахăрсамана т. ыт. çинчен пырать. Турра ĕненни çынсене пурнăçра хăтарни пирки И.Падияров «Аташса кайнă çын» поэмăра 1912 çултах çырса кăтартнă. Г.Кореньков, Н.Шелепи, И.Козлов т. ыт. сăвăçсем христианлăх ыйтăвĕсене çула май кĕскен хускатса иртнĕ. Хăшĕ-пĕри чăн тĕн вĕрентĕвĕ пирки иккĕленсе те çырнă. Т.Кириллов вара хăй те чиркӳре ĕçленĕ май асăннă темăна анлăрах та тĕплĕрех çутатнă.

Пĕлтерĕшĕпе те, калăпăшĕпе те пысăк ĕç тунă сăвăç. Вăл Библири паллăрах сюжетсене сăвăласа панă. Чи малтан автор Çӳлти Турă сăнарне пĕтĕмлетсе кăтартать, унăн тĕп уйрăмлăхĕсене асăнса тухать. Поэма çак сăмахсемпе пуçланать:

Эсӗ, Турӑ, ӗмӗр-ӗмӗр
Ҫут ҫанталӑкра Пурри.
Эсӗ — Сывлӑш, пӗтӗм пӗлӗт,
Пӗтӗм ҫӗр Санпа тулли.

Пуҫланусӑр, иртӗнӳсӗр,
Нихӑҫан та Улшӑнми,
Ырӑ Турӑ, ӗмӗр-ӗмӗр
Пӗр пекех тӑраканни.

Эсӗ, Турӑ, пӗр хӑватлӑ,
Пӗр Пӗчченлӗ Виҫлӗре;
Чӑнлӑх, ҫутӑ, ӑслӑх Пуҫӗ
Эсӗ Виҫлӗ Пӗррере.

Малалла Турӑ — «Пултаруҫӑ», пурне те куракан, пурне те тытса тӑракан пулнине ӑнлантарса панӑ. Ҫапла поэт Библи текстне тӳрремӗн сӑвӑламасть, ҫыхӑнтарса ҫырать.

Автор тӗнчене пултарни, Адампа Ева, Каинпа Авель, Турӑ кӑтартнӑ хӑватсем т. ыт. ҫинчен калакан сыпӑксем ҫинче чарӑнса тӑрать. Вӗсемпе чӑвашсем И.Я.Яковлев букварӗ тӑрӑх та, йышлӑ вулакан валли кӑларнӑ кӗнекесем урлӑ та паллашнӑ. Анчах ҫаксене кӗвӗллӗ сӑмахпа сӑвӑласа пани хӑйне евӗр илтӗнет, лайӑхрах асра юлать. Шӑпах ҫакна шута илнӗ те ӗнтӗ Т.Кириллов. Вӑл Библири кӑткӑс та йывӑр вырӑнсене кӗртмен, вулакан тавракурӑмӗн шайне асра тытнӑ. Ытти сыпӑксенче, малтанхинчи пекех, пӗр-пӗр ӗҫ-пулӑм мӗне вӗрентнине палӑртса хӑварнӑ. Ҫавӑн пек лирика ҫаврӑмӗсем калакан сӑмахӑн пӗлтерӗшне уҫӑмлӑраххӑн ӑша хывма пулӑшаҫҫӗ.

Поэмӑра Библин пӗрремӗш пайне кӑна мар, иккӗмӗшне те ӳкерсе панӑ. Иккӗмӗшӗнче, паллах, Иисус Христос пурнӑҫӗпе вӗрентӗвӗ ҫинчен калани тӗп вырӑн йышӑнать. Кунта Турӑ ывӑлӗн сӑнарне пӗтӗмлетсе панӑ. Унра халӑх шанчӑкӗ, телейӗ, вӑл ҫынна аслӑ ҫулпа утма май парать:

Чирлӗ ҫынсене сыватнӑ
Пӗтӗм халӑх умӗнче.
Хӑватна пире кӑтартнӑ,
Манас ҫук ӑна тӗнче.

Чӗреме уҫса кӗртетӗн
Хӑвӑн ырӑ хыпарна,
Ҫимӗҫ вырӑнне илетӗп
Ӑшӑмпа сан сӑмахна.

«Турă çинчен» поэма паянхи кун та кивелмен. Вăл хальхи вăхăтра хăйĕн йышлă вулаканне тупрĕ. Библи тăрăх кун пек сăвăласа çырнă хайлавсем хальлĕхе пулмарĕç-ха. Псалтирьпе ытти кĕнекесене сăвăласа куçарни ку шута кĕмест. Силлабо-тоникăпа çырни поэмăн пĕлтерĕшне нумай ўстерет. «Турă çинчен» поэма вулакан чĕринче çынлăх туйăмĕ вăратать, унăн кăмăл-сипет ыйтăвĕсене чылай тивĕçтерет.

Т.Кирилловăн силлабо-тоникăпа хайланă сăввисемпе поэмисем Çеçпĕл Мишшине чăваш сăвă хывăмĕ çинчен калакан трактатне — «Сăвă çырассипе ударени правилисем» — çырма хавхалантарни иккĕлентермест.

Куртăмăр ĕнтĕ, Т.Кириллов поэмăсенче чăваш пурнăçĕн тĕрлĕ енне, тĕрлĕ тапхăрне сăнласа кăтартма пултарнă. Унăн тĕп идеалĕ христиан тĕнĕ вĕрентнĕ пек пурăнасси, тăван çĕр-шыва юратса ĕçре пиçĕхесси. Силлабо-тоника виçипе сăвăç «Турă çинчен» поэмăра çеç мар: «1914 çулта вăрçă тухсан çар çынни юрланă юрăсенче» те ăнăçлă усă курать. Çак пахалăхсем ăна XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи паллă поэтсен ретĕнче тăма май параççĕ.

Тарас Кирилловăн хайлавĕсенче виçĕ тема тĕпре тăрать: ĕç çыннисен кулленхи пурнăçĕпе йăли-йĕрки, тĕн вĕрентĕвĕ, вăрçă-харçă инкекĕ. Вăл хускатнă ыйтусем хăй саманишĕн çивĕч те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Ялти чăвашсен ĕçĕ-хĕлĕпе йăли-йĕркине уйрăмах «Хресчен хăй ĕçĕ çинчен хывнă юрăсем», «Турă тăрăшакана юратать», «Çывăхри ял-йышсем» поэмăсенче анлă çутатса панă. Автора чăваш культурин, чĕлхин шăпи, халăхăн пуласлăхĕ хытă шухăшлаттарнă. Çакă хăш-пĕр поэмăра тата «Чăваш халăх юрри» сăвăра лайăх курăнать. Тăван чĕлхе, поэт шучĕпе, нацин тĕп палли шутланать. Т.Кириллов, чăнах та, пирĕн поэзин ытти классикĕсенчен тĕн вĕрентĕвĕ çинчен нумай çырнипе уйрăлса тăрать. Вăл патша саманин идеологине хирĕçлемен. Пурнăçри йывăрлăхсене революципе мар, тĕн вĕрентĕвĕпе çăмăллатмалла тесе шутланă. Хайлавсенче христианлăх вĕрентĕвне тĕрлĕ мелпе: публицистла сăвă çырса («Турра манса ан кайăр»), поэмăри персонажсен сăмахĕсем урлă тата Библи текстне сăвăласа ăнлантарнă. Поэмăсенче тĕн çинчен вĕрентсе калани ĕç çыннисен кулленхи йывăрлăхĕсене сăнласа панă май пулса пырать.

Вăрçă-харçă инкекĕ çинчен Т.Кириллов историн анлă контекстĕнче çырса кăтартать. Унăн поэзийĕнче тутар-монгол-

сен пусмӑрӗ те, 1812 ҫулхи Француз вӑрҫи те, 1904—1905 ҫулсенчи Яппун вӑрҫи те, Пӗрремӗш тӗнче вӑрҫи те ӳкерӗннӗ. Ҫак хайлавсем вулакан чунӗнче патриотлӑх туйӑмӗ хускатаҫҫӗ, хамӑрӑн аваллӑха лайӑхрах пӗлме пулӑшаҫҫӗ, мирлӗ пурнӑҫ хакне туйма вӗрентеҫҫӗ.

Т.Кириллов асӑннӑ тӗслӗхсенче сӑнарсене типлӑрах тума тӑрӑшни чылаях сисӗнет. Хӑйӗн геройӗсене вӑл тулаш енчен те, чун-хавал енчен те сӑнласа парать. Вӗсен йышӗнче ырӑ сӑнарсем те, пархатарсӑррисем те курӑнаҫҫӗ. Поэт пӗтӗмӗшле каланипе ҫырлахмасть, ӗҫ-пулӑмсене ӳкерчӗксем урлӑ кӑтартать. Хӑш-пӗр чухне пӗр-пӗр персонаж характерӗ улшӑнса пынине те куратпӑр. Автор чӑвашсем хула пурнӑҫне хутшӑнма пуҫланине, техника ӗмӗрне кӗме тытӑннине те палӑртать. Вӑл геройсен калаҫӑвне, тыткаларӑшне, шухӑш-кӑмӑлне йӗрлеме юратать. Персонажсен пурнӑҫне сӑвӑҫ час-часах авалхи йӑла-йӗрке фонӗнче ҫырса кӑтартать. Сӑмахран, кунта туй, улах, ӗҫкӗ-ҫикӗ, салтака ӑсатни тӗл пулать.

Поэт вулаканпа тӳрремӗн калаҫма тӑрӑшать. Нумай чухне сӑмах пӗрремӗш сӑпатран пырать. Пейзажсемпе юнашарах диалогсем, монологсем, лирика ҫаврӑмӗсем тӗл пулаҫҫӗ. Сӑвӑҫ халӑх юррисемпе, ваттисен сӑмахӗсемпе усӑ курать. Унӑн чӗлхинче тури чӑвашсен диалектизмӗсем сахал мар. Ҫакна вӑл хӑй пурӑнакан тӑрӑхри ҫынсене ӑнланмалла пултӑр тесе тунӑ ӗнтӗ. Хӑш-пӗр хайлавсен текстне мӗнле кӗвӗпе юрламаллине те цифрӑллӑ нотӑпа кӑтартнӑ.

Малтанхи тапхӑрта (1904—1914) Т.Кириллов 7 сыпӑклӑ силлабикӑпа ҫырнӑ. Юлашки вӑхӑтра (1915—1918) вӑл ытларах силлабо-тоника виҫисемпе усӑ курма тытӑннӑ. Ку уйрӑмах куҫарнӑ юрӑсемпе 5 сӑвӑра тата 2 поэмӑра уҫӑмлӑ палӑрать. Сӑвӑҫ ытларах хорей виҫипе такмаклать. Унӑн сӑвӑ йӗркисем 5-шер, 8-шар сыпӑкран тӑраҫҫӗ. Ҫӗнӗ йышши сӑвӑ хывӑмпа Т.Кириллов хӑш-пӗр куҫарусенче те усӑ курнӑ. Ун чухнехи ытти поэтсемпе танлаштарсан вӑл силлабо-тоникӑпа пуринчен те ытларах ҫырнӑ. Ҫӗнӗ виҫесене йӑлана кӗртмелли ҫинчен сӑвӑҫ 1914—1915 ҫулчченех каланӑ. Ку шухӑшсем унӑн Н.В.Никольский патне янӑ ҫырӑвӗсенче палӑраҫҫӗ.

Стиль тӗлӗшӗнчен сӑвӑҫ чӗлхи дидактикӑллӑ. Унӑн ятарлӑ пейзаж сӑввисем ҫук. Вӑл ҫырнисенче публицистикӑпа лирика шайлашса пыраҫҫӗ. Апла Т.Кириллов поэзийӗ тематика, жанр, стиль, сӑвӑ хывӑм енчен хӑйне евӗрлӗхпе палӑрса тӑрать.

*Геннадий Юмарт, Ирина Трофимова*

[1] Титов Г.М. К вопросу об идейных направлениях в дореволюционной чувашской литературе // О чувашской литературе. Сб. ст. ЧНИИ. Вып. 77. Чебоксары, 1977. С. 20.

[2] Долгов В. Юрӑхсӑра ырланине хирӗç // Ялав, 1976. 12№. С. 29—30.

[3] Юмарт Г. Тарас Кириллов // Тӑван Атӑл. 1975. 2№. С. 79—80.

[4] ЧПГӐИ ӐА, I, 162. С. 426—428.

[5] ЧПГӐИ ӐА, I, 286. С. 68—69.

[6] ЧПА, 334, XXII. Л. 2.

[7] ЧПГӐИ ӐА, I, 151. С. 176—191.

[8] Комиссаров Г.И. История чувашской письменной литературы. 1946. Л. 24.

[9] ЧПГӐИ ӐА, I, 286. С. 23—59.

## С Ă В Ă С Е М

### ТУРРА МАНСА АН КАЙĂР

*Малтан Турă патшалăхĕпе тĕрĕслĕхне шырăр, ытти вара пурте пулĕ.*

*(Матф. 6, 33)*

Эй, чун савнă тăвансем!
Турра манса ан кайăр,
Çылăх айне ан пулăр,
Чунăрсене çăласшăн,
Вилсен рая кĕресшĕн
Халех таса пурăнăр.

Ку тĕнчере пурăнма
Çынна мĕн-мĕн кирлине
Çӳлти Турă Хăй ăна
Яланах пĕлсе тăрать.
Турă çыннăн ĕмĕтне,
Унăн хирти асапне
Тырă-пулăпа пиллет,
Этемсене хĕрхенсе
Çумăр тĕнчипех парать,
Пирĕн анасем çине
Хăй пиллĕхне антарать.

Анчах эпир, этемсем,
Нумай çылăхсем пирки
Хирте ӳснĕ çимĕçе
Алла илейместпĕр те

Хамăра айăплас чух
Саманана хурлатпăр.
Çĕр çинче этем йăхĕ
Турра манман вăхăтра
Самана лăпкă тăрать.
Эпир таса пурăнсан,
Çылăх тума чарăнсан
Тырă-пулă куратпăр.

Кăçал тырă ӳснĕ чух
Çанталăк аван тăчĕ.
Кăçал эпир хамăр та
Тырă-пулă акрăмăр
Турă çине шаннипе.
Турă çине шанасса
Нихăçан та ан манăр,
Ăна хытă ĕненсе
Пĕтĕм чунтан юратăр:
Эпир Унăн аллинче —
Эпир Унăн ачисем,
Пурте пĕрле тăвансем.
Тăвансене юратăр.
Туррăн ырă ячĕпе
Пур çынна та пулăшăр.
Турă çыннисем пулăр:
Вăл хушнине тунипе
Эсир тасана тухăр.

Тасана тухнă çынсем
Çӳлте Турă умĕнче
Савăнса пурăнаççĕ.
Эсир ыттинчен малтан
Çав савăнăçа шырăр;
Турă патшалăхĕпе
Унăн тĕрĕслĕхĕшĕн
Кунти мĕн пур суяна
Тасалăхпа çĕнтерĕр.
Ĕмĕрхи патшалăха
Таса чунпа кĕнисем
Ангелсемпе пĕрлешсе

Виçĕ сăнлă пĕр Турра
Аслăласа юрлаççĕ.
Таса çынсен кĕллипе
Турă пире хĕрхенет.
Вĕсен ятне асăнса,
Вĕсемпеле пĕрлешсе
Эпир те Туррăмăра
Пире çăлса пынăшăн,
Пире тытса тăнăшăн
Мухтав юрри юрлăпăр:
Мухтав сана, Туррăмăр,
Çӳлти Атте Туррăмăр.

*1904*

## ПУЛĂШĂР

Чĕкеç кайăк пурăнать,
Юрă юрлать, савăнать,
Çуллен чĕпĕ кăларать,
Хăй йăвине юратать.
Анчах унăн та тăшман
Пĕрес çех мар, темиçе:
Хурчăкапа тăмана,
Ула куракпа çăхан
Кайăк юнне тăкасран
Нихăçан чарăнас çук.
Тăшмансем тапăнасран
Сыхă тăма кирлине
Вĕçен кайăк та пĕлет,
Тĕрĕс пурăнас килет.
Чĕкеç йăвисем тĕлне
Хурчăка вĕçсе килсен,
Пĕтĕм ялти чĕкеçсем
Килсе кĕнĕ тăшманне
Хăвалаççĕ пур енчен.
Чун савнă ял-йышăмсем!
Эсир — манăн тăвансем;
Эпĕ сире юратса,
Сирĕн ята çĕртмерĕм;

Ял-йыш ячĕшĕн тăрса,
Пуçăма шеллемерĕм:
Вăйлă вăрçăра пулса,
Аран вилесрен юлтăм.
Салтаксене хĕрхенсе,
Эсир те пит тимлерĕр.
Вăйăр çитнĕ таранччен
Укçа-тенкĕ пухса та,
Пир-ар касса парса та
Юрату ĕçне турăр.
Турă сире пиллесе
Пысăк телейлĕ тутăр,
Мĕн кирли пурте пултăр,
Пурте ватăлса çитĕр,
Лере канлĕхе кĕрĕр.
Çар халăхĕ хушшинче
Эпĕ те пăшал петĕм:
«Тăшмана çак чух», — терĕм.
Вăрçа кĕнĕ паллăсем —
Акă ман суранăмсем
Хăвăрăн куç умĕнче.
Пулăшăр ĕнтĕ мана,
Хурлăх куран салтака.
Тискер тăшман виллисем
Халь куçăмран каймаççĕ:
Хытса çитмен юнĕсем
Тайлăм çĕре юхаççĕ.
Тăшмансене çĕмĕрсе,
Вăй-хăватăм юлмарĕ.
Тупă сасси итлесе,
Кăкăр-çурăм, ăш-чикĕм
Кунĕн-çĕрĕн чĕтрерĕ.
Пур хуйха аса илсен,
Кунăн çути хуралать,
Ăшăм-чиккĕм çаврăнать.
Тăшман персе чикесрен
Çумри ангел сыхларĕ.
Турă çырни тулмарĕ:
Манăн вилĕм çитмерĕ;
Сусăрлантăм, вилмерĕм.

Хĕрхенсемĕр эсир те,
Ангелăмпа пĕрлешсе,
Хурлăх куран салтака,
Христос çарĕ çыннине!
Ĕлĕк эпĕ сывăччĕ,
Пур ĕçе тăваттăмччĕ,
Хама хам усраттăмччĕ.
Тăшман усалли пирки
Эпĕ ĕçлейми пултăм.
Пулăшăр ĕнтĕ мана,
Çука юлнă салтака.
Ачам-пăчам çарамас.
Мĕнле усрас-ши тесе
Пуçăмран шухăш каймасть.
Ачасем сывă пулсан,
Самана лăпкă тăрсан,
Эпĕ хăват хурăттăм,
Пурăнма пултарăттăм —
Ачамăмсем ĕçлĕччĕç,
Мана пăхса усрĕччĕç.
Ача-пăча ӳстерме
Турă пиллетĕр анчах.
Халĕ йывăр пулсан та,
Ӳлĕмрен çăмăл пултăр.
Хĕвел тухăçĕпеле
Хĕвел анăç хушшинче
Хамăр çĕр-шыв çийĕнче
Чăн тĕнлĕ патшамăра
Калле-малле çӳреме
Канлĕхпе телей пултăр,
Ĕмĕрĕ вăрăм пултăр,
Ачи-пăчи — халăхĕ
Йăвари пек савăнтăр.
Хальччен ырă халăхĕ
Ĕмĕр телейлĕ пултăр.
Тăшман кулли пуласран
Патша хыпар ярсанах
Турă çырнă салтаксем
Тăшмана хирĕç тухчăр,
Киле юлнă çынсемшĕн,

Ваттипе çамрăксемшĕн —
Пур пĕрле тăвансемшĕн
Тĕреклĕ пулса тăччăр.
Паттăр чапĕ пурăнтăр,
Пирĕн чап ан çухалтăр.
Эпир, хальхи салтаксем,
Хамăр ята пăсман пек,
Ӳлĕмрен те паттăрсем,
Россияри салтаксем,
Пирĕн ăспа пурăнччăр.
Хăвăр ăспа шухăшлăр:
Çар халăхĕ пулмасан,
Никам хирĕç тăмасан,
Тăшмансем сире хальччен
Вĕлерсе пĕтерĕччĕç.
Пӳрт-çурт тулли ачăрсем,
Йăвари кайăксем пек,
Туха-туха ӳкĕччĕç;
Йĕри-тавра çуртăрсем
Çуна-çуна кайĕччĕç.
Пулăшăр салтаксене,
Халăх тĕрекĕсене!
Хурлăх нумай тӳсрĕмĕр,
Çитмен çĕре çитрĕмĕр.
Хĕл сиввине пăхмасăр
Аслă уйра тăтăмăр.
Кунĕн-çĕрĕн, канмасăр
Тăшмана çĕмĕртĕмĕр.
Хĕллех ытах сивĕ-çке!
Сурансем шăнаççĕ-çке.
Çурçĕр енчен çил вĕрет,
Çĕр çумĕнчен юр вĕçет.
Шăнса çитнĕ çĕр сикет.
Пĕлĕт çинчи хĕвел те
Виç хăлхаллă хĕрелет.
Салтак çапах та тӳсет,
Вăл сире аса илет.
Пулăшсамăр салтака!
Тăшман куçа курăнсан,
Куçкаланма пуçласан

Çар халăхĕ кăр! тăрать.
Аслинчен прикас тухать.
Пур халăх харăс перет.
Тăшман çĕре йăванать,
Шап-шурă юр юнланать.
Тăшман тарнине курса
Çар халăхĕ савăнать,
Аçа сасси пек «урра»
Ман чуна савăнтарать.
Пулăшăр салтаксене,
Патшамăр çĕрĕ çине
Тăшман килсе кĕресрен
Çăлса тăракансене!
Вăрçа кайнă салтаксен
Киле юлнă ачисем,
Ашшĕсене асăнса,
Куççулĕпе макăрса,
Амăшсенчен ыйтаççĕ:
«Анне, анне, калаччĕ,
Атте ăçта кайрĕ-ши,
Хăçан киле килĕ-ши?
Анне, мĕншĕн йĕретĕн,
Пире ачашланă чух
Куçна шăлса илетĕн?
Анне, анне, каласам,
Атте ăçта кайрĕ-ши?» —
«Ай, айван ачамăмсем,
Йăва çинчи кайăксем!
Ăшăм çунать... Хĕрхенĕр...
Эсир халь мĕн пĕлетĕр?
Аçăр кайрĕ, те килĕ,
Те кайнă çĕртех вилĕ...
Ай чунăм, ай айван чун,
Курайăн-ши ырă кун?
Ăш-чик пӳлĕнсе тăрать,
Мĕн туса лăпланам-ши?
Чĕкеç чĕппи — ачамсем,
Сире кам хĕрхенĕ-ши?
Сире хĕрхенекене
Виличченех асăнăп,

Курайманa ылханăп.
Чĕре тавра вут çунать.
Хăçанччен ку пырĕ-ши?
Хуйхă-суйхă пĕр енчен,
Çиме çукки çийĕнчен.
Салтак арăмĕ тесе
Çиме çăкăр те парĕç,
Те айăпласа тăрĕç.
Тăлăх тархасланине
Халăх хăлхи илтĕ-ши?
Ачамăмсем ӳсиччен
Пулăшакан пулĕ-ши?
Ял-йыш умне тăрăттăм,
Куççулĕпе калăттăм:
Ырă çынсем, ял-йышсем!
Çӳлти Патша Турăпа
Çĕр çинчи Патшамăрăн
Саккунĕпе пурăнăр —
Тăлăхсене пулăшăр».

*1905*

## 1861 ÇУЛХИ НАРĂСĂН 19-МĔШĔ — 1911 ÇУЛХИ НАРĂСĂН 19-МĔШĔ

I

Çутă хĕвел çуттинче
Çутăлманни ним те çук,
Вăльтăр çавра çĕр çинче
Савăнманни ним те çук.

Çутă хĕвел тĕнчене
Аякран çутă сарать.
Патшамăр хăй халăхне
Чун патĕнчен ăс парать.

Нарăс çутă уйăхĕн
Вун тăххăрмĕш кунĕнче
Патшамăр Император

Пирĕн аслаттесене
Улпутсенчен хăтарчĕ.

Паян ĕнтĕ аллă çул
Эпир ирĕке тухни.
Пăхăр: малта çĕнĕ çул:
Аллă çул ăна тупни.

Паян çавна асăнăр,
Асăнса юрă юрлăр,
Пĕрне-пĕри ал парăр,
Хĕпĕртесе савăнăр.

Утăр, пырăр çĕн çулпа,
Кукăр-макăр çулсемпе
Тăрна-тăрна ўкиччен
Пырăр пурте çĕн çулпа.

Тўрĕ çулпа, тăвансем,
Итлĕр, пăхăр, ăнланăр,
Шайламасăр ан юлăр,
Манăç пулччăр асапсем.

Çул кăтартнă Патшана,
Иккĕмĕш Александра,
Пархатарлă асăнăр,
Ĕмĕр-ĕмĕр ан манăр.

Вăл пирĕншĕн çут çăлтăр,
Чи тўпере çўрекен,
Тўрĕ çул пĕлтерекен
Ирĕк паракан çăлтăр.

Тĕттĕм çĕрччĕ, курăнмастчĕ.
Ăçта пăхнă — сункăччĕ.
Çутă çăлтăр тухрĕ те
Ырă çул та тупăнчĕ.

Ирĕксĕрлĕх, хĕстерў,
Чăн сăмахшăн пытару,

Усăллă ĕçшĕн чару
Унччен кĕрет çӳретчĕç.

Тӳрĕ тумалли сутсем
Вăйлă майлă пулайнă,
Чăнна хирĕç чиесем
Суйсах тӳрре тухайнă.

Акă ĕнтĕ вăл кунсем
Иртес вăхăт çитейрĕ;
Патша пачĕ йĕркесем;
Çитрĕç тăчĕç çĕн кунсем.

Çирĕм виçĕ миллион
Пулнă унччен хĕресчен
Çĕрхи тĕттĕм аллинче,
Улпутсен ирĕкĕнче.

Улпут аллинчен тухсан,
Унччен туйман савăнăç
Çын чĕринче вылянчĕ,
Çав кун çутă хĕвел те
Çутăраххăн туйăнчĕ.

II

Патша панă çутăпа
Ĕлĕк тĕттĕм чăвашсем
Ĕмĕр ларнă тĕттĕмрен
Тухса кайрĕç çутталла.

Халĕ чăваш çĕнелет:
Киреметне ăсатать,
Йĕрĕхне йытă çиет,
Чӳк çĕрне те сухалать.

Праздник кунĕ чан çапать.
Чăваш чиркĕве утать.
Чиркӳ хресне курсанах
Аякранах сăхсăхать.

Ав священник чиркӳре
Ҫӑлакан Турӑ ҫинчен
Пӗлмелле тӑнлантарать,
Турӑ ҫуттине сарать.

Ҫӑлакан Турӑ ҫӳлтен
Чӗрене ҫутӑ кӳртет,
Ӑнланма хӑват парать,
Чун тасалса ҫӑлӑнать.

Турӑ ҫӑлтӑр Патшана
Ҫӳлти Турра мухтама
Пирӗн, тӗттӗм ҫынсенӗн,
Чӗлхисене уҫнӑшӑн.

Ӗлӗк эпир тутарла
Эрне куна уянӑ,
Кӳлсе ҫӳрес лашана
Киремет туса пуснӑ.

Пуҫри ӑса ҫухатса
Хамӑр ҫиес ҫӑкӑра
Вакла-вакла ҫырмара
Йӗрӗхсене ҫитарнӑ.

Пулнӑ хӗрт-сурт хуралта,
Йӗрӗх кунти, мамале,
Карташ пӑтти, чӗмере
Ҫурт ӑшӗнче кӗтесре.

Авалхи ватӑ ҫынсем
Ахальтен каламаҫҫӗ:
Эпир айван вӑхӑтра
Ӗмӗр irттерсе, теҫҫӗ.

Хальхи ҫыннӑн шур пӳртре
Сӑрлӑ сӗтел тӗпелре.
Сӗтел ҫинче сӑмавар,
Ӗҫес килчӗ — ӗҫме лар.

Уҫса хунӑ кӗнеки
Тем ҫинчен те пӗлтерет;
Вула, вӗрен, ан ӳркен,
Тӑнлантарать сӗм-тӗпрен.

Ӗлӗк-авал ют тутар
Килчӗ яла пулӑпа:
Ӑна пӗр пӑт ыраш пар —
Ҫӗрӗк пулӑ ҫиме лар.

Халӗ ӗнтӗ апла мар,
Чӑвашсем те айван мар,
Астраханьпе Самара
Чӑваш хуҫи ҫитмен мар.

Халӗ пирӗн чӑвашсем
Ҫитсе курман ҫӗр юлмасть,
Суту-илӳ ӗҫӗсем
Чӑваш аллинчен тухмасть.

Авал айван чӑвашсем
Тутар пусмӑрланӑ чух
Тутар енне сулӑннӑ.
Ку ӗҫ ирӗксӗр пулнӑ.

Шакла пуҫлӑ тутарсем,
Пирӗн пата килсессӗн,
Хӑйсен тӗнне мухтанӑ,
Пирӗн тӗне хурланӑ.

Халӗ ӗнтӗ тутарсен
Пусмӑрласчӗ — ирӗк ҫук;
Мухтанасчӗ тӗнпеле —
Магомет суйи тухса.

Эпир хамӑр халь ӗнтӗ
Тутар витӗр тухрӑмӑр,
Ялӗсенче ҫӳресе
Пурне те пӗлсе ҫитсе.

Тутар арӑмсем усрать,
Хӑшин иккӗ, хӑшин виҫҫӗ:
Пӗри ҫамрӑк ача пек,
Теприн, ваттин, пӗр шӑл ҫук.

Пурӑнаҫҫӗ тирпейсӗр,
Арӑмӗсем пӗр-пӗрне
Кураймасӑр вӑрҫаҫҫӗ;
Ачисем пит телейсӗр:

Хӑшне анне темелле?
Хӑшне калас: килеми?
Камран ҫӑкӑр чӗнмелле,
Камран тытас чей чашки?

Ҫамрӑк арӑмин ачи
Упалене пуҫличчен
Ватӑ арӑмин ачи
Ҫирӗм ҫулалла ҫитет.

Ҫирӗм ҫулхи яш тутар —
Питне карнӑ амӑшне,
Ашшин ҫамрӑк арӑмне
Виҫ утӑмран паллаймасть...

Палламасть, ӑшӗ выртмасть...
Ҫавӑн пирки ват тутар
Ывӑлне, ҫӳҫӗ ҫукран,
Туртать урлӑ хӑлхаран.

Тутар тени ҫамрӑклах
Вараланать ҫылӑхпа.
Вилсен вӗсене Аллах
Хуса ярать тамӑка.

Шухӑшласан, тутарсен
Пирӗн пек пурӑнмалла.
Ӗмӗр вӗсен пек иртсен,
Чун хурлӑха каймалла.

Çутă хĕвел çутаттăр,
Хăйĕн вăйлă çуттине
Тĕнчипеле салаттăр,
Пурне те савăнтартăр.

Турра пĕлмен халăхсем
Чăн тĕнпеле çутăлччăр.
Пĕлĕт çинчи ангелсем
Турра ĕмĕр мухтаччăр.

Çутă тухать çутăран,
Пирĕн чунсем Турăран.
Турă чуна тасаттăр,
Ĕмĕрлĕх пурнăç патăр.

*1911 г.*

## ПАТША ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮРĂСЕМ

Вăрăм ĕмĕр, вăрăм ĕмĕр
Тĕрĕс тĕнлĕ Патшана.
Çакă юрă ĕмĕр-ĕмĕр
Савăнтартăр халăха!

Пирĕн пĕтĕм халăх Ашшĕ
Аслă Питĕр хулинче.
Пирĕн пит пысăк телейĕ
Ун хăватлă аллинче.

Патшапа пĕрле пур халăх
Ăшă кăмăлтан калать:
«Пысăк ырăлăх, тасалăх
Ырă Турăран анать».

Ырă Турă ĕмĕр-ĕмĕр
Çут çанталăка тытать.
Çĕр çинче мĕн пур патшалăх
Пуçлăха пĕлсе тăрать.

Турă халăхран суйланă
Патшине хăват парать:
Халăх хушшинче мухтавлă
Ăрăвне унне усрать.

Русь патшалăх пит телейлĕ,
Турă умĕнче таса.
Турă Хăй ăна пилленĕ,
Ĕлĕкех патша парса.

Патшана Вăл ăслăх панă
Халăха тытса тăма.
Пилĕкне унне хĕç çыхнă
Тăшмана сирсе яма.

Тĕрĕс чăн тĕне тытмашкăн
Турă хушнă патшана.
Хăйĕн халăхне çăлмашкăн
Пуçлăх тунă патшана.

Патшапа пĕрле пур халăх
Турă умĕнче тăрать.
Турă пĕлĕтрен хăватлăх
Юратса савса парать.

Пирĕн халăха суйланă
Тĕрĕс чăн тĕне тытма.
Чăн тĕнпе патшалăх вăйлă
Ĕмĕр-ĕмĕр пурăнма.

Ашшĕ ачисемшĕн ĕçлĕ:
Кунĕн-çĕрĕн ерĕçмест.
Ачисемшĕн унăн чунĕ
Канлĕ вăхăт та сисмест.

Çавăн пек патшамăр чунĕ
Халăхсемшĕн тăрăшать.
Халăх хушшинчен хăй илнĕ
Çынсене ĕçсем хушать.

Ун ирĕкĕнче тăрсассăн,
Çын телейлĕ çĕр çинче.
Тăрăшса ĕçне тусассăн,
Кăмăл тулĕ чĕринче.

Патшана эпир шанатпăр:
Пирĕн шанчăк Ун çинче.
Юратса ăна мухтатпăр:
Вăл — Атте çак çĕр çинче.

Туррăм вăрăм ĕмĕр патăр
Пирĕн Аслă Патшана,
Халăхне тытса усратăр,
Çăмăл саманне парса.

Халăх сывлăхпа тасалăх,
Канлĕх куртăр çĕр çинче.
Тырă-пулă, çумăр, сывлăм
Савăнтартăр пурне те.

Ырă Турă! Тав тăватпăр:
Тайма пуçăмăр Сана.
Чуруна кун-çул сунатпăр:
Юратса тăр патшана.

Ун чĕри пире пĕлтертĕр
Хăвăн ирĕкӳ çинчен.
Сывлăшу ăна вĕренттĕр
Тĕрĕс тĕн чиркĕвĕнчен.

Пĕтĕм халăхпа юрлатпăр,
Виç çĕр çулшăн савăнса.
Ăрăвне савса сунатпăр
Ĕмĕр патшара ларма.

Ун патшалăх аслăлантăр
Çĕр çине йĕри-тавра.
Чăн тĕне хытах тыттартăр:
Çын ĕнентĕр чăн Турра.

Унăн йăхĕ ĕмĕр-ĕмĕр
Лартăр пирĕн патшара.
Хурлăхра пире хĕрхентĕр:
Чăнлăх пултăр пур сутра.

Тăшмана çĕнсе пăхтартăр
Хăйĕн ăшă куçĕнчен.
Ун патшалăх вăйлă пултăр
Çут çанталăк пĕтиччен.

Турă пур ĕçре ăнтартăр...
Халăх тухтăр паттăра...
Русь патшалăх чаплăнлантăр.
Патшана мухтав! Урра!!!

*1913*

## ÇӰЛТИ СИОН

Çӳлти Сион, таса патшалăх
Этем пĕлми çарпа тулли.
Çарсем Турра савса юрлаççĕ:
Святой, Святой, Святой Турă.
Мухтав Сана, Святой пĕр Турă,
Мухтав Сана, тĕнче çути!

Турра курса савса юрлаççĕ
Çӳлти çарсем таса райра;
Вĕсем пурте Турра мухтаççĕ.
Çынсем, эпир калар Турра:
Мухтав Сана, Çӳлти Патшамăр,
Мухтав Сана, Çӳлти Турра!

Эпир Сана парне кӳретпĕр,
Мухтав юрри — таса парне.
Чунтан-вартан савса юрлатпăр:
Çӳлтен, райран пилле пире;
Пире хĕрхен, пире юрат, çăл,
Çутта кăлар, хăна пĕлтер.

Эпир Сана чунтан калатпăр:
Кун-çул курма пилле пире.
Сана анчах шанса тăратпăр:
Тăшмансенчен хăтар пире.
Сана мухтав юрри юрлатпăр:
Сион çинчен пилле пире!

*1915*

## ЛЬВОВПА ПЕРЕМЫШЛЕ ИЛНИ ÇИНЧЕН ХУНĂ ЮРĂ

Вăрçă вучĕ вăйлă çунчĕ
Шатăртаттарса.
Тупăсем çĕр чĕтĕретрĕç
Кĕмсĕртеттерсе...
Австрияна кĕтĕмĕр
Аслă çул уçса;
Львов хулине илтĕмĕр
Паттăррăн кĕрсе.
Львов хулине иличчен
Люблин патĕнче
Нимĕçсене икĕ енчен
Вăйĕ чакиччен
Пĕр çĕререх пухрăмăр
Çывăхран курма.
Курсан шухăш тытрăмăр
Çавăрса илме.
Вăрçă вучĕ вăйлă çунчĕ
Шатăртаттарса,
Тĕтĕм-сĕрĕм, тупă тарĕ
Çутта хуратса
Çил-тăвăл пек вăйлă тăчĕ
Чуна хăратса.
Вут витĕрех кайрăмăр
Юрă юрласа.

Перемышль патĕнче
Пирĕн тăшмансем

Шухăш тытрĕç хирĕç тăма
Чуна хытарса, —
Эпир хыттăн вут-хĕмĕпе
Сурма тапратсан
Вĕсем вара тӳсеймерĕç —
Парăнчĕç пире.

Пирĕн çарсен пуçлăхĕ,
Патша тăванех,
Ăмăрт кайăк пек çӳрерĕ
Çĕнтерне çĕрте,
Хăйĕн паттăр халăхне
Хавасланстарса.
Ертсе пычĕ тăшман çине
Аслă ячĕпе.
Нимĕç чунне чĕтĕретрĕ
Пирĕн вăйлă ят,
Çак (вăрçăра) хăватланчĕ
Пирĕн аслă ят,
Руç патшалăх чаплăланчĕ
Пĕтĕм тĕнчере,
Ĕмĕр пытăр унăн чапĕ,
Патшана урра!

*1915*

## 1914 ÇУЛТА ВĂЙЛĂ ВĂРÇĂ ТАПРАНСА КАЙСАН ÇЫРСА ХУНĂ СĂМАХСЕМПЕ САЛТАК ЮРРИСЕМ, ÇЫРĂВĔСЕМ

### Ум сăмах

Хальхи вăрçă тухиччен
Эпир тĕлсĕр пурăнни
Тĕлĕнтерĕ ӳлĕмрен
Ăслăланнă çынсене.
Пирĕн тантăш-тăвансем,
Пиччесемпе шăллăмсем
Юрла-юрла макăрчĕç,
Асăнмашкăн юрларĕç;

Пĕр сăмахсăр, юрăсăр,
Сывă пулăр, темесĕр
Каякан çын пулмарĕ.
Вĕсем мĕн юрланине
Манăпăр-ши, тăвансем!
Шухăшлăр-ха лайăхрах:
Асăнмашкăн юрларĕç!
Кун-çул иртĕ — сисĕнмĕ,
Çĕр çул иртĕ — çын манмĕ.
Çак вăйлă вăрçă çинчен
Кĕнекесем çырĕçĕ.
Хальхи халăх макăрни
Çут çанталăк пĕтиччен
Манăç пулмĕ, çухалмĕ.
Тĕрлĕ халăх тĕрлĕрен
Чĕлхесемпе калаçса
Çак вăйлă вăрçă çинчен
Кĕнекесем кăларĕ.
Пирĕн чăваш халăхĕ
Кĕнекесем çук пирки
Улăп тăпри купалĕ.
Çав купасем айĕнче
Хамăр тăван кун-çулĕ
Ĕмĕр манăçа юлĕ.
Санăн хăвăн тăвану
Вăрçа тухса кайнă чух
Юрла-юрла макăрни,
Манмашкăн мар, асăнма
«Сыв пул» тесе калани
Асăнта халь тăрать-и?
Вăрçăран вăл килмесен,
Ачи-пăчи ӳлĕмрен
Ыйтсан-тусан хăвăнтан,
Эсĕ ун чух мĕн калăн?
Тăван-пĕтенӳ вăрçăра, —
Те килет, те килеймест?
Вăл килтен каяс чухне
Мĕнле юрă юрларĕ,
Мĕнле сăмах каларĕ,
Чунне мĕнле юрăпа

Лăплантарса юрларĕ,
Вăрçа кайсан вăрçăран
Мĕнле çыру ячĕ вăл,
Эсĕ çавна пурне те
Ĕмĕр çынсем асăнма
Çырса хума ан ÿркен.
Улăп тĕми айĕнче
Вăл юрлана юрăсем,
Эсĕ алтса хурсассăн,
Ĕмĕрлĕхе çухалĕç.
Чăваш юрри нумай мар,
Çырма тăрсан — сахал мар.
Вăрçа кайнă çамрăксем
Нихăшĕ те чунсăр мар,
Пурте чунлă, чĕреллĕ.
Вĕсен ăшĕсем çунни
Юррисенчен курăнать.
Нумай сăмах каличчен
Хамăр ял ачисенчен
Мĕнле юрă илтнине
Çырса хурам хут çине...

*1916*

## САЛТАК АРĂМĔ СĂПКАРИ АЧИНЕ СИКТЕРСЕ ЛАРНĂ ЧУХ ЮРЛАНĂ ЮРРИ

Тутлă ыйăх килчĕ пулĕ,
Çывăрах, ачам,
Сăпкуна сиктернĕçемĕн
Юрăсем юрлам.
Çутă уйăх лăпкă çутă
Çĕр çине сарать.
Ачашласшăн пек йăвашшăн
Сан çине пăхать.
Эсĕ ним хуйхисĕр çывăр
Ăшă сăпкара.
Ачашланă чух ан макăр,
Савăн çамрăкла.

Çитĕнсе çитсен ху пĕлĕн
Пурнăç хĕннине.
Халь анчах, ачам, пит канлĕ
Аннӳ аллинче:
Юрататăп, ачашлатăп
Чунăм савнипе.
Лăпкă çывăрма выртртартăм
Канлĕ сăпкана.
Шикленӳсĕр тĕлĕрсе вырт
Ик куçна хупса.
Пысăк шухăш шухăшлатăп
Ĕмĕрӳ çинчен.
Тавлашуллă вăхăт пулĕ,
Пулĕç вăрçăсем.
Ăслă пулăн, паттăр пулăн —
Халĕ лăпкă, канлĕ çывăр
Хуйхă çук чухне.
Вăхăт çитĕ те, йĕркеллĕ
Кайăн салтака.
Ăсатса яма тухсассăн
Тăкăп куççульсем.
Эсĕ тутăрпа ал сулăн
«Сывă пул» тесе.
Йывăр куççульсем тумланĕç
Чун хурланнипе.
Кăкăру çумне икона
Çакăп пиллесе.
Кĕл тума тăрсан умна тыт
Туррăн пиллĕхне.
Вăрçă пулĕ, хăрамасăр
Кай унпа пĕрле.
Ух чухне вара асна ил
Хăвăн аннӳне.
Манăн саншăн ăшăм çунĕ
Татăлса юлсан.
Ют çĕрте пит йывăр пулĕ
Пурăнма тесе.
Эпĕ саншăн ирĕн-каçăн
Тăрăп кĕлĕре.
Сан çинчен ман шухăш каймĕ

Чунăм тухиччен.
Сан сăнна-пуçна курасшăн
Пăхăп тавралла.
Эсĕ ун чухне çук пулăн
Куçăм умĕнче.
Çывăрма выртсан тĕлленĕп
Йывăр кун-çулна.
Вăрттăн, никам та курмасăр
Йĕрĕп хурланса.
Халĕ лăпкă, канлĕ çывăр
Тутлă ыйăхпа.
Эй, ачам, ман савнă ангел,
Ĕмĕт сан çинче.
Çитĕнсен, ачам, мана пăх,
Хăвăн аннӳне.
Аçу-аннӳне пăхмасăр
Йывăр ят ан илт...
Аçуна, пур халăха та
Йывăр саманра
Вăйлă вăрçă пит хăратрĕ,
Йывăр пурăнма.
Нимĕçсем пит пусмăрларĕç
Пирĕн пурнăçа.
Вăрçă вăйлă, пит хăрушă,
Йывăр калама,
Вăйлă пулчĕç, пуççăр пулчĕç
Хăтсăр халăхсем.
Хуласем, ялсем пĕтерчĕç
Вăйлă тупписем.
Тĕтĕм-сĕрĕм, тар шăршийĕ
Витĕнсе илсе
Çил-тăман пек вăйлă тăчĕ
Вилĕм вăрçăра.
Çĕрĕн пичĕ чĕтĕрерĕ,
Çын кăкри пекех.
Çаррăн юнĕпе юнланчĕ
Вăрçăри çĕр-шыв.
Витĕр тухайми ларатчĕç
Аслă вăрмансем,
Ятрăсем ӳксе саланчĕç,

Выртрĕç вакланса.
Пирĕн пысăк çар пулсаччĕ,
Сĕм вăрман пекех,
Тăшмансем çулса пăрахрĕç
Курăкпа пĕрлех.
Çак çĕршыв тытăнса ларнă
Вăхăтранпала
Çакăн пек усал, ылханлă
Тавлашу пулман.
Эй, ачам, халь эсĕ çамрăк,
Пур хуйха сана
Калама ăсу пĕчиккĕ,
Шăнăçтарас çук.
Турă патăр, вăрăм тутăр
Сирĕн кун-çула,
Çитĕнсен, ачам, ан манăр
Хăвăр çĕр-шыва.
Çулсерен акса тăмашкăн
Сыхлăр тăшмантан.
Аçусем тытса усранă
Çĕр-шывпа мула
Ан çухатăр, хытă сыхлăр
Хăвăр ĕмĕрте.
Çитĕнсен маттур казак пул
Çирĕп чунупа,
Паттăр ку, тесе калаччăр
Сан сăнна пăхса.

*1916*

## ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮРРИ

Пирĕн Аслă Атăл вăйлă
Шурă Атăлпа пĕрле.
Халăх та унта хăватлă
Пĕр ăспа пĕрлешнипе.

Хамăр чун юратнă çĕршĕн,
Ырă ятшăн тăрăшар;

Хамăр халăха çĕклесшĕн
Пĕр-пĕрне ăс-хал парар.

Эй, çынсем. Пурте тапранăр —
Тĕрĕс çул çине тухар.
Халăх хăватне хал парăр —
Пурнăçа ырăлатар.

Пурсăмăр пĕрле тан-харăс
Юнашар утса пырар,
Çынсерен пĕр çутă ĕмĕт
Тĕнчере чипер тытар.

Ырă кун-çулсем курасшăн
Çутă вăйлă ăс шырар,
Тĕттĕмрен çутта тухасшăн
Çутă çул уçса хурар.

Пĕр-пĕрин çине ан тăрăр,
Манăç пултăр çилленни,
Хирĕçес-вăрçас ĕç пĕттĕр —
Çураçтартăр юратни.

Хамăр çĕр çине ан ярăр
Аякри ют-тăшмана.
Халь тесен халь хатĕр тăрăр
Российăшăн пуç хума.

Халăх хушшинчен мухтавлă
Чăвашсем тухса тăрса
Тĕттĕм халăха çĕклеччĕр —
Тĕрĕс çул уçса парса.

Ырă кăмăлпа йăвашлăх
Ĕмĕр тăтăр чăвашра,
Тĕплĕ пурнăçпа пуянлăх
Хăватланччăр ял-йышра.

Халăх сывлăхпа тасалăх
Канлĕ куртăр çĕр çинче.

Тырă-пулă, çумăр, сывлăм
Савăнтартăр пурне те.

Чăвашсем. Пурте пĕрлешĕр —
Тĕрекленĕр тĕнчере,
Халăха çутта кăларăр
Ирĕклĕх хӳтлĕхĕнче.

Ирĕк праçникне тăватпăр
Чун юратнă халăхпа.
Çĕнĕ йĕркене саватпăр —
Çăмăл пултăр пурăнма.

*1917*

## П О Э М Ă С Е М

### ТЫРĂ ПУЛНĂ ÇУЛ

Тикĕс шăтнă тырăсем,
Улăхсенче курăксем
Нӳрĕпе хăват хурса
Çитĕнеççĕ хумханса.
Йĕри-тавра пăхатăп,
Ытла та савăнатăп:
Çанталăк халь уяртса*,
Хĕвел пăхать шăратса.

Турă пурне те тăвать:
Вăл тĕнчене юратса,
Çумăрĕпе шăварса
Пире савăнăç парать.

Уя пăхсан — уй симĕс,
Паллас та çук — хăй тинĕс.
Калчан шухăш — ӳсесси.
Ман ĕмĕтĕм — вырасси.

Çитĕн, тырă, вăйлă пул,
Эсĕ маншăн — кирлĕ мул.
Турă савса парсассăн,
Эсĕ мана усратăн.
Сан тăрăх çил вĕрнипе
Хăйĕн шучĕ йĕркипе
Хыççăн-хыççăн хум юхать,
Тинĕсри пек туйăнать.
Çĕр ĕçлекен хĕресчен
Турра пĕтĕм чĕререн,
Чунтан-вартан кĕл тăвать.
Турă çавăншăн парать.

Вăхăт иртет, сисĕнмест,
Ĕçчен çын канма пĕлмест.
Чăваш çынни туй тăвать,
Килĕшӳллĕ савăнать.

Пăх-ха, тăван, малалла:
Çул тăрăх пĕр çын килет.
Инçе кайнă пулмалла:
Аллинчи туйи ӳкет.
Ку çын мĕн туса çӳрет?
Евĕче çӳремест-ши?

Чăнах, ку çын евĕчĕ,
Акă пĕр киле кĕчĕ,
Ăна-кăна калаçма
Хĕр шырама яракан
Килнелле кĕрсе кайрĕ.
Ĕнтĕ ĕç шала кайрĕ.

Раман мучи Иванне
Авлантарма шухăшлать.

* Уяртнă.

Ĕçлеме çын кирлĕ, тет.
Иванăн та çул çитет.
Евĕче çӳрекенни
Иван куккăшĕ пулать.
Унăн ячĕ Уртеми.
Каламашкăн çăмăл-и?

Вăл Ивансен ялсемех.
Ялĕн ячĕ Хурасан,
Урăх майлă каласан
Асăнма йывăр пулать.
Уртемийĕн пахчара
Йывăç улми пит çăра.
Йывăç карти сарлака,
Хурал тытнă салтака.
Çулла пулсан пахчара
Тĕрлĕ кайăк пурăнать,
Хитре юрăсем юрлать.
Шăпчăк сасси илтĕнет,
Тăрсах итлессĕм килет.

Уртеми çуллен пуять.
Çулла пулсан пахчинче
Талăкĕпех пурăнать.
Йывăç улми хăй сутать.

Ăна курса ял-йышсем
Тата çывăх ялтисем,
Пăртак тăн-пуç пуррисем,
Улмуççисем сыпаççĕ,
Уртеми пек пулаççĕ,
Укçа килтех тупаççĕ.
Йытă пырши вырăнне
Хăмла çырли йывăçне
Ӳркенмесĕр лартаççĕ.
Хĕлле чир-чĕр тапăнсан
Çырла шывĕ ĕçеççĕ,
Унтан сипĕ кураççĕ.
Çулма майсăр курăксен
Вата тымаррисене
Тăпăлтарса пĕтерсе,
Мăкăрпуç курăк вăрри
Етĕрнерен кӳртерсе
Çĕр çемçетсе акаççĕ,
Нумай утă тăваççĕ.

Пуху çине пухăнсан
Ухмахсене ăс парса
Хăш чух çапла калаççĕ:
Пур халăхпа ăс тытар,
Тĕрлĕ путăк-шăтăка,
Ним киревсĕр сăртсене
Картасемпе çавăрар,
Йывăç лартса тултарар.
Йывăç пахчисем пулччăр,
Пыл хурчĕсем пурăнччăр,
Пире усăллă пулччăр.

Уртемийĕн нӳхрепре
Саркавайпа пыл-сăра,
Укçи выртать тĕплĕре,
Йăсран* тунă арчара.

Унăн пуçĕ минеллĕ,
Пичĕ-куçĕ илемлĕ;
Итлес килет сăмахне,
Ларас килет çывăхне.

Юмах ярать юратса,
Ĕçне тăвать шăратса.
Эпир унтан вĕренмен,
Пурăнма ăс илеймен.

Иван ашшĕ те пуян:
Укçи пулĕ икĕ чан.
Анчах ытла хытăран
Шĕлепки хыт сăрантан.
Çамрăк чух ăс салатман,
Укçа шыва пăрахман,

* Йĕсрен.

Хупах çулне таптаман,
Аллине чĕлĕм тытман.

Унăн ятне каласан:
Иван, Раманăн ачи,
Раман пекех пулмалла;
Раман улне* юрататъ,
Авлантарма хĕр шыратъ.
«Эсĕ хĕрна памăн-ши,
Раман хăти пулмăн-ши?» —
Тесе ыйтса пăхсанах —
Такам та хĕр памалла.
Асту, пĕр те суймастăп,
Чăн сăмаха пăсмастăп.
Ĕненментен кулмалла.
Юрлар халĕ малалла.
Кунтан усă пулмалла.

Уртемипеле Раман —
Ячĕсене час ан ман —
Иккĕшĕ канашларĕç:
Кăçал туй тăвас терĕç.
Ăна-кăна калаççан
Уртеми тула тухсан
Ивана курах кайрĕ,
Ним тума та пулмарĕ.

Пўртре мĕн калаçнине
Ивана та систермен.
Ваттисем ăс тăваччен**
Ăна пĕлтерес темен.

Халĕ Ивана курса
Уртеми те йăпатса
Çапла кала пуçларĕ:
«Хальччен сана пĕлтермен,
Авлантарас та темен,
Халĕ сана юратса

* Ывăлне.
** Тăвиччен.

Аван сăмах калам-и,
Хĕпĕртесех каймăн-и?
Аçу-аннў ватăлчĕç,
Тантăшусем авланчĕç.
Сан та авланас пулать.
Туту, ачам, ха, кулать!
Атя, Иван, хĕр пăхма.
Аçу каланă тăрăх
Çитсе килтĕм пĕр çĕре.

Çыннăн ыра суннине,
Ман сăмахăм чăннине
Илтсе туйĕ сан чĕрў:
Пуласчĕ сан та кĕрў.
Эсĕ кăçал авлансан
Евĕчине хам пулам.
Кăçал туй-мĕн тумасан
Хĕлĕпех сана хуплам.
Ĕçлекенсĕр ĕç ĕнмест*,
Ăна пĕр ухмах пĕлмест.
Ыра пурнăçăн усси,
Санăн ĕмĕт курасси,
Авланмасăр курăнмастъ.
Чăн сăмаха çын манмастъ.
Ваттисене çав юратъ,
Кам вĕсенĕн ĕмĕтне,
Ыйтмасăрах мĕнлине,
Ялан туса çитерет,
Пур енчен йўнеçтерет.
Аçу-аннў ватăлчĕç.
Ĕçлеме те вăй сахал,
Тарçăсем те пит кахал.
Пиччў халĕ салтакра.
Тура парсан, вăл килет.
Унччен сана вăй килет.
Пăркун** ака туна чух
Эпĕ хам куçпа куртăм,
Аçушăн пит кулянтăм.

* Ăнмастъ.
** Пĕркун.

Вăл хăй ватă пуçĕпе
Суха касси йĕрĕпе
Кун каçачченех утать,
Сĕлĕ сухине тăвать,
Лашине те хăвалать,
Хăй те хытах ывăнать.
Килте аннӳне куртăм,
Уншăн та пит хуйхăртăм,
Питĕ хытă хĕрхентĕм,
Ним калама пĕлмерĕм.
Унăн куççуль юхатчĕ». —
«Ах, ма юхмĕ куççулĕ?» —
Хытă саспа Иванăм
Хăй куккăшне каларĕ:
«Акка та качча кайрĕ,
Пулăшакан юлмарĕ.
Анне пĕччен ывăнчĕ.
Юлташ шырас пулсассăн
Ыран каçах кайăпăр,
Чун савнинех калаçпăр.
Эпĕ савни Татьян пур:
Упаçырми ялĕнчи
Салтак Петĕрĕн хĕрĕ».
Ыран каçа çитиччен,
Хĕр калаçма кайиччен
Çирĕм çулхи Иванăн
Пуçран шухăш каймарĕ,
Ал ĕç патне пымарĕ.
Кун ĕççĕр иртсе кайрĕ,
Каç иртсе çĕр те пулчĕ,
Иван çывăраймарĕ.
Ир иртерех тăчĕ те,
Тумтирне тăхăнчĕ те
Тухрĕ кайрĕ улăха
Çӳрен лаша кукарма*:
Çиех, лаша, курăкне,
Çĕн çын ларĕ сан çине.
Иван улăхран килет,
Шуçăм çуталса килет.

Çуллахи çĕр час иртет.
Шăпчăк юрласа ячĕ,
Ун та ыйхи вăранчĕ.
Тăрри тăчĕ тĕрлеме,
Халăх тăчĕ ĕçлеме.
Каçпа кĕтӳ таврăнсан,
Çынсем ĕçсем пăрахсан
Иван лаша кӳлчĕ те,
Хăй куккăшне лартрĕ те
Тухрĕ кайрĕ хĕр пăхма.
Хамăр ял хыçа юлчĕ.
Пĕр арçын хирĕç пулчĕ.
Паллах, пирĕн телей пур:
Аллинче пĕр çамрăк хур.
Упаçырми инçе мар,
Кушартан анатра мар,
Шетмĕ шывĕ хĕрринче.
Çак ял çырми шывĕнче
Татьян шыва кĕретчĕ,
Шурă ӳтне çăватчĕ.
Пасаралла кайнă чух
Пĕр çын ăна курнă тет.
Татьян пит вăтаннă тет.
Çын куç тĕлне пулнăран
Шыва кĕме пăрахнă.

Салтак Петĕр кил-çурчĕ
Катаранах кантур пек:
Йĕри-тавра йывăççем,
Анкартинче ампарсем.
Пурте çиме ларас чух
Яшка антарнă тĕле
Кĕчĕç тăчĕç хăнасем.
Хăнасене тĕпелтен:
«Çиес умĕн кĕлле тăр», —
Тенĕ сасă илтĕнет.
Аслă кинĕ ачине
Ялан Турра асăнма
Ăс-тăн парать пулмалла.
Кăна пурте тумалла.

* Кăкарма.

«Пирĕн килес, вăй патăр». —
«Килĕрех, лайăх çынсем.
Иртĕр çакăнта мала,
Вырăн парăр, ачасем», —
Тесе калать кил хуçи.
Шухăшласан ĕç уççи,
Ваттисен сăмахĕпе,
Куçа хупсах курăнать.
«Çиме ларăр, хăтасем,
Çул çинче хырăм выçать», —
Ватă Петĕр калаçать.
Чăваш сăмахĕ тăрăх,
Хĕр шыракан çынсене
Апат лартса çитерсен
Çăкăр-тăвар хутăшать,
Парас çук хĕр хăй пырать.
Хурасанти хăтасем
Пĕр çăвартан калаççĕ:
«Ан чăрманăр, выçă мар,
Килтен çисе тухрăмăр;
Кунта çитсе тăтăмăр,
Апат тĕлнех пултăмăр.
Çумри телей ертнипе
Ют ялта та пур тӳпе».
Пурне те çырияс* çук:
Çиме чĕнсен — çиме лар,
Унсăр ĕç телейлĕ мар.
Эпир малалла юрлар.
Ялан ăспа çӳресен
Ялти ватă ятламасть.
Евĕчĕ ним пĕлмесен
Хĕр калаçасси те хĕн.
Уртеми вăл — аван çын:
Суйи çук, чăнни хăйĕн,
Чăн сăмаха чăн калать,
Ăна пур çын та паллать,
Иван хĕр çине пăхать,
Чунĕ савăнса тăрать.

* Çыраяс.

Уртеми юмах çапать:
«Пирĕн пăру çухалса* ...
Эпир шырама тухса.
Пăрушне уйра курса,
Анчах тытмасăр юлса.
Çамрăк пăру хăраса
Çак яла тарса кĕрсе.
Çак ялта шырас тесе
Ивана лартса килсе.
Нумай çĕре çитиччен
Кунта лашине кӳртсе,
Лаши кунĕ, хăй çӳрен.
Сиртен пуçне урăх çук
Кунта урăх лайăх çын»...
Хĕртен юриех ыйтать:
«Ют пăру курсай** кунта?
Иван сана курсанах...
Ах, хĕрĕм, ан вăтанах...
Сăмахăм йăнăш тухрĕ,
Систерекен пулмарĕ.
Иван, эсĕ те калаç.
Унсăрăн ĕç час пулмасть».

Татьян ашшĕ шап-шурă,
Амăшĕ те пит ырă,
Пиччĕшсем пур, йăмăксем,
Тулли питлĕ инкĕшсем —
Килĕшпех аван çынсем.
Хĕр пăхмашкăн килнине
Систермесĕрех сисрĕç.
Ивана пит юратрĕç,
Ватă карчăк ятарса
Иван çумне ларчĕ те
Акă çапла каларĕ:
«Çемçе кăмăллă ку çын,
Мĕнле ӳснĕ сарăскер,
Салтак пекех тӳрĕскер.
Ытла та лайăх ача».

* Çухалнă.
** Курса-и?

Уртеми тӳрех калать:
«Калам сана, тăхлачă,
Чăн сăмаха чăннипе:
Çак Иван — Раман ачи,
Пуçĕ унăн — ăс арчи.
Пилĕкне хытă çыхать,
Ăсне тирпейлĕ тытать.
Пурăнсан хуçа пулать.
Халех пин тенкĕ тытать.
Ашшĕ пит юратнăран
Авлантарма шухăшлать.
Сирĕн Татьян лайăхран
Хамах лартрăм та килтĕм.
Чăн сăмахшăн ан çиллен.
Петĕр салтак хăй пĕлет
Раман мĕнле çыннине».
Уртеми калаçнă чух
Пирĕн Иван вăтанса
Йăпăш турĕ тулалла.
Татьян тарчĕ пахчана
Вăтаннипе пытанма.
Иккĕшĕ тĕлех пулчĕç,
Нумай калаçса тăчĕç.
Аслă тинĕс пĕр-пĕрне
Кăтартмасăр усраймĕ,
Витĕр тухми сĕм вăрман
Çитсе курма чараймĕ.
Иванпала Татьяна
Хире-хирĕç юратни,
Пĕр юрату, пĕр кăмăл
Нихăçан уйăрас çук.
Пĕрин ăшра мĕн шухăш,
Тепĕрин те çав шухăш:
Кăмăл туртать, чун савать.
Çамрăк Татьян Ивана
Иван пек мар, вăйлăрах,
Калама çук юрататъ:
Çутă хĕвел, çут çăлтăр
Иван чухлĕ паха мар.
Çамрăк хĕршĕн çав тери
Савни ырă, пит паха.
Çакă ырă тĕнчери
Пахасенчен чи пахи —
Чĕрепеле чун савни,
Хире-хирĕç юратни.
Иван хăйĕн шухăшне
Йĕркеллĕ каланипе
Татьян кăмăлне килет:
«Татьян, эсĕ ман чунăм,
Хам чуна усранă пек
Сана усрассăм килет,
Çутă хĕвел тĕнчере
Кирек мĕнтен те çутă.
Çамрăк ăшă чĕремре
Çутă хĕвелтен çутти,
Çут тĕнчере пĕр тĕнче,
Татьян, эсĕ, ман чунăм.
Çамрăк пурăнăçăма
Чун тухиччен пурăнма
Сан мухтавлă пурнăçпа
Пĕрлештерме кăмăл пур.
Каласа пар халь ĕнтĕ
Чунăм кĕтсе тăнине».
Вара илемлĕ Татьян
Ивантан именмесĕр,
Ун çине савса пăхса
Пит чипер сассипеле
Чун патĕнчен kаларĕ:
«Иван, эсĕ ан çиллен.
Урăх сăмах хушиччен
Ман сана калассăм пур:
Эсĕ мана мухтаса
«Чунăм» тесе ят патăн,
Хăвăн çамрăк пурнăçна
Ман пурнăçăмпа пĕрле
Пурăнма шухăшлатăн.
Чăн-чăнах каласа пар,
Сăмахна ан улăштар:
Чунăпала* чĕрӳнте

* Чунупала.

Халĕ пур ĕмĕтӳне
Нихăçан çухатмăн-и?
Ăшăмран чун тухиччен
Юратсах пурăнăн-и?» —
«Сана, Татьян, саватăп,
Чунăм çумнех хуратăп.
Ку тарана çитиччен,
Санпа сăмах хушиччен
Эпĕ никама пĕлмен,
Эсĕ маншăн ан шиклен,
Турă курать пĕлĕтрен:
Эпĕ пĕтĕм сан умра.
Турă панă пурнăçра
Ялан та пул ăшăмра». —
«Иван, эпĕ сан çинчен
Киревсĕр сăмах илтмен.
Малалла та шанатăп.
Пирĕн пурăнăç — тинĕс.
Тинĕс урлă каçмашкăн
Санпа пĕрле ларатăп.
Турă панă кимĕпе,
Эппин, кайăпăр пĕрле.
Атя, каяр, ав пӳртре
Пире кĕтеççĕ пулĕ.
Пахча çумĕн шыв юхать.
Икĕ çыннăн ĕмĕлки
Тепĕр енчен курăнать.
Шетмĕ шывĕ хĕрринче
Хăмăш вăрăм çитĕнет.
Çил вĕрнипе хумханать,
Хĕвел йăлтăр пăхнă чух
Хитреленсе йăлкăшать.
Пирĕн Иван пит чипер,
Улпут пекех ăслăскер.
Пуринпе те калаçать,
Чĕлхи сăмах çавăрать.
Иван чипер пулсан та,
Татьян пекех мар ĕнтĕ.
Ку сăмах пит чăн ĕнтĕ:
Пирĕн Татьян пит ăслă,
Хут çырать, тĕрĕ тăвать,
Пурçăн çиппи хăй арлать,
Çуллен катам пир тăвать.
Сывă, лăпкă пурăнать.
Татьян аки утнă чух
Урай хăми авăнать.
Ырă ача-пăчана
Турă сывлăхне парать.
Тиркеме çук Татьяна:
Вăл çынсенчен вăтанать,
Улахсенчен пăрăнать.
Йывăр шухăша кайса
Хĕр пурнăçне хăй курса
Хăш чух хăйне хăй калать:
Хĕрсен качча каясси,
Çын сăмахне илтесси
Ăçтан сиксе тухнă-ши?
Тĕнчере мĕн чул хĕр пур,
Пурин каччă шухăш пур.
Пурте качча тухаççĕ,
Халĕ мана параççĕ.
Çынна мĕнле юрăп-ши?
Ырă çын пек пулăп-ши?
Варлисĕр пурăнакан
Йĕркеллĕ качча тухсан
Телейлĕрех пулакан.
Пĕве çитнĕ хĕр пултăм,
Усал сăмах сармарăм.
Турă мана пĕлмĕ-ши,
Мана телей памĕ-ши?
Çирĕп шухăш пуçăмра,
Вăй-хăватăм пĕвĕмре.
Çынсем ĕçлекен ĕçе
Ĕçлеме пултаратăп.
Туррăн çутă тĕнчине
Чунтанах юрататăп.
Тĕнчере мĕн пулнине
Çыру тăрăх пĕлетĕп.
Хампа тантăш хĕрсене
Каласа пĕлтеретĕп.

Хаçат çинче сăмах пур:
Хĕрарăмăн улпут пур,
Улпут пекех шут шутлать,
Кирек мĕнле хыпара
Ăслă çын пек астăвать,
Хут çине çырса хурать.
Ĕмĕр хыççăн çĕн ĕмĕр
Çуралса иртсе пырать.
Халăх хушши улшăнать:
Хĕрарăм çутта тухать,
Хĕрарăмăн çӳç вăрăм
Тенĕ сăмах пăçланать*,
Хĕрарăм та ăсĕпе
Арçынпала танлашать.
Хут вĕренсен хĕрача,
Çав çынах, асла тухать.
Сăмах малалла пырать:
Татьян çине сивĕ куç
Хальхи кунччен те ӳкмен.
Çынсем ăна тиркемен.
Пит илемлĕ куçĕсем
Чăваш чирпе чирлемен.
Çынсем: «Суккăр вăл», — темен.
Вырăс хĕрĕ вăл хăех.
Пит-куç майрасен пекех.
Çӳçĕ çырă сарăрах,
Çамки хĕрри кăтрарах.

«Кунтан ырă тупаймăн.
Çак хĕре те илмесен
Ĕмĕрĕпех макăрăн,
Хуйхă пирки вилмесен
Ватăличчен асăнăн».
Уртеми хăй пусĕнче
Мăшăлтатать çул çинче.
Вăл Ивана та калать:
«Татьянăн ашшĕ пуян.
Эпир чипер калаçсан,
Туйне ирттерсе ярсан
Çине парать пĕр лаша,
Виçĕ сурăх, пĕр ĕне —
Иккĕ пăру тунине,
Виçĕ чаппан, пĕр тăлăп;
Аçуна çаплах калăп.
Хулăн укçи çĕр тенкĕ.
Калаçнă чух вун тенкĕ
Çăкăр çине хумалла.
Туй вăхăтчен малтанах
Хулăн укçи татмалла.
Тата виççĕ килмесĕр,
Сана пĕлсех çитмесĕр
Вĕсем хĕрне парас çук.
Чун савакан Татьяну
Унччен санăн пулас çук.
Ялти хĕрсем хушшинче
Ку хĕр инçе маларах:
Училищре вĕреннĕ,
Вĕренни ав катаран
Пĕтĕм палăрса тăрать:
Сăн-сăпачĕ тасарах,
Çи-пуçĕ те шурăрах,
Пур енчен те тирпейлĕ,
Сăмахĕ пит илемлĕ.
Пурăннă чух, тăванăм,
Çыру пĕлекен арăм
Телейлĕ çын телейĕ».
Çапла Иван куккăшне
Тăват хутчен ĕшкетрĕ,
Юлашкинчен калаçрĕ.
Хайхи ĕçкĕ май килчĕ.
Эрехпе пĕр çын вилчĕ.
Иван туйне тунă чух
Пĕр урапа çийĕнче
Виççĕн сиксех юрланă.
Лашасем пит хăранă:
Ямшăкĕ ытла çапнă,
Туй ачи персе аннă,
Хăй кармуни каланă.

* Пăчланать.

Лашасем каҫса кайнă.
Туй ачи вилсех кайнă...
Иван тăван туйĕнче
Туй халăхĕ юрларĕ:
«Хурасантан туй килет,
Тĕнчипе тĕлĕнтерет,
Пирĕн юрра юрлакан
Куракана култарман.
Ҫын куҫĕнчен мĕн пăхас?
Хамăр куҫран пăхтарас!
Туй куракан халăха
Юрласа савăнтарар,
Килĕшӳллĕ сăмаха
Юрă юрласа калар.
Ирсĕр юрă юрласран
Чĕлхе-ҫăвара чарар.
Вырăнсăр мухтанасран
Пăртак чарăнса тăрар.
Ырă кайăк пухăнать,
Ырă юрра вăл юрлать.
Усал ача пухăнать,
Пур ирсĕре вăл калать.
Ытла хытă сикекен
Ӳксе вилсе ҫĕрекен.
Ерипелен ҫӳрекен
Тырă вырса килекен.
Ҫумăр лайăх ҫурĕ-ха,
Тырă кăҫал пулĕ-ха.
Туйран киле таврăнар,
Ыран ирех ĕҫ тытар.
Ыраш вырма тапратар».
Туй халăхĕ салансан
Тата иккĕн юрларĕҫ.
Сасă пĕтсе ҫитсессĕн
Юрлама чарăнтăмăр.
Юрлас килен юрлатăр,
Хайĕн ăшне пусартăр,
Никам ăна чарас ҫук.
Эпир тытса тăрас ҫук.
Ҫакă юрра ҫыракан
Хăйĕн ятне каламан.
Кала! тесе тапăнсан
Тарас! тесе кăҫкăрман*.
Ҫырса хунă сăмахне
Ҫынсене те пĕлтерме
Кĕнеке пек ӳкерме
Хусанти улпутсене
Тархаслама ӳркенмен.
Кĕнекесем тиркекен
Ку сăмаха тиркемен.
Хусанти улпутсене
Хамах куртăм хăш-хăшне;
Кĕрсе тухрăм савăнса
Пурне те ырă сунса.
Ҫав улпутсем хушшинче
Пире юратни нумай.
Вĕсен ашшĕ Николай
Халь те куҫăм умĕнче
Чăваш календарь ҫинче.
Ывăлĕсем каларĕҫ:
«Мĕн пĕлнине ҫырса яр,
Хупа пĕрле килнине,
Вуласа кăтартнине
Каяс умĕн парса хвар.
Ҫынсене те ҫырма хуш,
Ырă пурăнма пулăш.
Сан мĕне пĕлес килет,
Чуну мĕнтен йĕрĕнет —
Ҫавна та ҫырса пар-ха,
Ҫынсене те кала-ха.
Хальхи ҫыннăн пурăнма
Кĕнекесĕр ăс сахал.
Анчах кĕнекесене
Укҫасăрах салатма
Питех савăнăҫлă мар.
Укҫасăр илекенсем
Ырă кĕнекесенех
Чĕлĕмпе пĕтереҫҫĕ.

* Кăшкăрман.

Таçтисем пире текех:
«Пире ахаль параççӗ.
Эсир мӗншӗн укçасăр
Кӗнекесем памастăр?» —
Тесе йăлăхтараççӗ.
Чӗлӗм туса туртасран
Е япала чăркасран,
Тирпейсӗр тыткаласран
Кам илес теекене
Укçалла анчах сутма
Çак юрра кăларăпăр,
Сана та хăвармăпăр,
Кӳрсе панă çырушăн
Кӗнекесем парăпăр».

Мана çапла каларӗç.
Эпӗ вара Хусантах,
Киле таврăнмасăрах,
Улпутсенӗн сăмахне
Юррăм çумне хушайрăм.
Камшăн вулама йывăр, —
Çăмăллатса çырайтăр,
Хусаналла ярайтăр.
Эпӗ çырнă юррăма
Ӳркенмесӗр вӗренӗр;
Çырса патăм сăввине,
Хăвăр тупăр кӗввине.

*1904, 1911*

## 1812 ÇУЛХИ ВĂРÇĂ ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮРĂСЕМ

I

Вăрçа кӗнӗ ват салтак
Ӗлӗк мӗн-мӗн пулнине
Юрла-юрла асăнать,
Асăнать те макăрать.

Паттăр пулнă салтакăн
Çӳллӗ кăкăрӗ çинче
Йӗркипеле медалсем,
Йăлтăр-çутă хӗреççем.

Унăн вăрăм юррине
Ялти ватă-вӗтӗсем
Ушкăнӗпе пухăнса
Пуçа тайса итлеççӗ.

Хрансус халăхин патши
Çӗр çывăрмасть, çар пухать:
Ваттине те хӗрхенмест,
Яшшине те шеллемест.

Çӗр хӗрринчи сӗм вăрман —
Витӗр тухми сӗм вăрман —
Кăн-кăвак çанталăка
Ӗмӗлкипе хуратать.

Ах, вăрман мар, ним те мар —
Хрансус çарсен ӗмӗлки
Çӳле витӗрех ӳкет,
Унпа пӗлӗт хуралать.

Турă çырлах, ан пăрах:
Патшамăра вăй парах,
Тăшман вăйне чакарах,
Пирӗн вăя хăпартах!

Улăхри текерлесем,
Çурхи тырра акнă чух,
Хресчен пуçӗ тӗлӗнче
Явкаланса вӗçеççӗ.

Текерле мар, ним те мар —
Ютран килнӗ утлă çар
Лашасемпе таптатса
Пирӗн çие тăрăнать.

Хрансус çарĕ малтанах
Пире майсăр тапăнать,
Пире çĕнтерсе пырать,
Пирех ытла макăртать.

Смулен хули — шур хула,
Хула тавра уй хура,
Çунăк ялсем хуп-хура,
Çĕр вĕри, тӳсмест ура.

Унта-кунта уйсенче
Хамăр халăх çар çынни
Юнĕпе çĕр шăварать.
Юнпа мĕн пур çитĕнни?

Юнпа шӳнĕ çĕр çинче
Смулен хули пахчинче
Тăшман ачисем валли
Шăтрĕç вара çырласем.

Хрансус салтакĕсене
Хамăр вăйпа çĕннĕрен
«Çырла» тесе юптарса
Хамăр вăя юрлатăп.

Вăл çырлана çиекен
Хрансус тăлăх арăмин
Пĕртен-пĕр ул пулин те,
Урăх пĕтрĕ çимелли.

Кунĕн-çĕрĕн çĕр чĕтрет,
Бородинта илтĕнет.
Хрансус çитси çурăлать,
Вĕсен ним те чăтаймасть.

Уй тӳпинчи вăрмана
Кассăн-кассăн уйăрнă,
Уйăрсан касса янă:
Уйĕпех вăрман выртать.

Ах, вăрман мар, çар выртать:
Чун тухайман салтаксем
Йăшталанни курăнать,
Чĕп-чĕрĕ юн пăсланать...

Бородино — аслă уй,
Аслă уйра юрлама
Пырса тăнă паттăрсем:
Мăн çаварлă тупăсем, —

Çĕр чĕтретсе юрлаççĕ,
Курма пынă хрансуссем
Ура утса ташлаççĕ,
Ташăпалах вилеççĕ.

II

Хрансус тумтир йĕтĕнрен,
Йĕтĕнрен те пусаран;
Пирĕн енчен çил вĕрсен,
Сивĕ тытать кăкăртан.

Кĕр сиввийĕ пуçлансан,
Хрансус ĕсĕре пуçлать,
Çан-çурăмне сив çапать,
Унтан ӳпки те шыçать.

Пирĕн аттен Мускавра
Халь те сурăх пит нумай;
Пирĕн çийри кĕрĕксем
Тĕклĕ сурăх тирсенчен.

Çĕр шартлатса шăннă чух
Пирĕн çийри кĕрĕкпе
Улпут хăй те шăнас çук;
Уншăн пулсан хуйхă çук.

Акă ĕнтĕ тăшмансем,
Улăхри текерлесем,
Хĕл сиввине кĕрсессĕн
Тин тапранчĕç ăшшалла.

Ют кайăка усрама
Пирĕн улăх ытла мар,
Хăш çĕртен вĕçсе килтĕр —
Унталлах кайса пĕтĕр.

Хамăр çĕр хамăр алра.
Мĕншĕн парас тăшмана?
Турă панă çĕр-шывра
Хамăр ларар хуçара!

Ĕлĕк-авал тутарсем
Хрансуссем пек тапăнса
Пире ирĕксĕрленĕ,
Ик-виç çĕр çул йĕрттернĕ.

Сибирь ятлă çĕр урлă
Тутарсем куçса килнĕ,
Çул çинче мĕн тĕл пулнă,
Вĕлернĕ, тытса çурнă.

Сап-сар тырăллă уйсем
Тутарсемпе таптаннă,
Çамрăк арăмсем, хĕрсем
Тăшман мăшкăлĕ пулнă.

Ун чухнехи вăрçăра,
Çылăхлă саманара,
Этем тăкнă юнпала
Шыв юнланнă çырмара.

Хура тутар усалли
Хуласене хуйхăртнă,
Яла-йыша салатнă,
Ирсĕр тĕне тыттарнă.

Хамăр çĕр хамăр алра.
Мĕншĕн парас тутара?
Турă панă çĕр-шывра
Эпир хамăр хуçара!

Хрансус чĕлхи — ют чĕлхе,
Тутар чĕлхи чĕлхе мар,
Вĕсен кăмăл çемçе мар,
Пирĕнни пек йăваш мар.

Атте-анне сăмахне,
Аслаттесен чĕлхине
Тутарсемшĕн манас мар,
Хыт чĕреллĕ пулас мар.

Россияра çу каçсан,
Çу илчĕç текерлесем,
Кĕр вĕçейми пулчĕç те
Мускав вăрманне юлчĕç.

Акă питех май килчĕ:
Пур енчен те ялсенчен
Ют кайăксене тытма
Çынсем хытă пикенчĕç.

Ытлах шăнса пĕтиччен
Йăлтах тытса пĕтерчĕç.
Вара хамăр çĕршывра
Хамăр хуçа юлтăмăр.

Тавтапуç Çӳлти Турра,
Тата пирĕн патшана
Тутарсенчен çăлнăшăн,
Хрансуссенчен çăлнăшăн.

Патшан чап хулисене,
Ун паха çурчĕсене,
Мускавпала Питĕре
Усра, Турă, ĕмĕрех!

Хĕвел тухми пуличчен,
Çут çанталăк пĕтиччен
Тĕрĕс-тĕкел, Патшалăх!
Сыв пулăр, хура халăх!

*1911*

# ХРЕСЧЕН ХĂЙ ĔÇĔ ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮРĂСЕМ

I

Суха тума тухса кайрăм
Кăвак шуçăм иртиччен.
Çур ана çук сухаларăм
Ăшă хĕвел тухиччен.

Çурхи шĕвĕ, сивĕрех çил
Тумтир виттĕрех витет.
Ан тив, ĕçчен хĕресчен çын
Кĕпе вĕççĕнех ĕçлет.

Кăвак лашамăм, юлташăм,
Эс манпа пĕрле ĕçре.
Эс сыв пулсан, манăн чунăм
Савăнать-çке чĕремре.

Сухапуçпе йĕрле-йĕрле
Ана питне хуратрăм.
Тепĕр кунне сĕлĕпеле
Акса тухса шуратрăм.

II

Калча хушшипе утатăп
Праçник кун ĕç пăрахса.
Çӳлти Турра кĕл тăватăп,
Пĕлĕт çинелле пăхса.

Сана, Турăçăм, калатăп:
Çĕр-шыв ĕçĕ çăмăл мар;
Йăваш чунăмпа ыйтатăп:
Тырă-пулă туса пар.

Çын çӳллĕшĕ ыраш лартăр,
Тинĕс шыв пек хумханса.
Пучах тулли тĕшши тултăр,
Çумăрсем çуса тăрса.

Тĕш пулса тырă пиçсессĕн,
Вырса алла илме пар.
Халăху çиллентерсен те,
Хĕрхен, çил-тăвăл ан яр.

Вырăс вăхăчĕ çитсессĕн,
Хĕвелтен малтан тăрам.
Ал-ура, шăм-шак хĕрсессĕн,
Пĕр канмасăрах вырам.

III

Калча тĕлĕнче юрлаççĕ
Çӳлте таса тăррисем,
Чунăма савăнтараççĕ
Юратмалла кайăксем.

Ăшă вылять, калча тăрăх,
Шыв çинчи пек, хум каять.
Ним паха çук маншăн урăх:
Куçран ытла чун пăхать.

Ыраш, сĕлĕ — уй илемĕ
Хĕвел йăлтăр пăхнă кун.
Тĕнчере пĕр çын тӳсеймĕ:
Уй курасси килĕ ун.

Симĕс тырпа витĕннĕ уй
Хушшипе ав çул выртать.
Авланакан çын тунă туй,
Пăх-ха, янтратса каять.

IV

Çаран çинче çырла пиçрĕ:
Пуçтараççĕ ачасем.
Çава хуçи яла çитрĕ:
Шакканаççĕ çавасем.

Ыраш вырма пуçлас умĕн
Утă çулса типĕтрĕм.
Утă çинчи вăрăм кунĕн
Шăрăхне тӳссе пĕтрĕм.

Ӳпре-пăван, вăрăм туна
Çарпа пырса тапăнать.
Курăк çиекен лашана
Хытах тапкалантарать!

Çаран çинче шап-шур халăх
Ярна-ярна выт* çулать.
Ача-пăча, вылямалăх,
Чечек пуçтарса юлать.

Пĕр эрнере улăх тăрăх
Ларса тухрĕç капансем.
Каю çинче тутă выльăх,
Канаççĕ кĕтӳçисем.

V

Выльăх-чĕрлĕхӳ пулсассăн,
Ăна пăхма ан ӳркен.
Ана-çарану хытсассăн,
Пурте усăллă иккен.

Çемçелетнĕ ана тăрăх
Ыраш ларать юсанса.
Хытса çитнĕ ана тăрăх
Мăян ларать макăрса.

Шыв хĕрринчи вăрăм йĕтĕн
Шыв пăсне пит юрататъ.
Ай йĕтĕн, сӳслĕ пул, çитĕн:
Сана сар хĕр юрататъ.

* Утă.

VI

Кăвак çутăллах тухатăп
Лаша кӳлме кил варне.
Шалтăртаттарса каятăп
Кил-йышпа ана çине.

Лаша кăкарса килетĕп
Купаллă çаран çине,
Аллăма çурла илетĕп...
Ах пит савăк ун чухне!

Чĕреме ĕçлес кăмăлăм
Хăвăртлатса таптарать.
Хам сисместĕп, сылтăм алăм
Кăкăр çине хрес хурать.

Ыраш çинче ирхи сывлăм
Çап-çутă йăлтăртататъ.
Ана пуçĕ пăртак тайлăм,
Тайлăмра кайăк юрлать:

«Эй, хĕресчен, ĕçӳ йывăр:
Хĕл касма мул хатĕрле,
Шăрăхра чунна пит тăвăр,
Тăвăр пулин те ĕçле!..».

VII

Çулла çĕр кĕске, кун вăрăм,
Кунĕпе авкаланан,
Кăнтăрлаччен ывăнатăн, —
Кăнтăр каннине ларан.

Уйра сывлăш та пит усă
Пăртакках çумăр çусан.
Çурла çинчи çутă хурçă
Çап-çутах сывлăм пуртан.

Хирте ыраш çăкри тутлă,
Ун çине тăвар сапсан.
Унта ыйăх та пит тутлă,
Кĕлте çине пуç хурсан.

Уяр тăнă чух пит-куçăм
Тусанланса аптрарăм,
Уçăлма шывпа пит çурăм —
Сăн-сăпата çутатрăм.

VIII

Ыраш вырса эрне иртрĕ,
Пĕр кун та ахаль ларман.
Тата урпа пулса çитрĕ,
Ăна пуçтарма ан ман.

Урпа, аксан, утмăл талăк
Хушшинче пулса çитет.
Пулса çитсен виçĕ талăк
Хушшинче çĕре ÿкет.

Ыраш уйне çĕмел тулчĕ,
Пуйса кайрĕç анасем.
Çур тырри те шап-шур пулчĕ,
Пулса çитрĕç сĕлĕсем.

Кăвак, хитре хĕрлĕ тĕслĕ
Кĕпесемпе хресченсем;
Пăхăр ĕнтĕ, пурте ĕçлĕ:
Йăлкăшаççĕ çурласем!

IX

Кăвак лаша, чунăм пахи,
Эс манпа пĕрле ĕçре.
Эс сыв пулсан, ыраш аки
Туса хурăпăр пĕрле.

Ачам-пăчам сĕлĕ выртăр
Амăшĕ çумне тăрса.
Кăвак лашам, эпир кайпăр,
Ыраш акмалла пулса.

Ыраш акма уяр пулчĕ,
Тусан чуна пĕçерчĕ.
Хĕресченĕн йывăр ĕçĕ
Вĕри юнпа шăранчĕ.

Ĕçленĕ чух пĕр сисместĕн
Вăхăт иртсе пынине.
Вырса пĕтерсен кÿретĕн
Тырруна анкартине.

Сат-картинче улма пиçрĕ
Ача-пăча кăмăлне.
Мăн çын çиме прaçник çитрĕ,
Кайрăм çирĕм тутлине.

Шукля çинче, пас тытнă пек,
Хăмла ларать усăнса.
Йĕпе кунта, ир пек-каç пек
Шăхăрса татса хурса.

X

Анкартинче йĕтем тăрăх
Ик айккипе капансем.
Вĕçне тухать ĕнтĕ хурлăх,
Иртеççĕ-мĕн асапсем.

Кĕрхи Симен кунĕ çитрĕ.
Кĕскелчĕç ырă кунсем.
Çĕр-шыв çине сив тăм ÿкрĕ.
Ылттăнланчĕç йывăçсем.

Çĕрле çăлтăрсем çăралчĕç.
Вăхăт кĕр енне кайса.
Ана-çарансем пушанчĕç,
Выртаççĕ ĕççĕр канса.

Çур çĕр иртсен уйăх тухрĕ
Мăйракине çутатса.
Авăн çапма халăх тухрĕ,
Çапуççисене йăтса.

Уяр çанталăк сивĕтнĕ,
Çӳçенеççĕ алăсем.
Авăнта ыраш хыт типнĕ,
Сирпĕнеççĕ пĕрчисем.

Йĕтем тăрăх вăрăм сарăм
Сарса прахрăмăр эпир.
Çапла эпир ай тăванăм,
Авăн пуçларăмăр ир.

Пускил-кӳршĕ пурте хатĕр
Пирĕнпеле ĕçлеме.
Улттăн пĕрле лайăх тетпĕр
Кĕлтесене сиктерме.

Анкартинче ултă паттăр
Йĕтем кисрентереççĕ.
Ӳкнĕ кĕлте ан та тăтăр,
Паттăрсем пĕтереççĕ.

Маттур çынсен пуç тĕлĕнче
Çиçĕм тăвать çапуççи.
Кĕрлет тăрать йĕтем çинче
Авăн çинчи аслаçи.

## XI

Авăн çапса пĕтертĕмĕр;
Улăмне тирпейлесе
Тырра кĕлете кӳртрĕмĕр —
Кăçал эпир ĕçлесе!

Ай тăванăм, савăнăпăр:
Эпир çапла пурăнсан,
Хĕпĕртесе ĕç тусассăн,
Хăçан эпир ватлăпăр?

Турра мĕншĕн тав тăвас мар:
Пура тулли мулăм пур,
Ме юрлас мар, калаçас мар:
Турă панă чĕлхе пур.

Сана, Турă, тав тăватăп:
Çутнă çурта çуттинче
Сăну умĕнче тăратăп...
Кĕллĕм чĕре çумĕнче...

Савса алла панисемшĕн
Чунпа чăркуçланатăп.
Çурта çутрăм, савса йышăн:
Тав кĕллине тăватăп.

Çул çӳрекен çынсем килĕç,
Вĕсене парса ярам;
Чиркĕвӳшĕн парма тивĕç:
Кăмăлтан савса парам.

Уншăн уйра тырă пултăр;
Вырса алла иличчен
Хаяр çил-тăвăл ан тухтăр...
Сыв усра килес çулччен.

## XII

Пукрав иртсен хăна пухрăм:
Пăхрăм твансене савса.
Хăна умĕнче юрларăм,
Уй ĕçсене асăнса:

«Ме тухас мар, ме çӳрес мар,
Тăван-пĕтем* пур çинче?
Ĕçетпĕр те, çиетпĕр те
Çук çинче мар, пур çинче.

Асран кайми атте-апи,
Çаврасчĕ кăмăлсене.
Алран кайми аки-сухи
Йосу** тăтăр саранче».

## XIII

Шур уй çинче хĕл варринче
Урлă-пирлĕ çул выртать.

* Тăван-пĕтен.
** Юсав.

Хĕресчене укçа кирлĕ:
Тыр сутма сутта каять.

Çулла эпир аслă уйра
Çӳретпĕр ĕçсем туса.
Хĕлле те çав сайра хутра
Çӳретпĕр çул çухатса.

Хĕлле çĕр-шыв çине Турă,
Ыраш калчи шăнасран,
Çултан-çул ĕлĕк-авалтан
Тумтир витет шур юртан.

Мухтав Сана, Çӳлти Турă:
Çут çанталăк пит паха.
Килес çул та пултăр тырă,
Тутă усра халăха.

Чăваш çынни чăваш халăх,
Ĕçлеме пит юратать,
Ачисемшĕн, асăнмалăх,
Кил-çурт лартма тарăшать.

Атте-аннен нумай мул çук:
Ытлах пуйма тăрăшман,
Çынна парас парăмсем çук,
Начар ятпа пурăнман.

XIV

Эй, тăванăм, ĕçлĕ куна
Ху пĕлнĕ ĕçпе вĕçле.
Ĕмĕр пурăнас кун-çулна
Пĕрмай ĕçсемпе тĕрле.

Уйра тырă тумасассăн
Мĕнле пурнăпăр эпир?
Çулла хатĕрлемесессĕн
Хĕлле выçăхăпăр эпир.

Уй ĕç пĕтсен канса ан тăр,
Пĕр-пĕр ĕç тума тимле.
Наян кӳршӳ пырса пăхтăр:
Эс «немецсем» пек ĕçле.

Пурне çине хурса сыврăм
Минçен* çăкăр çинине:
Кил-йыш йышлă, пӳрчĕ тăвăр,
Уйра хĕсрĕç анине.

Парăм-сарăм татас тесе
Тӳшек-çытар та сутса.
Михĕсем тĕпне силлесе
Мĕн пур тырра авăртса.

Пурнăç пурăнма пит йывăр:
Мĕнле пурнас, кун курас?
Çукшăн тĕнче те пит тăвăр,
Мĕнскер туса аслатас?

Укçа мĕн туса тупас-ши?
Пирĕн тавра савут çук.
Кам патне тарçа каяс-ши?
Çывăхра пĕр хуçа çук.

Йĕри-тавра ал çухрăм кай —
Ĕçе кӳртекен пур-и?
Апла пулсан, хулана кай —
Сана кĕтекен пур-и?

Ытман-чĕнмен çĕре кайăп
Пуçăма çисе яма.
Пĕлмен пирки персе ярăп
Çын юратми сăмаха.

XV

Алри ача макăрмасăр
Амăшĕ тăрантармасть.

---

* Миçен.

Мăн çын алла ĕç тытмасăр
Пӳрт-çурт нихçан ăшăнмасть.

Хĕрĕх пуслăх пушăт илтĕм,
Услам нумай илĕп-ши?
Çăпатасем йăтса килтĕм,
Пасар хуçи пулăп-ши?

Çăка пушăт çăпати пур,
Пирĕн ураран каймасть;
Ир пĕрре сыр, каç салтса хур,
Вăхăт иртни палăрмасть.

Ай мăнтарăн пурăнăçĕ,
Услам тума ăсăм çук.
Хут вĕренмен, тĕнче кулчĕ,
Эпир ырă курас çук.

XVI

Çынсем ĕç тума вĕренчĕç
Вырăс хушшине кайса.
Вырăссемпеле пĕрлешрĕç
Пĕр кăмăлтан пурăнса.

Шакка-шакка сунтал тиртĕм
Мăн каска пуçĕ вĕçне,
Хулари пек услам илтĕм:
Пĕлтĕм тимĕрçĕ ĕçне.

Вăльттин-вăльттин урапийĕн
Тĕнĕллисем тимĕртен.
Кăльтăр-кăльтăр кăстăрчăкĕн
Кӳпчек вĕçĕсем йĕсрен.

Юлташсемпе хапрăк лартрăм
Çăматă йăвалама.
Тăвансене уралатрăм
Ик-виç çулхи услампа.

Вун пиллĕкĕн пухăнтăмăр,
Тир савăчĕ лартрăмăр,
Тирсем сутма пуçларăмăр,
Хамăр хуçа пултăмăр.

Çирĕм çыннăн хутшăнтăмăр,
Кирпĕч сарай турăмăр.
Кирпĕчисене сутрăмăр,
Аслă ята тухрăмăр.

XVII

Пĕве çинче хур-кăвакал
Çăвĕпе шыв пăлхатать.
Кĕркунне хур сутакан ал
Уçипе* укçа шутлать.

Улма йывăççипе хутăш
Тĕрлĕ йывăç лартрăмăр.
Ăша хывсан, ырă шухăш
Мĕн тунине куртăмăр...

Эй, тăванăм, ĕçлĕ куна
Ху пĕлнĕ ĕçпе вĕçле.
Ан ӳркен, кала юлташна,
Виççĕн ĕçлĕпĕр пĕрле.

Юрлакан хăй юрланине
Хăйне чипер асăнма
Чунтан, кăмăлпа савнине
Çырса пачĕ юрлама.

*1912*

* Ывçипе.

# ТУРĂ ТĂРĂШАКАНА ЮРАТАТЬ, ТĂРĂШАКАН ЫРĂ КУРАТЬ*

## I

Вун ик çула çитсессĕн,
Пĕвĕме вăй кĕрсессĕн,
Каяс терĕм хулана
Тарçă ятне илтмешкĕн,
Тул кулачи çимешкĕн.
Хула çулĕ пит вăрăм.
Хальччен хулана кайман.
Шухăшларăм, ăс илтĕм,
Хула ăçтине пĕлтĕм.
Ватă çынсем каларĕç:
«Хула çитме çывăх мар,
Ал çухрăмран кая мар.
Хурăн çулпа каймалла,
Вăрман урлă каçмалла.
Эсĕ, Васли, çитес çук,
Ачаскерех, каяс çук», —
Тесе мана каларĕç.
Пирĕн аттепе анне
Çити-çитми пурнăçпа
Тата хăрăк сывлăхпа
Ытах асапланаççĕ,
Уксах-суккăр лараççĕ.
Шухăшларăм, макăртăм.
Эпĕ хулана кайсан
Камсем пăхĕç аттене,
Кам хĕрхенĕ аннене?
Анне тахçанах куççăр,
Атте тата урасăр.
Атте-анне начаршăн
Кил-çурт ларать япăхса.
Шухăшларăм пуç тавра,
Тухса кайрăм пахчана.
Атте-анне сывă мар,
Сывă мар çын ĕçлеймест,
Карта-хура çавăрма
Ниçтан та вăй çитеймест.
Пирĕн пахча пит япăх,
Ыр çын пырса ан та пăх.
Ним шухăшла пĕлмесĕр
Утрăм ним те чĕнмесĕр,
Пăха хутăм малалла,
Каяс тенĕ çулпала.
Пуян çынсен ачисем
Тумланаççĕ пит аван:
Хура тумтир, шур тумтир
Пăхма аван аякран.
Шухăшларăм, хурлантăм,
Тумтир çукшăн вăтантăм.
Ӳпне ӳкрĕм çĕр çине,
Ӳпкеленсе макăртăм,
Сутăн илмен куççульне
Тăкрăм чĕр курăк çине.
Хĕвел пăхать, ăшăтать,
Ыр çын тавраш савăнать.
Манăн мĕскĕн аттенĕн
Пахчи йĕрки майĕ çук,
Ларса канма йывăç çук.
Ĕмĕр ларать пĕр йывăç:
Ятлă-шывлă йывăççи —
Атте лартнă улмуççи.
Шалчи ларать сип-симĕс,
Улми ларать шап-шурă.
Çак ĕмĕрхи улмуççи,
Ĕмĕр хурлăх курнăскер,
Тутлă çимĕç тăваймасть,
Этем ăшне пусармасть.
Мĕншĕн апла тесессĕн,
Ытах пĕлес килсессĕн,
Пулнă вăрман улмуççи

---

* Тарас Кириллов Яков Иовлевпа пĕрле çырнă (*Ред. асăрх.*)

Йӳҫӗ улма йывӑҫҫи.
Улмисем паха марскер,
Ҫынсене юрӑхсӑрскер.
Ҫынсем ҫисе савӑнман,
Ҫавӑнпа та шыварман*,
Карта-хура ҫавӑрман.
Ӑсӑм-пуҫӑм шухӑшлать:
Улмуҫҫи пек пулас мар,
Ӑс илмесӗр ларас мар,
Каяс пӗррех хулна
Хуҫа патне хӑнана.
Ҫӑвӑн-хӗлӗн е ҫӑхан,
Е курак, е тӑмана
Улмуҫҫие сыхлаҫҫӗ,
Ун ҫинчен таталмаҫҫӗ.
Пирӗн сала пит аслӑ.
Ҫынсем сысна усраҫҫӗ:
Ирпе-каҫпа сыснисем,
Кунӗн-ҫӗрӗн выльӑхсем
Ун кутӗнчен каймаҫҫӗ,
Улмасем хӑвармаҫҫӗ.
Тата тискер сыснисем
Ҫинипех те юрӗччӗ,
Ҫисенех тапратаҫҫӗ
Тымаррине кӑларма,
Вӑйсӑр йывӑҫа хӑртма,
Вӑрҫа-вӑрҫа чаваҫҫӗ,
Сӑмсисене чармаҫҫӗ.
Эпир начар пиркишӗн
Шухӑшларӑм, макӑртӑм.
Пире, йӑваш начара,
Кам хӗрхенӗ салара?
Йывӑр шухӑша кайса,
Начарришӗн кулянса
Ик-виҫ сехет шӑрӑхра
Лартӑм пулӗ аптӑраса.
Тем хӗвелпе пиҫиччен,
Ӑшӑрхаса лариччен
Каяс терӗм сухӑма*,
Анчах вӑйӑм ҫук утма.
Виҫ кун ҫимен кӗлеткем
Хирти шаннӑ чечек пек.
Чуна усракан чӗрем
Халех чунсӑр пулас пек.
Тӑрса утма вӑйӑм ҫук.
Ҫынна калас, ҫын илтмест,
Ҫын хуйхине ҫын пӗлмест.
Каплах вилме йӗрке ҫук.
Шӑм-шак йывӑр пулсан та,
Чун лӑпланас ҫуккипе
Тӑтӑм, утрӑм килелле;
Пуҫра шухӑш кӗтӳпе,
Чунӑм хула еннелле.
Кил хушшине кӗтӗм те,
Атте-анне ларaҫҫӗ
Хутаҫ ҫӑкри вакласа,
Вӗттӗн-вӗттӗн турасa,
Тӑр шывпала йӗпетсе
Тӑварсӑрах ҫиеҫҫӗ.
Ҫисен, ӑш-чик лӑплансан,
Атте пӑхрӗ ҫӳлелле
Хӗвел тухӑҫ еннелле.
Аслӑ Турра асӑнса:
«Пире, мӗскӗн ҫынсене,
Ҫӑкӑр-тӑвар панӑшӑн
Святой ҫынсен кӗллипе
Усра, — терӗ, — ҫынсене,
Савса паракансене».
Анне мана каларӗ:
«Килсе ҫисем, ывӑлӑм,
Каҫ пулчӗ, хӗвел анчӗ,
Ту айккине пытанчӗ.
Хальччен ҫӑкӑр пулмарӗ.
Ҫуллахи кун, вӑрӑм кун,
Выҫҫипех иртсе кайрӗ.
Паян ҫӑкӑр ҫиессе

* Шӑварман.

* Сулхӑна.

Чунăм пĕртте сунмарĕ.
Ырă Турă пăрахмарĕ:
Салара пĕр çын пĕлнĕ
Эпир выçă ларнине.
Пирĕн пата çын янă.
Халь анчах тухса кайрĕ
Çăкăр леçме килекен».
Эпĕ вара каларăм:
«Манăн çиес шухăш мар,
Сире калас сăмах пур.
Атте, мана ирĕк пар,
Анне, мана пиллĕх пар, —
Каяс тетĕп хулана.
Сире йывăр пулин те,
Пиллĕр мана иксĕр те».
Урăх кала пĕлмесĕр,
Чун хурланнă майĕпе,
Хутаç çăкри илтĕм те
Çĕре ўкрĕм, пуççапрăм,
Ват çынсене макăртрăм.
Çуллахи вăрăм кунта
Çынсем виç хут çиеççĕ
Тата чей те ĕçеççĕ.
Эпĕ ĕнтĕ выççипех,
Пĕчик татăк çинипех
Каçпа выртрăм çывăрма.
Ăшăм-чиккĕм пушă та
Ыйăх та çук, пит кансĕр.
Çиес килет йĕркесĕр.
Тĕлĕрсе çеç каятăп,
Ырă тĕлĕк куратăп:
Пĕрмай çăкăр çиетĕп,
Чарăнмасăр çиетĕп,
Тăранма та пĕлместĕп,
Тĕлĕкрине сисместĕп.
Çаплах ирпе тăтăм та
Эпĕ пĕртте тутă мар.
Хулана каяс сăмаха
Каллех каласа патăм,
Куççулĕпех макăртăм.
Атте кайма пиллерĕ.
Анне мана пуçăма
Шăла-шăла каларĕ:
«Ай ывăлăм, ывăлăм,
Пĕвĕм йăтнă кĕлеткў,
Ўпке-пĕвер ывăлăм!
Сана Турă усратăр,
Чир-чĕр, хаяр куçсенчен
Çўлти Турă сыхлатăр.
Çўренĕ чух сыхлă пул,
Çын умĕнче йăваш пул,
Çын хыçĕнче тĕрĕс пул.
Астаракансем пулĕç,
Кулакансем тупăнĕç —
Тăшман вăйĕ ан çиттĕр,
Усал куçĕ ан ўктĕр.
Çўрес çулусем урлă
Кушак-йытă ан каçтăр:
Инкек-синкек ан тухтăр.
Калле-малле шухăшна
Çынна тўрех ан кала.
Ырра курса ан хапсăн,
Чипер тесе ан савăн.
Лайăх çўре савăнса
Турă панă хăватпа.
Аçу-аннўне манса
Ан кай вара пăсăлса.
Эпир выçă ларнăшăн
Вăйран тухса ĕçлесе
Кĕлеткўне ан çĕмĕр.
Çурхи чечек тухнă пек,
Тин пуçланать сан ĕмĕр.
Ан ман вара, ывăлăм:
Эсĕ халĕ çавăн пек».
Атте-анне калани,
Вĕсем мана пиллени
Çĕр çинчи пурнăçăмра
Яланах ман асăмра.
Анне: «Сывă пул, — терĕ, —
Çўренĕ çĕрте ан ман:

Турă çине шанакан
Пĕр ырлăхран та юлман».
Чунăм кӳтнĕ халхипе*
Тухрăм кайрăм урама
Тантăш-твансене курма.
Хула каяс шухăшпа
Утса тухрăм урампа.
Хамăр чиркӳ еннелле
Урамри çынсемпеле
Утрăм эпĕ те кĕлле.
Ӳке-ӳке пуççапрăм
Кĕлĕллĕ чиркĕвĕнче,
Туррăн таса çуртĕнче.
Таса чиркӳрен тухсан,
Ăсăм-пуçăм лăплансан,
Тантăшсене ал парсан
Кайрăм вара тăвалла:
Хула çулĕ унталла.
Уя тухрăм, кĕл турăм,
Çӳлти Турра сăхсăхрăм.

II

Вун ик çулхи пуçăмпа
Кайрăм-кайрăм пĕр çулпа.
Калле-малле пăхмарăм,
Вăрмана çывăхартăм.
Аслă вăрман, сĕм вăрман,
Хальччен те сана курман.
Сан виттĕр хальччен тухман,
Сан урлă хальччен каçман.
Вăрман хĕрне çитсессĕн,
Хăрас шухăш кĕрсессĕн
Алла туя çĕклерĕм.
Тискер кайăк тытасран
Йывăç çине ĕлкĕрме
Турат йывăç тĕллерĕм.
Уя тухсан ăс кĕрет.
Вăрман çилпеле кĕрлет,
Чунăма шиклентерет.
Вăрмана кĕнĕçемĕн
Чĕрем кăлт-кăлт тутарса
Чунăм хăрать хуйханса.
Хăранипе хурав çук:
Курассине курмаллах.
Хам утатăп малаллах.
Ĕнтĕ, вăрман, ан шавла,
Кĕрсех кайрăм шалалла.
Ача чунне ан хăрат.
Вăрманта нумай турат.
Турат çинчи кайăксем
Савăннипе юрлаççĕ,
Мана лăплантараççĕ.
Кайăк сасси майĕпе
Юрлас килет манăн та.
Ăшран сассăм тухсанах
Хăрас шухăш тапранать.
Вăрман мана сас парать.
Тăрам, тетĕп, итлеме
Сухăма, йывăç çумне,
Анчах тăрма* хăратăп,
Еррипелен утатăп.
Вăрманта сывлăш уçă,
Ай пит лайăх, пит аван!
Кайăкĕсем юрлаççĕ,
Хăйсем мана курмаççĕ,
Юррипе савăнаççĕ.
Турă пană сассисем
Унтан-кунтан илтĕнет.
Йывăç хушшипе хĕвел
Тайăн çурăма хĕртет.
Питĕм-куçăм хĕрелет.
Кăнтăрла та, çĕрле те
Итлĕттĕм кайăксене.
Хула çулĕ пит вăрăм.
Хутаçри çăкăр тĕпне
Пасăрах** çисе ятăм.

---

* Майĕпе.

* Тăма.
** Паçăрах.

Утнăçемĕн утатăп,
Çула тăрăх пыратăп,
Хам малаллах пăхатăп.
Ай-ай хайхи шур хули,
Çап-çутă Атăл çутти
Куçа курăнса кайрĕç!
Чупас тетĕп курасшăн,
Анчах чунăм хăрасшăн.
Вăрман виттĕр тухрăм та,
Ту айккине пăхрăм та
Хĕп-хĕрлĕ те шап-шурă
Йăлтăртатса çутăлса
Ларать хай купир* хули.
Кунтах пурăнса пуль-и?!
Чунăм, чунăм, ан хăра.
Хĕрес те пур ман çумра;
Хĕрес хăвачĕ сыхлать,
Кирек мĕнтен те çăлать.
Хула еннелле тухса,
Ял-йыш аякка юлса,
Тантăшсенчен уйрăлса.
Çут тĕнчерен те хаклă
Атте-анне макăрса
Тараççĕ пуль кулянса:
Ваçли килте çук тесе.
Хула çумĕн кĕрлесе
Пароходсем иртеççĕ.
Çурхи шыв Атăлпала
Юхса каять тинĕсе.
Анаталла-тăвалла
Кунĕн-çĕрĕн кĕрлесе
Çӳреççĕ пароходсем.
Мăн шыв тăрăх мул юхать,
Камăн ăс пур, вăл тытать.
Камăн ăс çук, вăл çӳрет,
Çыран хĕрринче ларать:
Выçать, аптрать, вăр вăрлать.
Милльун** тытан хуçасем,
Пуян çынсем, чухăнсем
Пароходсем туллиех
Атăл çинче çăвĕпех.
Чулпа сарнă çулпала
Купир хули еннелле
Куçать упус мулпала.
Астумарăм пулмалла,
Кĕçех манăн çийĕме
Пусатчĕ самăр лаша.
Шалтах тĕлĕнсе кайрăм:
Килте кун пек кам куртăр,
Лашисем те пит самăр,
Ураписем, кутлăхсем,
Шуç таврашлă йĕвенсем,
Ялта ун пек кам тыттăр!
Пуринчен те пит лайăх.
Ай, пăхма та пит аван!
Асăрха, асту, ан ман:
Çавсем укçасăр пулман.
Ним шухăшла пĕлместĕп:
Мĕнле пурнас, кун курас,
Мĕскер çисе тăранас?
Хырăм выçă, хутаç пушă.
Кайăттăмччĕ каялла
Тухса килнĕ килелле.
Çул çинче темиçе хут
Таврăнма шухăшларăм.
Анчах килте хĕрĕх хут
Ăша тытнă ĕмĕте
Пăрахасшăн пулмарăм,
Хула патнелле утрăм.
Утнăçемĕн утатăп,
Хула çине пăхатăп.
Хула шап-шурă ту пек.
Чул çуртсен чӳречисем
Аякран алăксем пек.
Çывăхра мĕн тери пуль!
Ту айккине йĕркипе
Аял енпе, çӳл енпе
Пăрчăкансем, çерçисем

* Кĕпĕрне.
** Мĕльюн.

Йăва тума шăтăксем
Шăтăкласа хунă пек,
Пинĕ-пинĕпех куçсем,
Хисеплесе тухас çук,
Кĕленчепе витĕннĕ.
Чалкăшса çеç лараççĕ!
Тата савут труписем,
Пĕр çулчăсăр, хупăсăр
Сĕм вăрманти юмансем
Пĕр туратсăр ларнă пек,
Лараççĕ тункатасем
Хура тĕтĕм кăларса.
Эпĕ малтан хăраса
Çунусем кусем тесе.
Куç илме çук чиркӳсем,
Калама çук паха çав.
Пĕлĕт патне çитес пек
Çӳллĕ хитре тăрăллă.
Ылттăн тĕслĕ хĕрессем,
Хĕвел çутти ӳксенех,
Хăйсем хĕвел пулаççĕ.
Ĕнтĕ çитрĕм хулана,
Хулана мар, вăрмана.
Маншăн хула — сĕм вăрман,
Хальччен курман сĕм вăрман.
Сĕм вăрмана кайнă чух
Çурăм хыçне пуртă çых,
Йывăр тесе ан кала.
Хула каяс пулсассăн
Кăсийуна укçа çых,
Нумай тесе ан кала.
Ни укçа, ни çăкăр çук,
Ăçта кайса кĕрем-ши?
Ниçта кайма аптрарăм,
Тăрсан, утрăм пăртакках.
Кивĕ çăпата хĕрри
Сӳсленнĕччĕ вăрмантах.
Сисмерĕм, çав вăхăтрах
Пĕр урари çăпата
Шăтсах кайрĕ чулпала.
Лартăм, макăртăм ларсах!
Атте-анне сăмахне
Аса илнĕ чунпала
Утрăм пĕр урампала.
Чунăм тухать кулянсах.
Çав сехетрех пĕр суккăр
Хыпаласа çул йĕрлет,
Чĕлхи сăмах вĕтеклет:
«Юлташăм таçта кайрĕ,
Паян мана пăрахрĕ...» —
Тесе куçне сĕркелет.
Çавăнтах туйса илтĕм,
Куççăр çынна хĕрхентĕм.
Çывăхнерех пытăм та:
«Ырă çын, сана юлташ
Эпĕ пулам, атя-ха,
Маншăн та ырă çын пул».
Çапла-çапла йĕркипех
Хам пĕлнĕ пек каларăм.
Хампала паллаштартăм.
Куççăр çыннăн куçĕ çук,
Анчах чĕре çутти пур.
Мана çав çын пин çынтан
Мала тăчĕ хулара.
Манассăм çук нихăçан
Ăна эпĕ пурнăçра.
Туррăн парасси пĕтмест,
Çынăн макрасси пĕтмест.
Утнă çĕрте, чул çинче
Ик урари çăпата
Юлашки кун сĕртĕнет.
Хуйха ӳкнĕ пусăмпа
Утрăм эпĕ куççăрпа.
Куççăр хăйĕн хваттерне
Ертсе кайрĕ юлташне,
Мана, айван чурине.
Вăйран тухнă кĕлеткем
Хулана çитсе выртрĕ.
Куççăр çын хутаçĕнчи
Типсе хытнă татăксем

Тăрантарчĕç, ăш выртрĕ.
Çав татăксенчен ытла
Ун кăмăлĕ пит паха.
Эпĕ, ывăннă ача,
Куçсăр çын пӳлĕмĕнче
Çывăрнă çав çĕр каçа.
Утмăл çухрăм утнăскер
Урасăр пулса ларса,
Аран-аран юсанса.
Маншăн хĕрхенӳ килнĕ:
Куçсăр çын аса илнĕ:
«Хулара монастырь пур,
Монастырьте святой пур.
Святой вилни çур пин çул.
Халăх ăна асăнса
Çулсерен праçник тăвать.
Çав святой уралатать.
Иксĕмĕр унта каяр,
Святой çынна тархаслар,
Унтан пулăшу ыйтсан,
Ăна асăнта тытсан,
Ман сăмаха асăнăн,
Эсĕ телейлĕ пулăн.
Иккĕн кайса пуççапар,
Сана кунта пурăнма
Вырăн ыйтса кĕл тăвар.
Сана Турă пăрахмĕ.
Аçу-аннӳ кĕллипе,
Çӳлти Турă ыррипе
Чиперех вырăн тупăн.
Палла тăран хуçа пур.
Кайса пăхар, мĕн калать:
Ăна çын кирлĕ мар-ши?
Ăна çын кирлĕ пулсан,
Ун патĕнче пурăнсан
Хуçа пулăн ӳлĕмрен.
Ачам, утăпăр хуллен».
Мана çапла куççăр çын
Тем пекех лăплантарчĕ.
Эпир вара кайрăмăр,
Тăвассине турăмăр,
Ыйтассине ыйтрăмăр.
Çын Турăсăр пурнаймасть,
Алăк уçса хупаймасть.
Турăпа пĕрле тухсан
Тĕнчипе çаврăнсан та,
Кил-çурт тĕлне çухатмасть.
Урампала утатпăр,
Куççăрпа калаçатпăр.
Пире хирĕç пĕр енпе
Пĕр вырăспала майри
Çитрĕç тăчĕç, чарăнчĕç.
Вырăс куççăра калать:
«Иван атте, аван-и!
Ăçта каян, ку ача
Хăçантанпа санпала?
Тупса пар-ха, лайăх çын,
Пире çакăн пек ача».
Майри калать вырăсне:
«Пăх-ха, акă çак Ваçкă,
Пăхатăп та, юрас пек.
Лайăхрах пăхкала-ха,
Маншăн аван пулас пек».
Мана вырăс каларĕ:
«Атя-ха пирĕн пата.
Иван сана кăтартĕ.
Пирĕн киле вăл пĕлет».
Унтан куççăра чĕнсе
Илчĕç пăртак айккалла.
Ыйтса пĕлчĕç пулмалла
Ман çинчен тем тĕпчесе.
Вырăсĕпеле майри
Куççăра укçа пачĕç,
Ал пачĕç те уйрăлчĕç.
Куççăр мана каларĕ:
«Ну, ачам, сан телейӳ
Хăвăнтан та пысăк пуль!
Чăнах, ачам, ĕмĕтӳ
Çитсе пырать, ан кулян».
Çитрĕмĕр хуçа килне,

Виҫ хутлă пĕр чул ҫурта.
Алăкĕнчен кĕрсенех
Шалта шăнкăрав тапратрĕ
Шăнкăртатма, чĕтĕретме!
Шалтан пĕр майра тухрĕ,
Куҫсăр ҫынна курсанах
Пукан ҫĕклесе тухрĕ.
Ним чĕнмесĕр тăратăп,
Лар тесен те лармастăп,
Чĕтĕресех хăратăп.
Хуҫапа майри килсен,
Апат ҫисе чей ĕҫсен
Тухрĕҫ вара иккĕш те.
Мана ҫаксем пур енчен
Ыйта-ыйта пĕлесшĕн
Пайтах калаҫса тăчĕҫ.

Хуҫа куҫĕнчен пăхатăп,
Пĕлнине аван калатăп.
Йăваш кăмăллă тăратăп.
Ҫамка ҫинчи ҫӳҫĕм-пуҫăм
Лайăх пулма шăлкалатăп.
Хĕп-хĕрлĕ пек питĕм-куҫăм.
Хăрамастăп, калаҫатăп.
Ҫапла хуҫапа майри
Хăйсем патне мана илчĕҫ.
Хампа пĕрле илсе килнĕ
Паспортăма илсе хучĕҫ.
Уйăхсерен виҫшер тенкĕ
Атте патне почтăпала
Укҫа яма килĕштерчĕҫ.

Ҫи-пуҫ, тумтир начартан
Ҫĕнĕ тумтирсем илсе
Ҫав кунах тумлантарчĕҫ.
Хама пурăнма пӳлĕм
Кăтартрĕҫ те каларĕҫ:
«Выртса ҫывăр, вăй кĕтĕр.
Кайран вара ан ӳркен,
Ĕҫлемеллине ĕҫле.
Пĕлменнине ыйтса пĕл.
Пурăн ҫапла ҫупа хĕл,
Шалу тата хушăпăр.
Тӳрĕ пул та ĕҫчен пул.
Сана эпир шанăпăр.
Шанчăклă пулма тăрăш», —
Тесе мана вĕрентрĕҫ.
Куҫăм тулли куҫҫульли
Тав тунипе халь юхать.
Ун чух эпĕ ачаскер,
Ют ҫĕрте тăр пĕчченскер,
Ҫĕре ӳксех тав турăм,
Чипер пурăнма пултăм.

III

Ик-виҫ уйăх пурăнсан,
Кил шухăшĕ ăшăма
Варкаттарма пуҫласан,
Аран чăтса ирттертĕм.
Тунсăхланипе пĕтрĕм.
Ĕҫлеме ĕҫ йывăр мар:
Выльăхсене пăхмалла,
Ҫӳп-ҫап шăлса хумалла,
Йывăҫсем шăвармалла,
Мĕн хушнине тумалла.
Магазинта тăмалла,
Алăк уҫса хупмалла.
Кил шухăшĕ пĕтерет,
Чунăм чиперех йĕрет.
Пĕррех киле кайăттăм,
Анне сăнне курăттăм,
Атте ҫине пăхăттăм,
Ик-виҫ сăмах пуплĕттĕм.
Килте, хамăр салара,
Урама тухăттăм та
Тантăшсемпе выльăттăм.
Хампа тантăш ачасем:
Лука, Гордей, Михала,
Улатимĕр, Микулай,
Хветĕр, Ехрем, Киприан

Пурте пĕрлеччĕ ялан.
Хĕрачасем тантăшсем:
Ультӳттипе Уххина,
Хветурипеле Марья
Пĕрле ларса юрлаççĕ:
Сар ачана мухтаççĕ,
Хура пуçа хурлаççĕ.
Хут вĕрентĕм çамрăкла
Тантăшсемпе пĕрлешсе.
Ир те, каç та çулпала
Çӳреттĕмĕр тимлесе.
Халь манман, савăнмалла
Юрлаттăмăр кĕлĕре.
Асăнаççĕ Шăматра
Халь те ун чухнехине.
Ларсан-ларсан, канмалла
Тухаттăмăр сив çĕре.
Шкулта пăчă, тулта уçă.
Пуç ыратать кунĕпех.
Шкул ачисен сасси уçă,
Сасă каять салипех.
Пĕчик ача çитĕнет,
Мĕн курассине пĕлмест.
Ир пулать те каç пулать,
Кун-çул иртни сисĕнмест.
Е ачалла çамрăклах
Хулара пурăннăран,
Хура-шурă курнăран
Хăш чухне шухăшлатăп:
Пĕчик ача çуралать,
Ик аллине чăмăрлать:
Мĕн пур тĕнче ман алра
Тенĕ пекех туйăнать.
Вилес вилĕм çывăхра:
Е ачаллах, çамрăкла,
Е йăшă чух чирлесе,
Е ватăлса вăй пĕтсе
Çын ку тĕнчерен куçать,
Уç* тупансене уçать:

* Ывăç.

«Пушах халь, ав, аллăмсем.
Курса юлăр, тăвансем:
Леш тĕнчене мул куçмасть,
Çын ним те илсе каймасть.
Ан манăр çакна», тесе
Каланă пек туйăнать.
Çакна асăма илсе:
«Кун-çул иртме ĕçлĕ пул,
Вилмеллине асра тыт,
Пухса хур сăваплă мул,
Пурнăçна пит таса тыт.
Вилĕм куçа курăнмасть.
Сăваплă ĕç хăратмасть.
Кам таса, вăл савăнать.
Çылăхли асапланать»,
Тесе те шухăшлатăп.
Кил-çурт аса килет те,
Хăш чухне макăратăп.
Хулари пур ирсĕртен
Хама хам сыхланатăп.
Чĕлĕм тавраш туртмастăп,
Паппируска тытмастăп.
Хупах, трактир ман çурт мар,
Унта нихçан каяс мар.
Килте, ялта, атте пур,
Ачашланă анне пур.
Эпĕ ухмах ăс тытсан
Вĕсем мана мĕн калĕç.
Киле-çурта тавăрăнсан
Ырă çынсем путалĕç.
Трахтирсене каякан
Капан-купа хăвайман*.
Эпĕ кунта хулана
Укçа тупма килнине
Хăш-хăш çынсем пĕлмеççĕ,
Манах çиме пĕлеççĕ.
Эпĕ хулана килсен
Çыру часах ярайман.

* Хывайман.

Килтисен ăш лăпланман.
Ĕлĕк* сăмах килтисен
Хăлхине çитсе кĕрсен
Маншăн пит хытă йĕнĕ.
Григорий ятлă ача
Ик-виç çул манран малтан
Тухса кайнă хулана.
Час кĕреймен вырăна.
Улахри хĕрачасем
Эпĕ тĕп пулни çинчен
Шухăшласа кăларнă
Ак çапла кĕске юрă:
«Хамăр ялти салари
Ваçлипеле Григори
Килти ĕçрен ÿркенсе
Тухса кайнă хулана.
Килте, ялта мĕн ĕçлес,
Мĕскер ĕçлесе пуяс?
Атя, пĕр май, Григори,
Мăн хулана каяр-и,
Хуçа пулса килер-и?
Ваçлипеле Григори
Тухса кайнă хулана,
Сĕм ют çĕре хăнана.
Килтен илнĕ укçана
Кÿртсе панă лавккана.
Кулачă илсе çисен,
Çÿремелĕх вăй илсен
Утрĕç çаксем урампа
Ĕçлеме вырăн тупма.
Çаксем ĕçе кĕреймен,
Никам та ĕçе кÿртмен.
Ваçлипеле Григори
Кĕсех** выçса вилеймен.
Утрĕç вара çыр хĕрне,
Çитрĕç пăхрĕç шыв çине.
Атăл çутăлса выртать.
Анаталла-тăвалла
Шыв çинче кимĕ чупать.
Атя ĕнтĕ, Григори,
Кимĕ çине ларар-и,
Астрахане çитер-и,
Атăл пулли çиер-и?
Атăл çинче луткăсем.
Патĕнчех пулăçăсем.
Икĕ тăван пĕр ялтан
Инçех каясшăн пулман.
Илчĕç çаксем луткăсем,
Пысăках мар хакĕсем.
Луткăсем çине ларса
Атăлваррине кайса,
Пулă тытма тапратса.
Ваçли лутки шăтăкрах,
Григорин те ăшăкрах.
Акă Григори путать,
Ваçли уринчен тытать,
Ваçли путрĕ шыв тĕпне.
Григори те ун тĕлне», —
Тесе хĕлле юрланă
Улах ларакан хĕрсем.
Çакă юрра итлекен
Сÿткеленчĕк карчăксем
Суйи-чăнне тишкермен:
Пуйма тухса каякан
Вилĕм-çĕтĕм тупакан
Тесе ахлатса ларнă,
Аннеме кулянтарнă!
Эпĕ, Турра тавтапуç!
Хула хуçи ыррипе
Кил-çуртĕнче халь хам пуç!
Мана хуçа юратать,
Мулне те шанса парать.
Чулхулана çÿретĕп,
Тавар илсе килетĕп.
Ырă ĕçсе çиетĕп.
Вырăсла халь пĕлетĕп.
Вырăсла мĕн ыррине,
Вăйлă халăх йăлине

* Элек.
** Кĕçех.

Уйăрса ав илетĕп:
Чипер, тăнлă çӳретĕп.
Хĕрсем мана хурлани
Пĕр хĕр кăмăлне килмен.
Тĕнчере ыр çын пĕтмен.
Ача чухне пĕрлешсе
Хут вĕренме çӳрени,
Пĕрле урамра вăйра
Килĕшӳллĕ выляни
Çав хĕр асĕнчен кайман.
Эпĕ хулана кайсан
Ун макăрасси килнĕ.
Ытти тантăш ачасем
Ман ятăма асăнсан
Хĕрĕн пичĕ хĕрелнĕ.
Каçпа çывăрма выртсан
Часах ыйхи килеймен.
Çывăрнă чух вăрансан
Нумай шухăша кайса
Сăн-сăпатне хухтарнă.
«Турă çавăр Васлие,
Эпĕ курас телее», —
Тесе вăл нумай хутчен
Пăхнă пулас Сулумун
Ерĕçнĕ, ирĕклĕ кун.
Хĕрĕн ятне калас мар,
Чунне хурлантарас мар.
Сывă пулсан, таврăнсан,
Кил-çурт майне çавăрсан
Вăл хĕртен сивĕнес мар.
Салтак ячĕ тухиччен,
«Служить» тума кайиччен
Хулара пурăнам та,
Хама хам ырă ятшăн
Чипер тытам чăткăнса,
Хуçасене юраса.
Салтакра «служить» тусан,
Кйран кил-çурт юсасан
Эпĕ вара авланам.
Çав хĕр ятне тин калам!

IV

Хулана килни улт çул,
Сисмерĕм, иртсе кайрĕ.
Çав ултă çул хушшинче
Атте-аннене курма,
Кирлине илсе пама,
Пахча çимĕçсем лартма,
Çатан карта çавăрма,
Пăртак улмуççи лартма,
Уйри ĕçе пуçтарма
Виç хут киле таврăнса,
Уйăх çуршар пурăнса.
Салана курма килсен
Хурăнташ-тантăш-тăвансемпе
Хальччен лайăх пурăнса.
Киле курма килеттĕм,
Кĕнекесем кӳреттĕм,
Çынсене илтереттĕм.
Ялан хуларан килсен,
Эпĕ килтине пĕлсен
Кĕнекесем тĕслĕрен
Илетчĕç ачасерен.
Кĕнекесем вуласа
Хут вĕренчĕç килсерен.
Халь те ăна асăнса
Пуплеççĕ курмассерен.
Ял-йыш курма килсенех
Хай чипер кăмăллă хĕр
Йăпăрт вара йутĕмпе
Пăрусем ямалла, ир
Иртетчĕ пӳрт çумĕпе
Мана курас килнипе.
Мана хирĕç-мĕн пулсан
Аякранах хĕрелет,
Пичĕ сентел пек пулать.
Чунăм пӳлĕнсе килет,
Куç пăхать, чун хĕпĕртет.
Пĕр-пĕринчен именсе
Ним каламасăр иртсе
Каяттăмăр айванла.

Чăваш йăли çаплалла.
Иртсенех ав каялла
Çавăрăнса пăхатпăр,
Çынсене пăхтаратпăр.
Çав хĕр çапла юратни
Хулара аса килет.
Кайăк пулса вĕçĕттĕм
Симĕс курăк пур çĕре,
Хамăр яла çитĕттĕм
Чунăм савни пур çĕре.
Каçпа урам хушшинче
Ушкăнĕпе хĕрарăм,
Ушкăнĕпе яш-кĕрĕм,
Унта-кунта пуху пек
Арçынсем те тăраççĕ,
Сăмах, халлап вакласçĕ.
Çав вăхăтрах яшăсем
Тепĕр çĕрте юрлаççĕ,
Туйсене асăнаççĕ.
Эпĕ вара чун пекех
Хĕпĕртесе тăраттăм.
Çут тĕнчене манаттăм,
Пĕр ун çине пăхаттăм.
Хăш чух вара яш-кĕрĕм
Урам варне пуçтарăнать,
Вăй выляма тытăнать.
Йĕркипеле икшерĕн
Хыçа-хыçăн лăпчăнать.
Мала тăрать пĕр ача,
Хурал пекех сыхлавçа
Чи хыçалти ик ача
Вăй пур таранах чупса
Иртсе каять малалла.
Сыхлавçăран хăтăлса
Пĕрне-пĕри ал парсан,
Хĕпĕртесе айкашса
Йĕрке пуçне тăраççĕ.
Йĕркерисем выляса
Пĕртте канлĕ тăмаççĕ,
Пĕрмай хумханкалаççĕ.
Хуралçа пĕрне тытсан
Тăрать унпа юнашар.
Тепри юлать хуралçа.
Хĕпĕртеймест вăл ача.
Виç хут чупса тытмасан
Вылякансем ик енне
Урам туса тăраççĕ,
Пĕр тытайман хуралçа
Урам тăрăх чуптарса
Çурăмĕнчен çупаççĕ.
Кайран вара çав ача
Каллех хурала юлать.
Хай ача тин шухланать:
«Патак çирĕм йĕркесĕр,
Тытас пулать пĕрех хут», —
Тесе чупма тапратать.
Чупать тирĕнес пекех,
Тытасах тет чун пекех.
Арçын ачапа пĕр хĕр
Иккĕн пĕрле тăраççĕ,
Пĕрле чупса каяççĕ,
Хуралçăран тараççĕ.
Арçын ачи хăй хĕрне
Çынна тыттарасшăн мар.
Хуралçи тытасшăнах,
Анчах хăй кĕт хурарах!
Хĕр юратать саррине!
Сар ача хăйĕн хĕрне
Хуралçине тыттарсан
Сар хĕрача çилленет,
Сар ачи те кулянать.
Уншăн хури савăнать!
Сар ачана юратса
Хирĕç пулса тытасшăн,
Иккĕш пĕрле пуласшăн
Ăшĕ çунать хĕрачан.
Кун пек вăй-мĕн пуçлансан,
Эпĕ тăраттăм ялан
Çав хĕрпеле юнашар.
Ман сăн-сăпат мĕн тĕслĕ,

Халĕ ăна пĕлместĕр.
Вăрăм сăмах та вĕçлĕ,
Юлашкинчен ак илтĕр.
Хĕр хĕпĕртет, савăнать.
Çамрăк шăм-шак авăнать.
Савăнса пухса илен,
Черетре чупса килен,
Калаçмалли тупăнать,
Кулмалли унта пулать.
Чĕлхе çинче сăмах çук,
Пурне те çырияс* çук.
Çынсем темĕн те калĕç,
Тăрăхласа та кулĕç.
Пĕве çитрĕм, çуллантăм,
Чипер, яшă çын пултăм,
Кай, ан хурла, ан калаç,
Чун тасалăха манмасть,
Ăсăм-тăнăм çухалмасть.
Ялти яшă ачисем,
Çапкаланчăк ухмахсем,
Вăй выляма тухсан та,
Улах ларма кайсан та
Усал шухăш тытаççĕ.
Ачаранах çитĕнтĕм,
Хальччен манăн ĕмĕтĕм:
Таса пулас çутă пек,
Ырă пулас, кун курас,
Таса пурнăçпа пурнас —
Манăн çапла ĕмĕтĕм.
Вун сакăр çула кĕтĕм,
Арçын пӳнелле çитрĕм.
Хĕр юратнине сисрĕм,
Атте-анне ӳкĕтне,
Атте-аннемĕн ятне
Нихçан асран ямарăм,
Таса ята пăсмарăм.
Хула хуçи мулĕпе
Таçта çитсе çӳрерĕм,
Хуçа шанса панине
Çул çинче çухатмарăм.
Турă панă пĕвĕме
Мулран ытла сыхларăм,
Сыхлавсăр пурăнмарăм.
Мана, начар мĕскĕне,
Ырă Турă çĕклерĕ.
Аннен пăсăк куçĕсем
Эпĕ тăрăшнипелех
Юсанчĕç, халь кураççĕ.
Нумай ăслă докторсем
Хула илсе пыртарчĕç,
Пулнитсана вырттарчĕç.
Вара икĕ уйăхран
Куç чирĕнчен хăтарчĕç.

V

Хула пуян, хула ăслă.
Укçа пурра тĕнче аслă.
Анчах пире, хĕресчене,
Атте-анне килĕ-çурчĕ
Мĕн пур тĕнчерен те хаклă.
Чунăм туртать кил еннеллех.
Киле каяс, килте пурăнас
Тенĕ шухăш хампа пĕрлех.
Киле çитем, шур пӳрт илем,
Атте-анне хĕпĕртеччĕр.
Ваçли ăслă пулчĕ теччĕр.
Хуçа патĕнче пурăнса
Çирĕм икĕ çула çитрĕм.
«Ваçли малалла пурăнма
Хатĕрлерĕ», тенĕ сăмах
Ялти çынсенчен хам илтрĕм.
Хуçа мана çăкăр пачĕ.
Ан çухалтăр унăн ячĕ.
Ĕмĕр-ĕмĕр ачи-пăчи
Хуçа ячĕпе пурăнтăр.
Укçи-арчи тулсах тăтăр.
Хай пĕр çĕртен услам пытăр.
Унтан илсе пухнă укçам

* Çыраяс.

Килте мана савӑнтартӑр.
Ютра чӑтнӑ вӑй-хӑватӑм
Килти ӗҫрен ан хӑратӑр.

Кайрӑм ҫапла шухӑша
Киле-ҫурта асӑнса.
Ӗмӗр хулара юлас,
Килӗм-ҫуртӑм пулас ҫук,
Эпех хуҫа пулас ҫук.
Ятлӑ-шывлӑ ҫӗрӗм пур,
Суха тума ҫынӗ ҫук,
Ни пиччем, ни шӑллӑм ҫук.
Ҫыру нумай вӗренсе
Аслӑ ӗҫе кӗрекен
Пӗрмай шалупа пурӑнать.
Эпӗ чирлӗ-мӗн пулсан,
Хуҫа патӗнчен тухсан
Ӑҫта кайса пурӑнас?
Хулара пурӑнатӑп:
Хама ята ҫуртӑм ҫук,
Хама ята лашам ҫук,
Ни ӗни, ни сурӑхӗ,
Ни качаки, ни чӑххи —
Пурте хуҫа аллинче.
Апла-и-ха ялсенче?
Ырӑ ҫынсен килӗнче
Йӗри-тавра ҫурчӗ пур,
Пурӑнмалӑх тырри пур,
Кил хушшинче туллиех
Выльӑх-чӗрлӗх кӗтӳпех.
Пӳрте кӗрсен сак ҫинче
Ачашлама ачи пур,
Хӗпӗртеме арӑмӗ,
Курма-илтме тӑванӗ,
Ҫаксем пурте ялта пур.
Хула урамӗ аслӑ:
Унта-кунта чупаҫҫӗ,
Унта-кунта выляҫҫӗ,
Тарҫа-тӗрҫе манаҫҫӗ,
Ҫын хисепне хумаҫҫӗ.
Калле-малле пуплесен
Вилӗ чӗрӗ курӑнать.
Шухӑшларӑм, каларӑм,
Хам хуҫана макӑртрӑм:
«Ырӑ хуҫам, ан ятла:
Сан патӑнта пурӑнтӑм,
Ялан шанчӑклӑ пултӑм.
Ман малалла ӗмӗт пур:
Киле-ҫурта тавӑрӑнса
Вӑхӑтӗнче авланас,
Ача-пӑчаллӑ пулас.
Хуҫам, сана тавтапуҫ.
Манмӑп ҫӑкӑр-тӑварна.
Киле кайма ҫул-йӗр уҫ:
Тивӗҫлине парса яр,
Кӑмӑлпалах уйрӑлар».
Хуҫа чунӗ хуйхӑрать:
«Ӑҫта каян, Василий,
Юлах, кунтах пурӑн, — тет, —
Хитре сарӑ хӗр тупар,
Сана валли ҫураҫар.
Пурӑнӑр иксӗр кунта
Пысӑк, аслӑ хулара».
Майри шалта макӑрать.
Хуҫа мана мухтаса
Калле-малле уткалать,
Ним тӑваймасть, кускалать,
Эрнелӗхе хӑварать.
Хуҫа ҫине пӑхрӑм та,
Чун хурланчӗ ӑшӑмра.
Хама килех чун туртать.
Тата ман ҫав вӑхӑтрах
Кулянмалли тупӑнать:
Атте вилес пек выртать.
Ун ҫинчен хай паллӑ хӗр
Ман пата ҫыру ҫырать;
Ҫырура юлашкинчен
Ҫакӑн пек сӑмах калать:
«Ваҫли, эсӗ кайӑк пек
Вӑхӑтлӑха салана

Килетĕн те каятăн,
Яла-йыша манатăн.
Сайра хутра ху çинчен
Çыру çырса яратăн.
Аçу чирлĕ вилес пек.
Чунĕ тухса кайиччен
Сана вăл пит курасшăн,
Пиллесе хăварасшăн.
Выртнă çĕрте асăнать:
«Васли хăçан килĕ-ши?
Авлантараймарăмăр,
Ман ĕмĕтлĕ куçăмсем
Ĕмĕрлĕхе сўниччен
Тин кинĕме кураймĕç.
Тантăшĕсем авланчĕç,
Тантăш хĕрсем те кайĕç.
Пĕр Васли тăрса юлĕ.
Çулĕсем иртсе кайĕç», —
Тесе те калаçкалать.
Аçу сана юрататъ.
Аннĕне ху пĕлетĕн:
Вăл саншăн хыпаланать,
Утнă çĕрте асăнать.
Сана чăрмантарасси
Аванах та мар та-ха,
Чĕлхе çине килнĕ чух
Çырса ярас терĕм-ха.
Мана валли хуларан
Пурçăн туттăр илсе кил.
Тата кĕмĕл çĕрĕ ил.
Çынна сиен тăвасси
Аван марне пĕлетĕп.
Килсен аннеме калăп,
Укçа илĕп те тўлĕп.
Сыв пулса тăр, ан хуйхăр:
Аçу вилмех çитмен-ха.
Анчах хулара ан тăр.
Хут илсенех хуçуна
Киле кайма тархасла.
Аçусем сана салам
Çырса яма каларĕç.
Вĕсенчен те, хамран та
Пысăк салам яратăп.
Калама вăтанатăп:
Эпĕ сана тахçанах...
Ан çиллен, ан айăплах...
Юрататăп чунтанах!!.
Кулянас-и, кулас-и,
Хĕпĕртес-и, йĕрес-и?
Ку çырура пурте пур!»

VI

Киле каяс шухăшпа
Кайса килтĕм собора.
Тав турăм çўлти Турра
Хулара пурăннăшăн,
Чипер, таса пулнăшăн.
Атте-анне сывлăхшĕн
Ўке-ўке кĕл турăм.
Малалли ĕмĕтĕмшĕн
Йăлăнса ăслăх ыйтрăм.
Малтан хула хушшинче
Мана çăкăр паракан
Иван ятне асăнтăм.
Анчах вăхăт çук пирки
Курса калаçаймарăм.
Юлашкинчен тав турăм
Хуçапала майрине.
Йĕре-йĕре чуп турăм
Ырă, лайăх çынсене.
Хуçа мана усрарĕ,
Сив сăмах каламарĕ.
Ярасшăн та пулмарĕ,
Анчах татах хулара
Пурăнма чун туртмарĕ.
Вара киле таврăнтăм.
Ик эрнерен аттене
Ырă туса пытартăм.
Çулла, вăрăм кунсенче,
Ним канмасăр ĕçлерĕм.

Кил-çурт тавраш çĕнетме
Каскалакансем кӳтĕм.
Ик-виç уйăх хушшинче
Çурпа килнĕ кайăк пек
Çурт-йĕр туса çитертĕм.
Çуртăм-йĕрĕм пысăк мар:
Урам енче вырăсла
Виç чӳрече юнашар.
Пĕр ампар, вите, сарай,
Выльăх валли аслăк ай.
Тырă пулнă çул пулчĕ,
Пукрав иртсен авлантăм.
Упаçырми ялĕнчи
Салтак Петĕрĕн хĕрне
Татьян йăмăкне илтĕм.
Кĕнекесем илетĕр,
Хăвăр чухласа илĕр.
Татьян камне те пĕлĕр.
Пăхатăп та куратăп —
Сирĕн пит пĕлес килет:
«Сан арăму мĕн ятлă?» —
Тесе ыйтма хăймастăр.
Хăвăр туя пымарăр,
Çавăнпа та пĕлместĕр.
Ман арăма курсассăн
«Анисия Петровна»,
Тесе ятпа чĕнмелле.
Хампа хирĕç пулсассăн,
Ĕçлĕк* хĕррине çĕклĕр,
Кăмăл пулсан, хисеплĕр.
Васли, Васка, кай кунтан
Тесе ĕлĕк калатчĕç.
Итлемесен, хыçалтан
Чышкă та чăмăрлатчĕç.
Иртсе кайрĕ пулмалла
Тăрăхласа куласси.
Çитĕнтĕмĕр пулмалла
Турă савса усрасси.
«Василий Иванович!

* Çĕлĕк.

Килĕр, иртĕр çакăнта,
Ларсах пуплер юнашар,
Тăвансем пек калаçар», —
Тесе халĕ калаççĕ.

VII

Çурт çавăрса çитертĕм.
Ыра çын ятне илтрĕм.
Чипер, лайăх çӳрерĕм,
Ыра çын хĕрне илтĕм.

Сарă кăтра çӳçĕм пур,
Пулса çитнĕ хăмла пек.
Вăльтăртатать, çуталать,
Пур çын пăхать, савăнать.

Тăтăм, кӳлтĕм тур лаша,
Ĕмĕр кĕменччĕ алла,
Вăй-хăватпа тăрăшса
Эпĕ тытрăм тур лаша.

Пукрав иртет, хĕл ларать.
Эпĕ тухрăм тăлăппа.
Кӳлĕмре лашам тăрать,
Çӳретпĕр ырă ятпа.

Пĕлĕш-тантăш пур çĕре
Кайма кам чарĕ пире?
Пирĕн умра усă çул:
Çӳреме пултăр кун-çул.

Ак, авланни икĕ çул.
Манăн ырă Унисçи
Ывăл ача çуратрĕ,
Ятне хутăм Николай.

Пурнăç хуйхи-суйхине
Манассăм çук нихăçан.
Манас марах терĕм те
Çырса хутăм хут çине.

Атте-анне пахчине
Тĕрлĕ йывăççем лартрăм.
Çырла ларать пахчара,
Пиççе çитсен пыл та çу!

Ай Униççи, Турра шан,
Турра шан та мана шан.
Эпир иксĕмĕр пĕрле,
Турă усратăр пире.

Эпир ыррине пĕлсен
Пире Турă пăрахмасть.
Кĕл тăвăпăр ирсерен,
Ĕç ĕçлĕпĕр кунсерен.

Çут çанталăк пит паха,
Анчах çутă тĕнчере
Этем ытларах паха.
Вăл пит ăслă тĕнчере,

Турă панă чунĕ пур.
Мĕн пур малтан вăл паха.
Çын вăл чунĕпе пĕрле
Çӳлти Турра еверлĕ.

Вулăстăри пухăва
Каяс терĕм халăхпа,
Пуху хушшинче тăтăм,
Старшинана суйлантăм.

Шăнкăртатать шăнкăрав,
Çула тăрăх пар лаша
Шăнкăравпа савăнать,
Мана лартса чуптарать.

Ялтан яла çӳретĕп,
Çын пурнăçне пĕлетĕп.
Кам йăваш, кам ĕçчен çын,
Çавă пулать ырă çын.

Тăнсăр, пуççăр кутăн çын
Касак чунне пĕçермĕш.
Хăйĕн пуçне пĕтермĕш.
Нумай халĕ ун пек çын.

Тинкĕлтетет шăнкăрав,
Пуçа шухăшпа ан ав!
Мухтанчăку кирлĕ мар,
Ман мухтанас шухăш мар.

Çулсем, çулăм вăрăм çул,
Ĕмĕр пурăнас кун-çул.
Анана йĕри-тавра
Сухапуçпе утни мар.

Йĕри-тавра ятна сар,
Усал ĕçе пăрахтар,
Çынсене шухăшлаттар,
Тĕттĕмрен çутта кăлар.

Çултан-йĕртен килетĕп,
Киле пырса кĕретĕп,
Пурте мана кĕтеççĕ,
Ачамсем хĕпĕртеççĕ.

Арăм çимĕç хатĕрлет,
Сарлака сĕтел çине
Шурă туттăрпа витет,
Кăмăллă сăмах пуплет.

Шап-шур пуçлă ывăлăм
Упаленсе ман пата
Пырать те ялан вара
Ачашланать аллăмра.

*1912*

## 1914 ÇУЛТА ВĂРÇĂ ТУХСАН ÇАР ÇЫННИ ЮРЛАНĂ ЮРĂСЕМ

Эй, çуратнă çĕрĕм-шывăм,
Эй, аннем, çĕр кăкăрри!
Сан çинчен юрланă юррăм
Юррăмсенчен чи пахи.

Çуркунне, çĕр-шыв типсессĕн,
Халăхпа пĕрле тухам,
Тырă-пулă ĕçĕ хаклă:
Вăхăтра суха тăвам.

Сухине тусассăн, хăвăрт
Тыррине акса сӳрем.
Пусăм тĕлĕнче юрлатăр
Кайăк хăйĕн юррине.

Çĕр çинче çĕр ĕçлекенĕн
Юрăпа чун хĕпĕртет.
Тырă-пулă çĕрĕн-кунĕн
Ăшă хĕвелпе ӳсет.

Улăхсем çинче ӳсеççĕ
Тĕрлĕ тĕслĕ курăксем...
Сывлăмпа, ир, утă çулăп,
Янтрĕç çутă çавасем.

Тыррăма вырса илмешкĕн
Илĕп тухăп çурласем.
Анкартне кӳрсе килмешкĕн
Лартăп сарă çĕмелсем.

Çапăп, сăвăрăп, пуçтарăп
Турă пиллесе парсан.
Эпĕ те вара телейлĕ,
Эпĕ те вара пуян!

Эй, çуратнă çĕрĕм-шывăм,
Эй, аннем, çĕр кăкăрри!
Сан çинчен юрланă юррăм
Юррăмсенчен чи пахи!

Эй аннем, тăван çĕр-шывăм,
Эсĕ тутлăх паракан,
Эй çуратнă çĕрĕм-шывăм,
Эсĕ çав тери аван!

Çĕр çинче ав пурăнатпăр,
Çавăнпа çĕр пит паха.
Вилсен те çĕрех кĕретпĕр...
Ĕмĕрех çĕр-шыв паха.

Эпĕ хам ăçта çуралнă,
Хăш тĕлте çĕр-шывăм пур,
Нихăçан ăна пăрахмăп:
Ун çинче ман пурнăç пур.

Ют çынна ăна параймăп...
Тавлашсан та, вăйăм пур.
Вăйăм çитмĕ — Турă курĕ:
Вăл çĕнтерĕ тăшмана.

Эй юратнă çĕрĕм-шывăм,
Эй аннем, çĕр кăкăрри.
Асăмран сана яраймăп
Турă тунă çĕр-тăпри.

Лăпкă самана тăрсассăн,
Пирĕн пурăнăç аван.
Канлĕ ĕçĕме ĕçлетĕп,
Пиллĕх пултăр Турăран.

Халăхпа пĕрле патшамăр
Кăмăлне кӳрсе тăрса
Хушнă ĕçсене тăватăп
Турăран кун-çул ыйтса.

Пирĕн пурăнăç аванччĕ;
Халĕ хăвăрт пĕр тăшман,
Нимĕç халăхин патшиййĕ,
Пăрчĕ ячĕ пурнăçа.

Утă уйăхин çурриййĕ
Шăрăх вăхăт ĕçлеме.
Шăрăхне-мĕнне пăхмасăр
Ĕç ĕçлеттĕмĕр хĕрсе.

Ним сăмах, сас-чĕв тумасăр
Килчĕ патшаран хыпар:
«Çаррăмсем, часрах тапранăр —
Нимĕç вăрçăпа килет».

Манифест çинче каланă
Вăрçăсем пулни çинчен...
Çар çыннисене чĕнеççĕ
Хăвăртрах вăрçа çитме.

Никамран хăрайми пулнă
Нимĕçсен патши Вильгельм
Пирĕнпе вăрçасшăн пулнă...
Канлĕ пурăнас килмен.

Вăл чее пулса астарнă
Австриянăн патшине.
Лешĕ хăй ăсне çухатнă
Кун халаппине илтсе.

Çын астарнă хыççăн кайнă...
Пĕр пĕчик Сербияна
Вăрçăпа пырса тапратнă
Çĕмĕрсе вăйран яма.

Сербия çĕрне илмешкĕн
Вăйĕ-халĕ çитсенех,
Вăл вара илесшĕн пулнă
Пирĕн çĕрĕн çуррине.

Июль уйăхĕнче сасартăк,
Пĕр кĕтмен чухне, вĕсем
Иккĕшĕ пĕрле пуçарнă
Вăйлă вăрçă пирĕнпе.

Ĕнтĕ халь эпир каятпăр
Вăйлă тăшманпа вăрçма.
Тăвансем, пире ăсатăр
Турăран кун-çул сунса.

Нимĕç çыннисем пит ăслă.
Вăрçă япалисене
Нихăш халăхран та вăйлă
Хатĕрленĕ ăсласа.

Çӳллĕ сывлăшра вĕсенĕн
Вĕçекен цепеллинсем,
Тарăн тинĕс шывĕ айĕн
Çӳрекен лодкăсем пур.

Сывлăшра та, çĕр çинче те,
Шыв çинче, шыв айĕнче
Нимĕçсем вăрçма вĕреннĕ
Çылăхланнă тĕнчере.

Темĕн чухлĕ вăй пулсан та
Çĕнтереймĕç çапах та.
Турă вăйлине пĕтерĕ,
Пиллĕ тӳрĕ чунлине.

Халăхсем, эсир ăнланăр:
Турă пирĕнпе пĕрле.
Пурнăçра ăна ан манăр,
Турă пулăшĕ пире.

Вăрçă ĕçĕ — Турă ĕçĕ.
Турăран иртмелли çук.
Турă мĕн тăвас тесен те
Ун ĕçне пĕлмелли çук.

Çĕр çинче Турра манатпăр
Канлĕ пурнăç курнă чух.
Хурлăхра ăна куратпăр:
Пурнăç унăн аллинче.

Турăран хăват илмесĕр
Тăшмана çĕнтерес çук.
Нимĕçсем вĕсем пит вăйлă,
Хăвăртах парăнас çук.

Турăран пире хăватлăх
Пуласса шанас пулать.
Пирĕн халăх — вăйлă халăх,
Тăшмантан хăрас пулмасть.

Пурсăр та, çынсем, тархаслăр
Ангелсенĕн Туррине,
Ак вăрçа тухса каятпăр:
Турă пулăштăр пире.

Ир тăрсассăн, пит çусассăн,
Урăх ним ĕç тытиччен,
Ăшă кăмăлпа кĕл тăвăр
Турăшсем умне тăрса:

«Ырă Турă! Кĕл тăватпăр:
Сывлăх пар патшамăра.
Ун алли çине яратпăр
Кил-йышри тăван çынна.

Патшапа пĕрле пур халăх,
Сан çине шанса тăрса
Тăшмана çĕнсе пăрахтăр.
Парăнтар тăшмансене!».

Ной вăхăтĕнче çĕр пичĕ
Тарăн шыв айне пулса
Çылăхлă çынна пĕтернĕ,
Çылăх путнă шыв тĕпне.

Халь çак вăхăтра çĕр пичĕ
Çылăхланнă çынсене
Вут хăвачĕпе çунтарĕ,
Пĕтĕç çылăхлă çынсем.

Хальтерех, çынсем, тасалăр:
Турă, çăл, хăтар пире.
Сан çине шанса тăратпăр,
Вилĕмрен хăтар пире.

Вăрçăра хăватлă Турă!
Пулăшса пырсам пире.
Тăшмансем сана ĕненччĕр,
Çĕр-шывна пилле пире.

Ĕлĕк-авалтан пилленĕ
Çĕр-шывна илсе юлма,
Эй, мухтавлă Турă, пулăш,
Ан пăрах çак вăхăтра.

Сывă пусăмпа каятăп
Хам çуралнă çĕр-шывран.
Çамрăк ачасем юлаççĕ,
Ан пăрах, çăл хурлăхран.

Аттепе анне юлаççĕ,
Ав сывлаççĕ арантан.
Арăма пĕччен хĕн килĕ
Ĕçлеме вăй сахалтан.

Эй, Аттемĕр, ырă Турă!
Кун-çулпа пилле мана.
Кил-йышсемшĕн сывă тавăр.
Тăлăх юласран хăтар.

Ялăм-йышăмсем, ан хăрăр,
Сывă пулăр куриччен.
Патшамăрăн çĕрĕ аслă,
Халăх та хăватсăр мар.

Турă пулăшса пырсассăн
Çĕнĕпĕр тăшмансене.
Çĕнтерсе ĕçсем татсассăн
Сывă килĕпĕр киле.

Эй, тăванăмсем, ан манăр
Манăн килĕм-йышăма.
Халь ĕç пăрахсах каятпăр,
Пулăшăр ман кил-йыша.

Пирĕн аслă Русь патшалăх
Çак хăрушă вăхăтра
Тĕрĕс тĕнĕшĕн, патшишĕн,
Чаплă çĕрĕшĕн тăрать.

Тĕрĕс тĕнлĕ Русь патшалăх
Тĕрлĕ халăхсем усрать.
Кирлĕ вăхăтра пур халăх
Пĕр çын пек пĕр ăс тытать.

Ют тăшман вăрçас тесессĕн,
Ун вăйне çĕнме пурте
Пĕр çын пек пĕрле тухаççĕ,
Нихăш халăх та юлмасть.

Ĕнтĕ хамăр та ак халĕ
Тăшмансен вăйне çĕнме
Васкасах тухса каятпăр,
Турă пулăштăр пире!

Халь татах сире калатăп:
Манăн çамрăк ачасем
Тăлăха тăрса юлаççĕ,
Йывăр килĕ вĕсене.

Хурлăх тăлăха ашшĕсĕр,
Хурлăх тăлăх арăма:
Иртмĕ пĕр кун та куççульсĕр,
Лăплантарăр вĕсене!

Тырă-пулăма пуçтарăр,
Вырăр халăхпа пĕрле.
Çилленни пулсан, каçарăр,
Манăр халь çак вăхăтра.

Ан хăварăр, ан пăрахăр
Ман асаплă кил-йыша.
Вăрçă час чарăнмасассăн
Таврăнаймăп хăвартра.

Манăн пурнăç ан салантăр
Ялăм-йышăмран кайсан.
Ырă сунакан çын пултăр
Манăн тĕллĕн ял-йышра.

Кĕр те çитĕ, юр та çăвĕ,
Ĕлĕкрен пуян çын мар:
Çĕлĕк-алсисем çук пулĕç
Манăн мĕскĕн ачасен.

Кивĕ пўртĕм ăшăнаймĕ:
Вутă-шанкă хатĕр мар.
Ачамсен тумтир çўхелнĕ,
Аптрĕç хĕл хутра вĕсем.

Авăртса килме вăй çитмĕ
Тыррăма хĕл сиввинче.
Юлашки каллех çитеймĕ
Çĕнĕ тырă куриччен.

Арăм сывă мар, тўсеймĕ
Йывăр килнĕ пурнăçа.
Вăл темле пулсан, мĕн курĕç
Вĕтĕ-шакă ачамсем.

Эй, пур савнă пĕлĕш-тантăш,
Тантăш тăван-пĕтемсем!
Пурсăр та вăй çитнĕ чухлĕ
Çăмăллатăр çĕклемме.

Çу вăхăтĕнче каятăп,
Уй тулли ыраш чухне.
Турă таврăнма калатăр
Аттепе анне хирне.

Çĕрĕм-шывăм пит илемлĕ,
Юрататтăм чунтанах.
Кам пĕлет, килсе кураймăп —
Вилĕп, пĕтĕп вăрçăрах.

Вилсен те пит ан кулянăр,
Чунăм пулĕ тасара.
Кĕлĕре пире ан манăр,
Турă илтĕ юратса.

Тĕрĕс тĕнпеле патшашăн,
Хамăр халăхшăн вилсен,
Çыннăн чунĕ ангелсенĕн
Ĕмĕрхи çуртне кĕрет.

Ĕнтĕ халь тухсах каятăп,
Сывă пулăр, ял-йышсем;
Кил-çуртран кайма пит йывăр,
Ырă сунăр, тăвансем.

Ĕнтĕ халь эпир каятпăр
Юлашки юн пĕтиччен
Хамăр çĕр-шывшăн тăмашкăн...
Турă, çăл асапсенчен!

Эй, хăватлă Туррăм, пулăш
Хамăр çĕр-шывшăн тăма.
Халь çак вăхăтра ман шухăш —
Патшана савăнтарма.

Атьăр, çарăсем, тапранăр,
Çак хăрушă вăхăтра
Юн юхассинчен ан хăрăр,
Хăвăрт пулăр вăрçăра!

Тĕрĕс тĕнлĕ Русь патшалăх
Çак хăрушă вăхăтра
Хăйĕн тĕнĕшĕн, патшишĕн,
Чаплă çĕрĕшĕн тăрать.

Тăшмансем пĕр хăрамасăр,
Вăйĕсем çине шанса,
Нихăш закона тытмасăр
Юн тăкаççĕ вăрçăра.

Пирĕн халăхпа пĕр тĕнлĕ
Сербиясен патнелле
Калама пĕлме çук йышлăн
Ют-тăшман куçса пырать.

Пирĕн майлă, пĕр канашлă
Францияпа Бельгия
Çĕрĕсем çине вăл кĕчĕ
Ним хисепсĕр çаррипе.

Çулĕ тăрăх çунтарать вăл
Мĕн тĕл пулнă ялсене.
Этемсем теме май та çук,
Хăратать вăл пурне те.

Ватă çынсене хĕнет вăл,
Хĕрхенмест ачасене.
Мăшкăл пулнипе пĕтеççĕ
Арăмсем, хĕрачасем.

Тумтирсем сÿсе илеççĕ,
Хăвараççĕ çарамас;
Макăрсан та, йăлăнсан та
Вĕлереççĕ, мĕн тăвас.

Вăтанас, хăрас темеççĕ,
Пĕтереççĕ çынсене.
Çынăнне ним хĕрхенмеççĕ,
Çаратаççĕ мулсене.

Чиркӳсем ҫине переҫҫӗ,
Хӑтсӑр халӑх, нимӗҫсем,
Тупӑран халь хӑрамаҫҫӗ,
Ӳлӗм тӳсӗҫ асапсем.

Нимӗҫсем вӗсем хӑрушӑ:
Пӑхӑнтарнӑ халӑха
Чӑн тӗне пӑрахтараҫҫӗ,
Мантараҫҫӗ чӑнлӑха.

Турӑ тунӑ тӗрлӗ халӑх
Хӑй чӗлхишӗн тӑрӑшать.
Нихӑш халӑх та чӗлхисӗр
Турӑран кун-ҫул курмасть.

Тӗрлӗ халӑх тӗрлӗ тӗслӗ
Чӗлхипе Турра мухтать.
Тӗрӗс тӗнлӗ Русь патшалӑх
Никама хупӑрламасть.

Хамӑра савса пилленӗ
Турӑран кун-ҫул ыйтса
Хамӑр чӗлхепе мухтатпӑр
Эпир те Ҫӳлти Турра.

Нимӗҫ халӑхсен патшийӗ
Нимӗҫле каластарать.
Урӑх нихӑш чӗлхене те
Нимӗн вырӑнне хумасть.

Эй, Россия! Санӑн ирӗк
Хурлӑхрисене ҫӑлма.
Хӳтлӗхсӗррисемшӗн хӳтлӗх
Пулӑн Турӑран ыйтса.

Вӑйсӑр халӑхсем кӗтеҫҫӗ
Эсӗ хӳтлӗх парасса.
Нимӗҫрен ҫӑлма чӗнеҫҫӗ
Сан ҫине шанса тӑрса.

Атьӑр, ҫарӑсем, тапранӑр,
Ҫак хӑрушӑ вӑхӑтра
Юн юхассинчен ан хӑрӑр,
Хӑвӑрт пулӑр вӑрҫӑра.

Тӗрӗс тӗнлӗ Русь патшалӑх
Ҫак хӑрушӑ вӑхӑтра
Хӑйӗн тӗнӗшӗн, патшишӗн,
Чаплӑ ҫӗрӗшӗн тӑрать.

Халӑхсем, эсир ӑнланӑр:
Турӑ пирӗнпе пӗрле.
Курайман тӑшман салантӑр,
Ӗмӗр асӑнтӑр пире.

Пирӗн халӑх — тинӗс хумӗ —
Тӑшмана ҫитсе ҫапать.
Тӑшмансен хӗрӳ вут-хӗмӗ
Русь айне пулса сӳнет.

Хуласем, ялсем ҫунаҫҫӗ
Тӑшмансем пырса кӗрсен.
Ҫунакан вутсем сӳнеҫҫӗ
Пирӗн ҫар пырса ҫитсен.

Эй, Россия! Ҫӗнтеретӗн
Мӑн кӑмӑллӑ тӑшмана,
Хурлӑхрисене ҫӑлатӑн,
Чаплӑ пул ҫанталӑкра!

*1914*

# ТУРĂ ÇИНЧЕН

## I

Эсĕ, Турă, ĕмĕр-ĕмĕр
Çут çанталăкра Пурри.
Эсĕ — Сывлăш, пĕтĕм пĕлĕт,
Пĕтĕм çĕр Санпа тулли.

Пуçланусăр, иртĕнӳсĕр,
Нихăçан та Улшăнми,
Ырă Турă, ĕмĕр-ĕмĕр
Пĕр пекех тăраканни.

Эсĕ, Турă, пĕр хăватлă,
Пĕр-пĕчченлĕ Виçлĕре;
Чăнлăх, çутă, ăслăх Пуçĕ
Эсĕ Виçлĕ Пĕррере.

Вĕçсĕр вăхăтсен çăл куçĕ,
Вĕçсĕр хушăсен хушши,
Ĕмĕр тĕпĕ, ĕмĕр пуçĕ
Санăн ятупа тулли.

Эсĕ, Турă, Пултаруçă,
Пултарма пĕлекенни.
Тĕпсĕр вырăнсем çап-çутă,
Саншăн çук курăнманни.

Аллусем пырса тытмасăр
Çĕр-шыва тăваканни.
Пĕлĕтсем çинчен анмасăр
Пурне те кураканни.

Эсĕ «пулччăр» тенĕ хыççăн
Вăйлă, аслă ангелсем
Пухăнса сана мухтанă,
Ӳтсĕр ырă сывлăшсем.

Шывăн, çĕрĕн, суттăн тĕпĕ
Пуçлану Санран илет.
Çав тĕпрен пур çут çанталăк
Пурăнма кун-çул илет.

Вĕçсĕр-тĕпсĕр çут тĕнченĕн
Тĕпĕ, çийĕ тĕлĕ çук;
Çут çанталăк тăлпĕвийĕн
Тулашне-мĕн тупас çук.

Тапранусăр, хусканусăр,
Ĕмĕртен малтан Пурри,
Чаплă вырăнтан тухмасăр
Çун çанталăкра тулли.

Эсĕ, Турă, çут тĕнченĕн
Ăшĕнче мĕн пуррине
Вăйлă шуçăмра тытатăн
Вăй-хăват Ху пулнипе.

Çăлтăрсем хушшийĕн çĕрĕн
Ĕмĕр йĕрсĕр çул выртать,
Çав çул тăрăх çĕрĕн-кунĕн
Пирĕн çĕр çаврăнать.

Çиçĕм хăвăрт куçнă чухлĕ,
Уйăх-çăлтăр хушшипе
Çутă ангел пĕлĕт витĕр
Хăвăрт кайтăр хăватпа,

Тӳрĕ çул çинчен ан тухтăр,
Ĕмĕр кайтăр пĕр çулпа —
Нихăçан çитсе кураймĕ
Тĕпсĕр пĕлĕт хĕррине.

Çавăн пек пĕлсе пултарнă
Турă аслă тĕнчене.
Турă, тетпĕр, ĕненетпĕр
Çут çанталăк Пуçлăхне.

Турă — вăйĕпе Хăватлăх:
Пурне те тытса тăрать.
Турă — чăн Вăл аслă Пĕлĕм:
Пурне те пĕлсе тăвать.

Эсĕ, Турă, пĕр хăватлă,
Пĕр-пĕчченлĕ Виçлĕре.
Чăнлăх, çутă, ăслăх Пуçĕ
Эсĕ Виçлĕ Пĕррере.

II

Малтанах çĕр тĕссĕр пулнă,
Тĕттĕм тăнă тĕнчере.
Шывсене хăватлă Турă
Тытнă хăй ирĕкĕнче.

Турă «çутă пултăр» тенĕ,
Çутă тухнă тĕнчене.
Çутă, çиçĕм вăйлăланнă...
Типĕ тухнă çĕр çине.

Çутă кун хисеп пуçланнă,
Тĕттĕм çĕр иртсе кайсан.
Каç пулсан, каллех çĕр пулнă,
Вăхăт чарăнса тăман.

Çутă çутăпа пĕрлешнĕ,
Пулнă тăнă çăлтăрсем.
Çăлтăрсем çӳле çĕкленнĕ,
Вырăн илнĕ тĕнчере.

Турă пăхнă та мухтанă
Пĕлĕтри çăлтăрсене.
Çăлтăрсем çинчен Вăл аннă,
Пăхнă пысăк çĕр çине.

Çĕрĕн пичĕ тĕрекленнĕ,
Шыв хумханнă тинĕсре.
Çĕр çинче пур курăк ӳснĕ,
Ӳснĕ тĕрлĕ йывăçсем.

Турă хушнă, çутă тухнă
Виттĕр хĕрнĕ хĕвелтен.
Вăйлă çутипе çутатнă
Вăйлă çăлтăр инçерен.

Уйăха çап-çутă çапнă
Аякран хĕвел çути.
Çавăн пек пулма каланă
Кирлине Пĕлекенни.

Шывсенче китсемпе ишнĕ
Тĕрлĕ тĕслĕ пулăсем.
Сывлăшра пит йышлăн вĕçнĕ
Çунатланнă кайăксем.

«Çĕр çинче тăват ураллă
Выльăх-чĕрлĕх ĕрчесе
Йышлăлантăр», — тенĕ Турă
Ултă кунăн ирхине.

Тинĕс шывĕсем хумханнă
Турă пынă вăхăтра.
Аслă ангелсем Ун умĕн
Куçнă çутăлса тавра.

Хирсене мăн выльăх тухнă
Лăпкă, нӳрĕ ăшăра.
Пурте ыррăн, пит илемлĕн
Тăнă курăнса Турра.

Аслă Турă пĕр хăватлă,
Пĕр-пĕччен лĕ Виçлĕре.
Турă, тетпĕр, ĕненетпĕр
Çут çанталăк Пуçлăхне.

Виçлĕ Турă канашланă
Çӳллĕ вырăна тăрса:
«Çак çĕр пичĕ илемлентĕр,
Ман кăмăлăмпа тулса.

Ёмĕр-ёмĕр пĕрин хыççăн
Тепĕрне те калакан,
Çĕр çинче чи вăйлă ăслă,
Астума пултаракан,

Ёмĕр вилĕмсĕр пĕр чунлă
Хамăр евĕрлĕ этем,
Ирĕк чунлă, ӳтлĕ-юнлă
Пултарар çак тăпраран».

Турă Сывлăшĕ пултарнă
Хĕрлĕ тĕслĕ тăпраран
Пит илемлĕ, вăй-хăватлă,
Ӳтлĕ-шăмăллă çынна.

Турă вĕрнĕ те чунланнă,
Чунлансан Турра курса,
Çын Ăна ӳксе пуççапнă,
Юратушăн тав туса.

Турă çын патне пуçтарнă
Тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхсем.
Сывлăшран та вĕçнĕ аннă
Турă хушнă кайăксем,

Хăй умне çынна тăратнă
Пуринчен те чи мала.
Ырă Турă халавланă
Райăн пурлăхне ăна:

«Тинĕсрен шывсем хăпарччăр
Çумăрпа тĕтре пулма.
Тырă, йывăç çĕр ӳстертĕр
Çĕр çинче çын пурăнма.

Çын, сана савса паратăп
Пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе.
Çĕр çинче асли тăватăп:
Пăх, усра мĕн пуррине.

Халь тата пĕр васкамасăр
Ят парса тух вĕсене,
Йăлине кура ят хурăн,
Ятĕнчен ăсне пĕлме».

Малтанхи çын пĕр манмасăр
Тĕрлĕрен ятсем парсан,
Выльăх-чĕрлĕх васкамасăр
Лăппăн кайнă саланса.

Выльăх, кайăк салансассăн,
Юлнă çын пĕччен райра.
Çĕр çине тĕтре тухсассăн
Пулнă кансĕр пек ăна.

Виçлĕ Турă Хăй каланă:
«Канлĕ мар капла çынна.
Пĕр-пĕччен ăна асаплă,
Кирлĕ пĕр юлташ ăна.

Пур ĕçе пĕрле тумашкăн
Пултарса парар ăна,
Чунĕсем пĕрле пулмашкăн
Ун пайне илсе ама».

Çыннăн ӳчĕ йывăрланнă
Ыйăх килнĕ вăхăтра.
Турă йывăр ыйăх янă
Кирлĕ пулнă хушăра.

Канлĕ ыйăхра çын выртнă.
Ун аякĕ пĕрчинчен
Ырă Турă çын пултарнă
Йывăр ыйăх иртиччен.

Çӳллĕ, çутă çут çанталăк
Пит илемлĕ ăшăра.
Кăнтăр умĕн выльăх, кайăк
Шыв хĕрне тухать райра.

Пит илемлĕ çын вăраннă
Тура янă ыйхинчен.
Куç уçсассăнах çын курнă:
Çын пек иртнĕ умĕнчен.

Çутă ангелсем вăл çыннăн
Пуçĕ тĕлĕнче çӳлте
Савăнса тавра пит йышлăн
Вĕçнĕ пĕр-пĕрне чĕнсе:

«Пирĕн Турă пит мухтавлă!
Хăйĕн вăйлă ăсĕпе
Акă вăл пĕлсе пултарнă
Этемсен тĕп амăшне».

Турă çавăн чух ăс панă
Хăй пултарнă этеме.
Савăнса этем каланă
Турă панă ăсĕпе:

«Ку ман ӳтĕмрен ӳт илнĕ:
Ман аяккăмри шăмма
Манăн Туррăм илме пĕлнĕ
Маншăн пулăшу тума.

Манăн пурăнăçăм çитрĕ:
Малалла тин пĕччен мар.
Куншăн савнă ятăм Ева:
Савăн, «пурăнăç» пулса.

Чĕреме пит çывăх шăммăм
Маншăн арăм пулчĕ ку.
Вăй-хăватăм, пĕтĕм ăшăм
Куншăн йăтрĕ юрату.

Чĕремпе сана юратăп:
Тĕнчере пур этемрен
Аслă амăшĕ пулатăн
Аслă ашшĕпе пĕччен».

Турă пăхнă та мухтанă:
Çĕнĕ çутă тĕнчере
Пит илемлĕ вырăнаçнă
Çăлтăрсем те пĕлĕтре.

Çĕр çинче пурте илемлĕ
Пулнă аслă йĕркере.
Выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк
Хĕпĕртенĕ çимĕçре.

Тĕнчене кирли çитсессĕн
Çĕнĕрен тĕс пултарма,
Ултă кун хисеп иртсессĕн,
Турă чаръннă ĕçре.

Çичĕ кун ăшне кайсассăн,
Канлĕ вырăна ларса
Пурне те пăхса тухсассăн,
«Канăп» тенĕ Турă та.

Турă ĕçĕпе мухтавлă,
Мĕн пурри ун аллинче.
Пурне те пĕлсе пултарнă
Ултă кун хисепĕнче.

III

Икĕ çын райра ĕçленĕ
Вăй-хăват тĕрекленме.
Кунсерен ĕçлес пит килнĕ
Турăран мухтав илтме.

Турă арçынна ят панă
Тăпраранниине пĕлме:
«Эсĕ хĕрлĕ çĕрĕн пайĕ,
Хĕрлĕрен — яту Адам.

Акă, иксĕр аслă пулăр,
Çĕрĕн кăкăрри çинче.
Ырă пулăр, ырă курăр,
Йышлăланăр тĕнчере.

Савӑнса ачаллӑ пулӑр:
Пӑхчӑр ачӑрсем сире.
Пӗр-пӗрне чунтан юратӑр,
Ӗҫлӗр ӗҫӗре пӗрле.

Акӑ Эпӗ рай ӳстертӗм,
Тӗрлӗ йывӑҫсем чӗртсе.
Юратса сире каларӑм
Тӗппипе ав пӗлтерсе.

Сывӑ, тутӑ пулӑр, ҫийӗр
Йывӑҫ, курӑк ҫимӗҫне.
Ҫакӑ йывӑҫран вӑй илӗр,
Вӑйӑр пӗтмӗ ӗмӗрте.

Сывлӑх кирлӗ пулӗ, ҫийӗр
Чӗрӗлӗх йывӑҫҫинчен.
Выльӑх, кайӑк пек пӗтместӗр,
Уйрӑм пулӑр вӗсенчен.

Ҫӗр ҫинче вӗсем ҫӳреҫҫӗ
«Пулччӑр» тенӗ тивлетпе.
Сыхланма вӗсем пӗлеҫҫӗ
Систерӳ систернипе.

Юратса сире паратӑп
Усӑ ирӗк пиллесе:
Чунӑрсем Манран пай илчӗҫ,
Вырӑнаҫрӗҫ ӑшӑра.

Чунӑрсем сире пӗлтерӗҫ
Ырӑ ирӗк пуррине!
Аслӑ ирӗкпе пӗрлешӗр
Хӑвӑра Пултарнипе.

Чӗрӗлӗх йывӑҫҫи ҫӑлӗ
Чир-чӗрпе вилӗмрен те.
Астӑвӑр, тата ҫак ҫӳллӗ
Йывӑҫ хӑйшӗн хитре те,

Ырӑпа усал мӗн тӗслӗ,
Ун ҫинчен вӑл пӗлтерет.
Унӑн ҫимӗҫне ан ҫийӗр,
Ҫисенех сире йӗртет.

Ҫинӗ кунӗнчех вилетӗр,
Систерсе калам сире.
Унӑнне ҫисен чирлетӗр,
Хурлӑх пулӗ иксӗре.

Урӑх йывӑҫ, курӑксенӗн
Ҫимӗҫне пухса илсе
Ҫийӗр, ҫиессӳ килсессӗн,
Пӗр-пӗринпе валеҫсе...».

Турӑ курӑнса калаҫнӑ
Малтанхи ҫынсемпеле.
Ҫынсем те Ӑна юратнӑ
Ӑшӑ кӑмӑл вӑйӗпе.

Ирхине хӗвел тухсассӑн,
Евӑпа Адам райра,
Ангелсем юрланӑ хыҫҫӑн,
Алӑ ҫупнӑ юрӑра.

Юрласа вӗсем мухтанӑ
Ҫут ҫанталӑк Пуҫлӑхне.
Савӑнса пит аслӑланӑ
Ӗмӗр-ӗмӗр Пуррине:

«Эсӗ, Турӑ, пит мухтавлӑ
Ҫывхарма ҫук ҫуттӑнта.
Ангелсем Сана мухтаҫҫӗ,
Ҫутӑран ҫутта тухса.

Эсӗ, Турӑ, ӗмӗр тӗпӗ
Пулаччен малтан Пурри.
Эсӗ — Сывлӑш, пӗлӗтпе ҫӗр
Сан хӑватупа тулли.

Каç пулса хĕвел ансассăн,
Çăлтăрсем çӳлте хитре.
Ир хитре хĕвел тухсассăн,
Пит илемлĕ тĕнчере.

Йывăççем çинче ӳсеççĕ
Тĕрлĕ тутлă çимĕçсем.
Улăхсем çинче пиçеççĕ
Пыл пек тутлă çырласем.

Кайăксем вĕçсе çӳреççĕ,
Тĕрлĕ юрă юрласа.
Савăнса пурте мухтаççĕ
Вĕсем те çӳлти Турра.

Çут тĕнче çине пăхатпăр:
Пĕлтерсе тăрать Сана.
Юратса Сана мухтатпăр,
Юратушăн тав туса.

Тĕнчере пире усратăн
Ăшă кăмăлпа пăхса.
Пурăнма кун-çул паратăн
Сывлăшна пире парса...».

Савăнса çапла юрланă
Малтанхи çынсем райра.
Вĕсемпе пĕрлех пур кайăк
Хĕпĕртенĕ юрăра.

Выльăх-чĕрлĕх кунĕн-çĕрĕн
Тутă пулнă хирсенче.
Тĕрлĕ курăк, тĕрлĕ çимĕç
Илемленнĕ çĕр çинче.

Çыннăн чунĕ хĕпĕртенĕ
Çут тĕнче çине пăхса.
Турă Хăй çинчен пĕлтернĕ
Ырă шухăшсем парса.

Ĕç ĕçленĕ чух Адамăн,
Ырă шухăш пулнăран,
Вăй-хăват ĕç пăрахасшăн
Йăлăхса чакса пыман,

Евапа пĕрле çӳренĕ
Аслă райăн пахчинче.
Турă хушнине ĕçленĕ,
Пĕр ĕç те кая юлман.

Ева та пĕрлех, Адамăн
Кăмăлне савăнтарса,
Яланах савса ĕçленĕ
Ĕçлеме пит юратса.

Ева кăмăлĕ хĕвелĕн
Ăшшинчен те ытларах
Ăшăтса тăма пултарнă
Çыннăн ăшă чĕрине.

Çавăнпа Адам калană
Иртмелле мар сăмахне:
«Çын хăй амăшне хăварĕ,
Пымĕ ашшĕ çывăхне, —

Арăмне мала вăл хурĕ
Ашшĕпе амăшĕнчен,
Уйăрмалла мар пĕрлешĕ
Чун чунпа пĕр пуличчен.

Турă тĕплĕ пĕрлештернĕ
Арлă-арăма никам
Ĕмĕрте сӳтсе ан явтăр,
Çын юраттăр кăмăлтан».

Çыннăн чунĕ хĕпĕртенĕ
Арăм ыррине курса.
Иккĕш пĕр çын пек çӳренĕ
Райăн пурлăхне пăхса.

IV

Çĕр çинче пур выльăх-чĕрлĕх
Хушшинче те анчах мар,
Ăсĕпе пур тилĕ, кашкăр,
Кайăкран мала çĕлен.

Еваран пĕр хăрамасăр,
Яланах ун умĕнче
Ниçталла та пĕр каймасăр,
Канлĕ выртнă çĕр çинче.

Евана Адам каланă:
«Çимĕçсем патне кайсан,
Пысăк, çӳллĕ йывăç курăн,
Çимĕçне ан çи, ан ман.

Юраманнине пĕлетĕн:
Иксĕмĕр пĕрлех илтсе.
«Çисенех чирлетĕр», терĕ
Турă иксĕмĕре те».

Çак сăмахсене илтсессĕн,
Çĕлене илсе шуйттан,
Йывăç ăçтине пĕлсессĕн,
Кайнă пăхнă çывăхран.

Ун патне вăл паллă тунă
Ева чарăнса пăхма.
Çĕлентен хăй ирĕк ыйтнă
Ун ăшне кĕрсе ларма.

Çĕлентен ыйтса пĕлсессĕн,
Ун ăшне кĕрсе ларса,
Ева иртнине сиссессĕн,
Çĕлене калаçтарса.

Евана те тĕлĕнтернĕ
Çĕлене итлеттерсе.
Евана çĕлен каланă:
«Мĕншĕн Турă çилленсе,

Пĕр йывăçăн çимĕçне те
Ан çийĕр эсир тесе,
Турă сирĕншĕн хĕрхеннĕ
Çакăн пек çимĕçсене?»

Ева тĕлĕнсе каланă,
Çĕлентен илтсе тăрса:
«Турă пирĕншĕн пит ырă:
Çак рая пире парса.

Тĕрлĕ çимĕçсем çиетпĕр;
Çакăнне çиме хушман:
Ку ырра та, усала та
Пĕлтерет, çисе пăхман.

Унăнне çисен вилетĕр,
Терĕ Туррăмăр пире».
Евана çĕлен каланă:
«Турă тĕрĕс каламан:

Çакăн пек илемлĕ çимĕç
Çиекен çын ăсланса
Турăпа вăл хире-хирĕç
Вырăн илĕ суйласа.

Çын вăл хăй те турă пулĕ.
Эсĕ çи халех татса».
«Адамран мана ят пулĕ», —
Тенĕ Ева хăраса.

«Иксĕр те татса çисессĕн,
Турăсем пулса тăрса,
Сирĕн пĕлессӳ килсессĕн —
Пĕлĕр ырă-усала...»

Çĕлентен çавна илтсессĕн,
Ева йывăç çинелле
Пăхнă та вара пĕлесшĕн
Пулнă кайнă ăшĕнче.

«Ева мĕншĕн килеймерĕ
Хальчченех» тесе Адам
Ăшĕнче вăл шухăшланă:
«Шырама кайса пăхам.

Акă унăн çĕнĕ йĕрĕ:
Çак йĕр тăрăхах утам», —
Тенĕ те вара вăл утнă
«Евана тупам» тесе.

Курăк çийĕн Ева йĕрĕ
Кукăр-макăр çулсемпе
Адама илсе çитернĕ
Ева тăнă вырăна.

Ева Адама çитернĕ
Хăй те çинĕ çимĕçрен.
Иккĕш те пит чĕтĕренĕ,
Хăраса куç хуралсан.

Пĕр-пĕрин çине пăхсассăн,
Юрамассине курса,
Çак кунччен çук пулнă намăс
Вут пек хĕртнĕ çунтарса.

«Турă курĕ, намăс пулĕ,
Йывăç хушшине ларар,
Смоква йывăç хӳтĕ пулĕ,
Иккĕн хăвăрт пытанар», —

Тенĕ те вĕсем пытаннă,
Вăтанса кайса пĕтсе.
Чĕрисем сиксе хăранă,
Турă килĕ-мĕн тесе.

«Турă урăх килейминччĕ
Пирĕнпе курăнăçма,
Пĕлĕт ун тĕлне тăринччĕ
Иккĕн тĕплĕ пытанма», —

Тенĕ Ева, хăй хăтланнă
Çулçăран тумтир тума.
«Эпĕ, Ева, пит хăратăп
Ун умне тухса тăма.

Куçăм уçăлчĕ, туятăп:
Манăн чунăм канлĕ мар.
Турă ыйтсанах калатăп:
Эсĕ, Ева, ырă мар.

Паянхишĕн ăшăм-чиккĕм
Ĕмĕр-ĕмĕр хуйхăрса
Çунмаллах пулать: чăн пĕтрĕм,
Турă ирĕкне пăсса».

Икĕ çын çапла телейсĕр
Пулнă тăнă çылăхпа.
Çĕлене пĕлсе çитмесĕр,
Улталаннăултавпа.

Каç пулса çитсессĕн сывлăш
Сулхăнланнă çĕр çинче.
Чул пек йывăр пулнă шухăш
Этемсен ăшĕсенче.

V

Турă çынсене хĕрхеннĕ.
Хăй Вăл çӳллĕ вырăнтан
Çĕр çине анса та çитнĕ,
Çын кĕтессине пăхман.

«Юратса пултарнă çыннăм,
Этемсен асли Адам!
Эсĕ халь ăçта тăратăн?» —
Тенĕ Турă, хăратман.

Çын тумтирсĕртен вăтаннă:
«Эпĕ, Туррăм, илтрĕм те
Сассунтан хытах хăрарăм,
Халь пытантăм хăраса.

Сан умна тухса тăмашкăн
Эпĕ халĕ çарамас». —
«Эсĕ ун çинчен пĕлмешкĕн
Кам сана килсе калас?

Ан çи, çыннăм, асту тенĕ
Сассăма илтмерĕн-им?
Пĕр сăмахăма тытмасăр
Вăтансах каймарăн-им?

Ăраснах сана каларăм
Пĕтĕм ангел умĕнче.
Эй, Адам, Хам панă пайăм
Санăн ырă чĕрӳнте.

Чунуна таса тытмашкăн
Паллă патăм ятарса,
Яланах мана пĕлмешкĕн
Хушрăм пĕр сăмахăмпа.

Ырăран сĕм-уйрăм, йывăр,
Тӳсме те çук хурлăха
Тӳсмелле эсир ан пулăр,
Терĕм, астăватăр-и?

Усалтан сире сыхласшăн
Йывăç тăрăх астума,
Уçă ирĕкре тытасшăн
Паллă патăм ятарса.

Райăн варринче каларăм,
Пысăк йывăç кăтартса:
Çакăн çимĕçне ан çиййĕр,
Астумалăх ăс парса,

Туррăра пĕлсе юратăр.
Ирĕкрен тухса çини
Иксĕре те чирлеттерĕ,
Терĕм, астăватăр-и?

Ырă ирĕкре тăмарăр,
Ултавпа улталанса.
Ман сăмахăма тытмарăр,
Усала час йышăнса.

Ĕнтĕ халь эсир пĕлетĕр:
Ман сăмахăмра тăни
Иксĕршĕн пулатчĕ ĕмĕр
Савăнса çеç пурăнни.

Ан çи, терĕм, астăватăн:
Эсĕ халь унтан çисен,
Ман ирĕкĕмрен тухсассăн
Пултăн намăс пĕлекен.

Халь ав çирĕр, халь пĕлетĕр
Ырра та, усала та.
Ĕнтĕ малалла чирлетĕр,
Канлĕх пĕтрĕ ăшăрта», —

Тенĕ Турă, ӳкĕтленĕ
Çылăхран çăлас тесе.
Çыннăн ăсĕ кĕскеленнĕ,
Юраманнине çисе.

Вăл тӳрех сăлтав шыранă
Айăпне сулса яма.
«Эсĕ, Турă, ху пултарнă
Арăм астарчĕ мана.

Арăм хушрĕ, эпĕ çирĕм», —
Тенĕ ӳкĕнме манса.
Ева: «Эпĕ те ĕнентĕм,
Çĕлене пăхса тăрса,

Çĕленех мана астарчĕ», —
Тенĕ вăл та тарăхса.
Çавăн чух илсе пыртарнă
Турă ангелне ярса

Çĕлене тытса пыртарнă
Тӳрĕ сут умне тăма.
Адама Тӳре каланă:
Эсĕ — çĕр, çĕрех кĕрсе

Ӳтӳпе тăпрах пулатăн,
Тăпраран илсе сана.
Сăн-сăпат çине тар тухĕ
Çĕрĕн йывăр ĕçĕпе.

Асаппа çапла тăранăн
Вилĕм кунĕ киличчен».
Евана Тӳре каланă:
«Вăйă-халă çитиччен

Хуйхăрмалăх хуйхă хушăп:
Мĕн ку пулчĕ сан ĕçӳ?
Хуйхăрсах çеç сывлаттарăп,
Хуйхă çĕклĕ ăш-чиккӳ.

Йывăр чирлĕн, асапланăн
Ывăл-хĕр курас тесе.
Кирек-мĕн илесшĕн ыйтăн
Упăшку умне тăрса.

Хăйĕн куçĕнчен пăхтарĕ
Саншăн пуçлăхра тăрса», —
Тенĕ Турă, айăпланă
Çылăхланнă Евана.

Çĕлене Тӳре каланă
Йывăр пурăнăç сĕнсе:
«Çĕр çинче çĕлен ылханлă.
Астаракана ерсе

Çынсене вăл улталанă.
Ылхансах калам сана:
Выльăх-чĕрлĕхрен сĕм-уйрăм
Çӳрĕн хырăмпа шуса.

Çĕр çинче сан ĕмĕр ирттĕр
Выçăхса тăпра çисе.
Çынсене çăлас кун çиттĕр,
Ун чухне сана çыхса

Арăм ывăлĕ пĕтерĕ,
Улталакана çĕнсе».
Çыннăн чунĕ хĕпĕртенĕ
Çак сăмахсене илтсе.

«Тавлашуллă пулăр иксĕр
Çав кунччен çак тĕнчере.
Эсĕ ирсĕртен çын пĕлтĕр
Хăйшĕн сыхлă пурăнма.

Арăм йăхĕ çăлăнасшăн
Ман ирĕкĕме пĕлсе,
Çĕрĕн-кунăн сыхă тăрĕ
Çын çӳренине сиссе,

Эсĕ ху вăйна пĕлесшĕн
Çӳрĕн вăрçă кăларса.
Уринчен сăхса илесшĕн
Пĕтĕм çын айне пулса.

Вăхăт çитĕ, çын çуралĕ
Çакă арăм йăхĕнче.
Улталакантан Вăл çăлĕ,
Çын тасалĕ тĕнчере.

Ун чухне сан пуçă пĕтĕ
Чăнлăх çутăлса килсен.
Ултаву сан ĕмĕр пымĕ.
Çăлăнас кунсем çитсен,

Çын тасалĕ, вăл сыхланĕ
Çылăх хыççăн каясран.
Ĕнтĕ халь эсир тухатăр,
Кăларатăп райăмран», —

Тенĕ Турă. Вăл кăларнă
Вĕсене райран хире.
Турă çынсене каланă:
«Çимĕç тăвăр çĕр çинче.

Ман сăмахăма ан манăр,
Çăмăл заповедь сире:
Ăсăрпа ан пысăкланăр.
Пиллĕхпе тивлет сире.

Тырă-пулă акăр, пухăр;
Пăхăр выльăх-чĕрлĕхе.
Ĕмĕт илĕр, канлĕх кĕтĕр,
Парнесем пусса кӳрсе,

Пĕлĕтрен çăлăнăç кĕтĕр.
Халь татах калам сире:
«Çылăхлантăр та, чирлетĕр
Çĕрĕн йывăр ĕçĕпе.

Çыншăн çĕр те ырханланчĕ,
Йывăр çылăх çĕклесе», —
Тенĕ те вара çĕкленнĕ
Турă пĕлĕтсем çине.

Турă рай умне тăратнă
Херувима хĕç парса:
«Çылăхланнă çын ан кĕтĕр», —
Тенĕ сыхлама хушса.

VI

Ырă ангелтан çын ыйтнă
Ĕç мĕнле пулни çинчен.
Ырă сывлăш лăплантарнă
Адама пур хуйхинчен.

Çын хăй çылăхне пĕчченĕн
Туманни çинчен пĕлсе,
Çутă сывлăш этемсенĕн
Йывăр хуйхине сирсе,

Райăн алăкне сыхланă
Адама сăмах хушса.
Çын та чунĕпе лăпланнă
Çутă ангела курса.

Ăшă кăмăлпа каланă
Ангел Адама чĕнсе.
Çын ăна чунтан итленĕ
Илтнинчен шăп тĕлĕнсе.

«Çутă çăлтăрсем пулманччĕ,
Астăватăн, тĕнчере.
Пĕтĕм тĕнчипе тăратчĕ
Виттĕрех çăра тĕтре.

Çавăн чух пĕр аслă ангел
Мăн кăмăлланса кайса,
Хăвăртах пĕр çутă ангел
Ушкăнĕсене пухса:

«Сирĕн туррăр — эпĕ», — терĕ,
Турă пек пулам тесе.
Çав ĕç тăрăх тавлашуллă
Вăрçăсем вăл кăларса,

Эпĕ ырă, çутă пулнă
Хисепрен тухса кайса,
Турăран та хăрамарĕ.
Аслă ангелпа пĕрле

Пирĕнтен пĕр вăтанмасăр
Хирĕçех тăрас тесе,
Çутăран тухса хуралчĕç
Мăн кăмăллă ангелсем.

Турă çавсене ылханчĕ.
Халĕ вĕсем тамăкра
Ĕмĕр-ĕмĕр чарăнмасăр
Кĕрлекен шĕл кăварпа

Ĕҫĕсемшĕн шăранаҫҫĕ,
Вĕҫĕмсĕр хĕн-асаппа
Турăпа халь тавлашаҫҫĕ
Вăл хăватлине манса.

Тамăкра вĕсем ăс тунă
Ҫынсене те пĕтерме,
Йĕрлесе вĕсем ҫул тупнă
Ҫĕр ҫине ҫитсе кĕме.

Турă ҫиҫĕмпе пĕтерĕ
Тесе те тăман вĕсем.
Хĕвелтен иртсе килсессĕн
Ҫитнĕ ҫĕр ҫине вĕсем.

Ҫĕр ҫинче сире курсассăн
Пĕтерес сире тесе,
Каҫ пулса хĕвел ансассăн
Канашланă ҫĕрĕпе.

Усалланнă аслă сывлăш
Иксĕр сывăрнă ҫĕре
Ырă ангелсенчен вăрттăн
Вырăнаҫнă сывăха.

Ир тăрсан, Адам, ал патăн
Хăвăн савнă арăмна,
Юнашар унпа шăп тăтăн
Турăран кун-ҫул ыйтма.

Иксĕр Туррăн ĕҫĕсемшĕн
Савăнса юрланă чух
Тĕссĕр сывлăш пĕр-пĕчченĕн
Асапланнă нумайччен.

«Ҫынсем те Турра мухтаҫҫĕ
Ырă пурăнăҫ курса,
Кусене ман улталасчĕ», —
Тенĕ вăл хăй ăшĕнче.

Усалланнă вăйлă сывлăш
Иксĕре те пĕтерме
Ҫĕлене суйса вĕрентнĕ
Евана сăмах чĕнме.

Иксĕр ҫылăха кĕрсессĕн,
Вăл сире начарлатса
Сирĕн ăсăра чакарчĕ:
Мантăр халĕ савăнма.

Туррăн ырăлăх хисепсĕр,
Каҫару унтан ыйтсан,
Туррăн ирĕкĕ ҫитсессĕн,
Ҫăлăнатăр ҫĕлентен.

Турă ырă, мĕн пур ырă
Иксĕлми тулли тăрать.
Асапран тухма ҫул шырăр.
Усалтан Вăл хăтарать.

Каҫармасть тесе ан калăр,
Ĕненсе унтан ыйтсан,
Ыйтнине парса Вăл ҫăлĕ
Ҫылăх сыхнă сыхăран.

Туррăн ĕҫĕ ĕмĕр-ĕмĕр
Тĕнчере пулса пырать.
Ҫав ĕҫ тăрăх ĕмĕр-ĕмĕр
Мĕн пурри тулли тăрать.

Виҫлĕ Турă канашланă
Ҫĕр тăвас тĕле ҫитсен:
«Ҫĕр ҫинче ҫын ҫылăхланĕ,
Ырăлăхăм ĕмĕртен.

Ҫылăхлансан та хĕрхенĕп:
Пĕтмĕ ҫын вăл тĕлĕшрен.
Ҫăлăнмалăх вăйĕ ҫитмĕ —
Хам ăна ҫăлса илем», —

Тенĕ Ывăл Турă. Ашшĕ
Пăхнă Ун çине:
«Ывăлăм, Сана саватăп.
Юрату сан нумайран

Юратса çынна çăлатăн.
Савнă Ывăлăм, сана
Тĕнчене çăлма яратăп;
Халь пултарăпăр çынна», —

Тенĕ Турă. Вăл пултарнă
Хăйĕн евĕрлĕ сана.
Санăн чун санра хăй тĕллĕн
Пулăнса çапла пулман.

Сывлăш Турă чунлантарнă,
Тăпраран сана тусан.
Турă вĕрнĕ те, чунланнă,
Чунлансан, Турра курса

Çавăнтах ӳксе пуççапрăн
Телейлишĕн савăнса.
Сан патна Вăл выльăх-чĕрлĕх
Ят пама пухса пырсан,

Эсĕ ху пек тĕс тупмарăн,
Пултăн пĕр-пĕччен райра.
Йывăр ыйхăра сисмерĕн
Ева пулнă вăхăта...».

Херувим нумай калаçнă
Адама лăплантарса.
Вăхăт иртнĕ, ĕмĕр тулнă
Çын ачаллă пуличчен.

VII

Ева ывăл-хĕр çуратнă
Упăшкишĕн савăнса.
Çĕр çинче этем ĕрченĕ
Турă тунă мăшăртан.

Аслă ывăл çуралсассăн,
«Каин» ятлă пул тесе,
Çын ăна çапла ят панă
Савăнтарĕ вăл тесе.

Каин çыншăн савăнмалăх
Ăшă кăмăл палăртман.
Çавăнпа Адам ун хыççăн
Савăнтарнă ывăлнех

«Авель ятлă пултăр пулĕ», —
Тенĕ пурнăç ăнманран.
«Аслă ывăл çĕр сухалĕ,
Пуйĕ тырă-пулăран,

Кĕçĕнни кĕтсе çӳретĕр,
Выльăх-чĕрлĕх çитерсе», —
Тенĕ те çын ĕмĕтленнĕ
Ачисем çитĕнессе.

Кĕркунне çын хĕпĕртенĕ
Тырă-пулă нумайран.
Выльăхсем алла вĕреннĕ
Çĕрĕн-кунĕн пăхнăран.

Çавăнпа çынсем тав тунă
Парнесем кӳрсе Турра.
Каин çеç пĕр тăрăшмасăр
Кӳркеленĕ парнине.

«Çунтарса парне кӳмешкĕн
Хĕрхенетĕп тыррăма.
Йăлине туса илмешкĕн
Хушăп хамăн шăллăма», —

Тенĕ Каин, чăрмакланнă
Хытă кăмăл йăлипе.
Мĕншĕн кӳнине вăл маннă
Хăйĕн хытнă чĕрипе.

Авель: «Туррăма кĕл тăвăп.
Çăлаканăма кĕтсе
Ырă парнесем çунтарăп», —
Тенĕ çăлăнас тесе.

Турă çавăнпа юратнă
Ырă кăмăллă çынна.
Парнерен çӳле хăпарнă
Тĕтĕм пĕлĕт патнелле.

Каин тарăхса çунтарнă
Сивĕ кăмăл парнине.
Парнерен тухса саланнă
Хăтсăр тĕтĕм çĕр çине.

Çавăнпа вăл пит çилленнĕ
Хăйĕн шăллĕ Авеле.
«Вĕлерем», тесе вăл чĕннĕ
Пушă, сивĕ хирелле.

Ӳт-юн вăйĕ çылăх хыççăн,
Ырă ĕçшĕн иксĕнсе,
Ӳт кĕленине тăвасшăн
Вайсăрлатнă пуç-ăсне.

Çыннăн кăмăл çылăхланнă
Тăтăш çылăх тунипе.
Ĕлĕк ыррине çын маннă
Шухăш хыççăн кайнипе.

Ырă ĕçшĕн вăй сахал пек,
Тăвасах та çук ăна.
Тăрăшсан та пулас çук пек,
Усалли пырать патна.

Каин Авеле вĕлернĕ
Çылăхпа Турра манса.
Турă Каина систернĕ
Пĕлĕтрен сас кăларса.

Ӳкĕнме Вăл май та панă.
Ӳкĕнмен çын макăрса.
Уншăн Каина ылханнă
Асаппа хĕн-хур парса.

Каин ашшĕйĕн, Адамăн,
Ачисемшĕн хуйхăрса,
Хăй те çылăха кĕнишĕн
Чĕркуççи çине тăрса

Макăрма кун нумайланнă.
Савăнмалăх кун юлман.
Евапа ялан кĕл тунă,
Кĕл тумасăр сывламан.

«Канăç» кунĕ ĕç тытмасăр,
Рай тĕлне пыра-пыра,
Нумайччен пĕр чарăнмасăр
Тархасланă вăл Турра:

«Эй, Аттемĕр, Ырă Турă!
Каçарсам мана, çынна.
Тархасланă кĕллĕм çиттĕр,
Кăтартсам ырăлăхна.

Тĕнчене пăхса усратăн,
Мĕн пурри пурте Санран.
Пурне те тӳрех куратăн.
Пытару-мĕн çук Санран.

Чунтанах Сана калатăп:
Кĕллĕме илт пĕлĕтрен.
Аллăма çӳле çĕклетĕп,
Юратса пăх ман çие.

Аслă пек пуласшăн пултăм
Хамăн мĕскĕн пуçăмпа.
Санпа та тан пулас терĕм
Мăн кăмăллă шухăшпа.

Çавăн пек пулса хурларăм
Санăн аслă хăватна.
Сăмахна тытса тăмарăм,
Хăрамарăм ятăнтан.

Эй, Аттемĕр, хисеплентĕр
Сан яту çак çĕр çинче.
Сан патшалăх тĕреклентĕр,
Ху пăхса тăр çынсене.

Сан ирĕкĕнтен ан тухтăр
Çын этем ушкăнĕнче.
Çутă ангел пек çын тыттăр
Ырă ирĕк çĕр çинче.

Сан сăмахăнта тăмасăр
Шухăш хыççăн кайнипе,
Сиентен пĕр хăрамасăр
Пĕтрĕм çимĕç çинипе.

Ĕнтĕ Ху халь каласа тăр
Эпĕ мĕн çиессине.
Çимĕç пултăр, вырăнаçтăр
Сăмаху ман чĕрене.

Чунăм çурчĕ тасалинччĕ
Каçару тивлечĕпе.
Чунăм тасалса пыринччĕ
Йăлăнса кĕл тунипе.

Çылăха кĕме май пулчĕ,
Çылăхлантăм ултавпа.
Çылăх çурчĕ пулмăнинччĕ,
Çылăха ан кӳрт мана.

Хăвату мана çăлинччĕ.
Сыхлама яр ангелна.
Ангел хĕçĕпе хăтарччĕ.
Аякка тарт усала.

Эсĕ, Турă, пит мухтавлă:
Хăвату Сан ĕмĕртен.
Ху пĕлсе пире пултарнă:
Ĕмĕр-ĕмĕрех хĕрхен.

Чунăм, чунăм, ӳкĕнме пĕл,
Ӳтĕме çăл чирлесрен.
Тӳрĕ пурăнма тивлет ил,
Сыхланса тăр ирсĕртен», —

Тенĕ çын, хăйне хăй тытнă
Ырă, лăпкă шухăшра.
Чунĕ кĕлĕпе лăпланнă
Йывăр хурлăх пурнăçра.

Авель вырăнне Адамăн
Сиф çуралнă çĕр çине.
Сиф вăл Турă çынни пулнă:
Тӳрĕ тытнă ĕмĕрне.

Ырă çыннăн йăхĕ ырă,
Турă умĕнче таса.
Çавăнпа унтан ĕрченĕ
Йăхĕнчен пĕр çын Энох,

Турă умĕнче çӳренĕ,
Ырă пулнă яланах.
Тасаран вăл чĕррĕн кĕнĕ
Пĕлĕт алăкне уçса.

Уншăн Турă та мухтавлă,
Вăл савать таса çынна.
Турă ку ĕçпе кăтартнă
Ĕмĕр пурăнăç çинчен.

VIII

Чун тумтирĕ — ӳт кивелнĕ,
Çылăхпа вăйсăрлансан.
Вилмеллех Адам чирленĕ,
Тăхăр çĕр çул пурăнсан.

Евапа пĕрлех вăл вилнĕ
Ырă, канлĕх çук çĕрте
Çылăха кĕнишĕн йĕнĕ
Тыткăнлăх çĕрте вĕсем.

«Çутă вырăна тухасчĕ,
Кансĕр вырăнтан тухса.
Çăлакан Турра курасчĕ», —
Тенĕ ĕмĕр хуйхăрса.

Çĕр çинче йăх çирĕп юлнă
Турă тунă мăшăртан,
Вăрăм ĕмĕрлĕ çуралнă
Сывлăх вăйлă пулнăран.

Шывăн куçĕ пăсăлсассăн,
Шыв турачĕ пăсăлать.
Йывăç тымартан хăрсассăн,
Турат та айăпланать.

Çавăн майлă çылăх вăйĕ
Адамран куçса килет.
Сыпăк-сыпăкран пĕр вĕçĕм
Çылăх çын çине сикет.

Çыннăн йăхĕ вăйсăрланнă
Тăтăш çылăх тунипе.
Уншăн вăрăм ĕмĕр чакнă
Йывăр çылăх пуснипе.

Пайтахран йăх пит йышланнă
Арлă-арăмлă пулса.
Этемсем вара саланнă
Çĕнĕ вырăнсем тупса.

Саланса кайсан çын йăхĕ
Пĕр-пĕрин çине пăхса,
Пĕтĕмпех Турра та маннă
Ирсĕр çылăхсем туса.

Турă çавăнпа каланă
Пĕлĕтрен çĕре пăхса:
«Çĕрĕн пичĕ йывăрланчĕ
Ирсĕр çылăхпа тулса.

Çын хăйне вăйсăрлантарчĕ
Аскăн ĕçĕпе асса.
Пĕтĕмпех çилле тултарчĕ
Тĕрлĕ çылăхсем туса», —

Тенĕ Турă. Вăл шыранă
Ырă çын, çын хушшинче.
Ырă, шанчăклă çын тупнă
Сиф ăрăвĕнчи Ноя.

Турă хушнă тăрăх Нойăн
Халăх варрине тăрса,
Çĕрĕн-кунĕн, пит хăватлăн,
Çутă çиçĕм пек пулса,

Вĕрентсе тăма вăй пулнă
Ырă пурăнăç çинчен.
Ун сăмахĕнчен çын кулнă.
Пурте кайнă патĕнчен.

Çĕр те çирĕм çул иртнерĕ
Ной чунтан ўкĕтлесе.
Халăх ун çине çилленнĕ:
«Канлĕх çук санран», — тесе.

Ной вара пĕр васкамасăр,
Турă ăслăх панипе,
Пысăк, аслă кимĕ тунă
Хăйĕн ырă йышĕпе.

«Çăлăнма çакна тăватăп»,
Тесенех унтан çынсем
Ĕненмесĕр мăшкăллана,
Ĕненми пулса вĕсем.

Ким ăшне пухса вăл кӳртнĕ
Тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхрен.
Тасине курса вăл илнĕ
Çичĕ мăшăр таранччен,

Ыттине те пĕрер мăшăр
Тĕслĕрен пухса илсе,
Хăйĕн çемйипе вăл ларнă
Çĕнĕ ким ăшне кĕрсе.

Хĕрĕх тавлăк çумăр çунă.
Аслă тинĕс шывĕсем
Çыранран тухса путарнă
Çылăхланнă çынсене.

Ной анчах шыв пичĕ тăрăх
Юхнă хăйĕн киммипе.
Çавăн пек çăлса хăварнă
Турă çыннăн ăрăвне.

IX

Вăхăт иртнĕ, ĕмĕр шунă.
Çын йышланнă çĕр çинче.
Пайтахран каллех çын маннă
Ырă пурăнăç çинчен.

«Ырă пулăр, ырă курăр,
Çăмăл заповедь сире:
Пĕр-пĕрне эсир юратăр, —
Тенĕ Турă çынсене, —

Ăсăрпа ан мăнăланăр,
Тайăр пуçăра çĕре.
Çĕр вите çине çĕр витĕр,
Кирлĕ пулĕ вăл сире.

Пурăнсан, ан манăр, илтĕр,
Çĕр вите çăлать сире», —
Тенĕ Турă, ӳкĕтленĕ,
Мĕн пулмаллине пĕлсе.

Çыннăн ăсĕ пăшăрханнă
Çавăн пек пилленĕрен,
Пĕлĕтпе тан купаланă
Темĕн пек çӳллĕ тĕрен.

Халăх ăмăртса хăпарнă
Çӳллĕ тунă вырăна.
Ун тавра çын вилĕм тупнă
Тавлашуллă вăрçăра.

Евапа Адам калаçнă
Чĕлхене улăштарса,
Турă хăвăрт вăрçа чарнă.
Халăх кайнă саланса.

Çĕр çине çынсем саланнă
Хӳтĕ вырăн шыраса.
Парнесем кӳрсе çунтарнă
Хĕвеле тархасласа.

Хĕвеле анчах мар, урăх
Тĕрлĕ япаласене
«Турăсем» тесе çĕр тăрăх
Тупнă киреметсене.

Çылăхланнă çын ĕненнĕ
Турăсем нумай тесе.
Вăрмана кĕрсен шикленнĕ
Арçури çӳрет тесе.

Хăраса çынсем çӳренĕ
Çынсăр пушă çĕр çинче.
Харсăр кайăксем йĕрленĕ
Çынсене вăрмансенче.

Çын чирленĕ те чӳкленĕ
Вăрмана парне кӳрсе.
«Йывăç туррисем çырлахчăр, —
Тенĕ çын кĕл кĕллесе, —

Ĕнтĕ тĕп ан ту, ан макăрт,
Тархаслатăп, ан пăрах;
Юмăç каласассăн, хăвăрт
Пусăп, парăп урхамах», —

Тенĕ те чӳксем вăл кӳнĕ
Асамçăсене чĕнсе.
Киреметсене çитернĕ
Урхамах пуçне вĕтсе.

Шуйттансем çĕр пичĕ тăрăх
Çылăх ӳснине сиссе,
Тамăк тĕпĕнчен пит хăвăрт
Тухнă çĕр çине çĕрле.

«Этемсем Турра манаççĕ,
Акă пăхăр-ха: çынсем
Пирĕнпе пĕрле пулаççĕ
Ирсĕр тĕнсемпе вĕсем.

Йăнăш шухăшсем тытаççĕ,
Тупнă хурлăх, айвансем;
Турă ыррине манаççĕ,
Халĕ пирĕн ку çынсем», —

Тенĕ те вĕсем вĕреннĕ
Çынсене çыхса илме.
«Турă çук» тесе вĕрентнĕ
Хăшĕсем тата çынна.

Çавăнпа нумай çын пĕтнĕ
Ĕмĕт тĕп пулнипеле.
Канлĕх пĕтнĕ, вăхăт иртнĕ,
Вăранман çын ăсĕпе.

Çын хăй сывлăхне хавшатнă
Аскăн ĕçĕсемпеле.
Шуйттансем пит йышлăн тухнă
Этемсем патне çĕрле.

Хăш шуйттан пĕр чарăнмасăр
Арăмне упăшкипе
Кунĕн-çĕрĕн вăрăçтарнă —
Çураçман вĕсем нимпе.

Хăш хĕрарăм вăтанусăр
Упăшки пур çĕртенех
Ӳт кĕленине чармасăр
Çылăх тунă ют çынпах.

Çемьере йĕрке çухалнă
Путсĕр арăм ĕçĕпе.
Арăмне кура çын кайнă
Намăс ĕçĕпе пĕтме.

Çитĕнсен ача вĕреннĕ
Тĕрлĕ çылăх йăлине.
Юлташсем тупса вăл кĕнĕ
Шуйттансен танатине.

Усалсем çынна астарнă,
Çын хăй те сиссе юлман,
Çын хăйне пит ăслă тенĕ:
Çыхланассăн туйăнман.

Хăшĕ — вăрă, вăрă тунă
Çын патне çĕрле пырса,
Япала хуçи тĕп пулнă
Вăрă çĕççипе вилсе.

Çавăн пек шуйттан астарнă
Çын çынна пусмăрлама.
Хăш шуйттан тата çаратнă
Çыннăн ырă шухăшне.

«Ку çын хăлхипе ан илттĕр
Ырă пурăнăç çинчен.
Чĕрине кĕрсе ан ӳктĕр
Ырă шухăш пĕлĕтрен», —

Тенĕ те шуйттан пушатнă
Çыннăн ăшă чĕрине.
Унăн вырăнне тултарнă
Çылăх мĕн кĕленине.

Çын пуясшăн, киленесшĕн
Çывăх çыннинех чиксе
Унăн пурлăхне илесшĕн
Хăй те пĕтнĕ пуçĕпе.

Хăш шуйттан тата элекçĕ
Çын ăшне вырăнаçса:
«Сăмахпа çынсем пĕтеççĕ,
Пĕр-пĕрне çисе ларса,

Элекпех çынна пĕтерĕп,
Тĕрлĕ сăмахсем сарса», —
Тенĕ те çынна пĕтернĕ
Çын çинчен элек парса.

Хăш шуйттан çынна ăс панă
Мăн кăмăллă çӳреме.
Ун пек çын ялан юратнă
«Эп анчах çын çав» теме.

Çын çинчен вăл тăрăхланă
Пысăк пушă пуçĕпе.
Пуринчен ытла хурланă
Çын ырра вĕрентнине.

Хăйĕн вăрăм ĕмĕр иртнĕ,
Çыннăн пурлăхне туртсах.
Вăл хăй хырăмне ӳстернĕ
Ĕçкĕ-çикĕсем тусах.

Шуйттансем тата хăш çыннăн
Ӳсĕрри майне пĕлсе,
Эрехпе пит улталасшăн
Пулнă кăлăх ĕçтерсе.

Çын эрехпе пĕтнĕ чухлĕ
Нихăш çылăхпа пĕтмен.
Шуйттансем пит хĕпĕртенĕ,
Хăйсем те вĕсем пĕлмен:

«Эрехпех çынсем кун чухлĕ
Пĕтмĕç тенĕччĕ эпир.
Халĕ пăхăр-ха, мĕн чухлĕ
Йышлăлантăмăр эпир!

Хăш шуйттан пĕлсе çитертĕр
Çын мĕн чухлĕ пĕтнине?
Çавăнпа эрех ĕçтерĕр
Çĕр çинчи пур çынсене.

Тамăка тӳрех ӳкеççĕ,
Тĕлĕнетпĕр хамăр та:
Эрехпе вĕсем килеççĕ
Пирĕнтен малтан кунта.

Халĕ пирĕн çар пит йышлă
Турăпа тавлашма та», —
Тенĕ те вĕсем ташланă
Калама çук тамăкра.

Ĕçкĕпе вара пур халăх
Ăсĕ-хакĕпе чакса,
Ĕлĕк хăйшĕн пурăнмалăх
Пулнă сывлăхне пăсса,

Çĕр çинче пит вăйсăрланнă,
Пурăнайман савăнса.
Йывăç хăрнă пек йăх хăрнă
Вăйсăра тухса кайса.

Ĕмĕртен ĕçме вĕреннĕ
Хăш-хăш халăх пăсăлса
Хăйĕн ăрăвне пĕтернĕ,
Йăх çухалнă саланса.

Турă ирĕкне çын пăснă,
Тӳсеймен вăл чăнлăхра.
Хурлăхне нумай вăл курнă
Астуман пирки Турра.

X

Турă халăха çăласшăн
Хăй çинчен астутарса,
Пайтахчен Вăл паллă пана,
Тĕрлĕ хăватсем туса.

Ятарса çынсем вăл янă
Путсĕр халăх хушшине.
Ятарса вăл калаттарнă
Хăй çинчен çав çынсене.

Çавăн пек çынсем каланă
Турă ĕçĕсем çинчен.
Халăха вĕсем юратнă
Чĕрипе чун патĕнчен.

Турăран вĕсем вăй илнĕ
Хăрамасăр вĕрентме.
Сывлăш Турă Хăй пĕлтернĕ
Малалла пулмаллине.

Пророксем тесе калаççĕ
Этемсем халь вĕсене.
Святойсем вĕсем пулаççĕ
Аслă Турă умĕнче.

Пророксем тăрса каланă:
«Ӳкĕнсемĕр, халăхсем:
Мĕншĕн Туррăра манатăр?
Хăвăр Унăн ачисем.

Ашшĕ хăйĕн ачисемшĕн
Турă чухлĕ тăрăшмасть.
Мĕншĕн ун çинчен пĕлесшĕн
Кăмăлăр çавăрăнмасть?

Мĕншĕн халь эсир манатăр
Турă каланисене?
Эй, çынсем, пĕлсе сыхланăр:
Сисĕр йăхăр пĕтнине.

Мĕн пирки эсир пĕтетĕр,
Мĕн ку пулчĕ-ши сире?
Ӳкĕт илĕр, ĕмĕт илĕр,
Ӳкĕтлетпĕр-çке сире.

Хуçине пĕлсе пур выльăх
Хуçинех тупса пырать.
Картара чухне вăл лайăх,
Шикленмесĕрех тăрать.

Выльăхран пулин вĕренĕр
Хăвăр Аçăра пĕлме.
Турă пуррине ĕненĕр,
Вăл манмасть сире çӳлте.

Халь эсир пурте манатăр
Аçăра, Çӳлти Турра:
Çавăнпа эсир пĕтетĕр,
Тĕп тăватăр хăвăра.

Турă вăйлă, Вăл култармĕ
Хăйĕнчен çак çынсене.
Çылăх хăватне пĕтерĕ,
Час çĕнетĕ этеме.

Çĕр çинче этемĕн вăйĕ
Ун сăмахĕнчен иртмест.
Турă панă ячĕ-чапĕ,
Сăмахне тытсан, пĕтмест.

Тĕрлĕ халăх тĕрлĕ тĕслĕ
Сăмахпа чапне сарать,
Турă ĕлĕк калаттарнă
Сăмаха тытса тăрать.

Вăхăт çитĕ, çĕр çĕнелĕ,
Пĕтĕç сылăхлă çынсем.
Çĕр çине Хăй Турă килĕ,
Хатĕрленĕр, халăхсем», —

Тенĕ те вĕсем çӳренĕ
Хуларан хула çитсе.
Çылăхланнă çын çилленнĕ,
Йышăнман вăл вĕсене.

Хăш чухне çынсем вĕлернĕ
Туррăн пророкĕсене.
Çамрăк ачисем вĕреннĕ
Ашшĕсен йăлисене.

Çĕр çинче нумай çын вилнĕ
Турăшăн тăрăшнипех.
Çылăх çав тери çĕнтернĕ
Шуйттансем илĕртнипех.

XI

Турă Хăй çинчен пĕлтернĕ
Сăмаха астутарса,
Йăхсене илсе çӳренĕ
Çĕр çинче çул кăтартса.

Йăхсене Вăл хатĕрленĕ
Çăлăнас кунсем кĕтме.
Пĕлĕт паллипе пĕлтернĕ
Мĕн пур халăха ăна.

Пророксем каланă тăрăх,
Самана улшăнасса
Çĕр çинчи пур тĕрлĕ халăх
Ĕмĕтленнĕ савăнса.

Темиçе патшалăх пĕтнĕ
Тĕрлĕ вăрçă кăларса.
Пайтахран вара хăй килнĕ
Ывăл Турă çĕр çине.

Çутăран çутти ӳт илнĕ
Этемсен пек ӳтленсе.
Ун валли çĕр хатĕрленĕ
Çĕр вите хĕпĕртесе.

Иисус Христос çуралнă
Выльăх тăнă витере.
Çавăнччен çын выльăх пуснă,
Çăлăнассине кĕтсе.

Ĕлĕк юхнă выльăх юнĕ
Этеме çăлса илмен.
Паллă пек пулса систернĕ
Выльăх юнĕ ĕмĕртен.

Выльăх юнĕ астутарнă
Çăлакан юн тăкасса.
Выльăх-чĕрлĕх паллă пулнă
Сас памасăр пусăнса.

Çĕр вите ăшне пăхсассăн,
Çăлакан Турра курса
Хăйĕн хуçине туйсассăн
Выльăх тăнă савăнса.

Çăлакан Хăй мĕн каланă,
Сăмахне çавнах туса,
Çын пулса Вăл асапланнă
Çăлăнма çул кăтартса.

Ĕмĕртен Вăл Хăй каланă
Ашшĕпе пĕр канашра:
«Çунтарса парне кӳнипе
Çын хăйне хăй çăлаймасть.

Эй, Аттем, Мана ӳт патăн
Этеме çăлса илме.
Саншăн Хам парне пулатăп
Кăмăлпа Хам кӳрĕнме». —

«Савнă Ывăлăм, саватăп;
Çуралатăн ĕмĕртен.
Тĕнчене сана яратăп», —
Тенĕ Ашшĕ Ывăлне.

Адама таса пултарнă.
Никамран вăл çуралман.
Çав тери таса çын ӳчĕ
Арлă-арăмран пулман.

Унăн чунĕ — Турă пайĕ
Вилĕм курмалла пулман.
Çăлакан ăна çăлмашкăн
Арлă-арăмран килмен.

Турă ывăлĕ ӳт илнĕ
Сывлăшпа таса Хĕртен.
Вăл çуралнă та Çын пулнă,
Хăй Вăл — Турă ĕмĕртен.

XII

Эй, ман Туррăм, Çăлаканăм!
Ĕçĕме пилле, тасат.
Ырă ăс Санран ыйтатăп:
Манăн ăсăма çутат.

Сывлăшу мана çĕнеттĕр,
Хытнă чĕреме çемçет.
Сăмаху мана вĕренттĕр,
Ăслăлăх Санран килет.

Пĕр Сана анчах пĕлетĕп,
Ирĕкне мана пĕлтер.
Çăлăнăç санран илетĕп,
Савăнтар, хĕпĕртеттер.

Эсĕ пирĕншĕн Çын пулнă
Пĕлĕтсем çинчен анса.
Эсĕ маншĕн асапланнă
Çав тери мана савса.

Тивлетне мана паратăн,
Пĕрлещетĕн манпала.
Ху патна мана чĕнетĕн,
Савăнатăп Санпала.

Туррăм, Туррăм, чĕлхеме уç,
Тӳрĕ шухăш пар мана.
Пуринчен ытла тавтапуç
Ĕнентернĕшĕн Сана.

Ху çинчен пире пĕлтертĕн
Хăватсем туса парса;
Тăлăх арăма хĕрхентĕн
Ывăлне чĕртсе парса.

Наира та хĕрхентĕн
Пĕртен-пĕр хĕрне чĕртсе.
Тăлăх хĕрсене хĕрхентĕн
Тăванне чĕртсе парса.

Пилĕк çăкăр тăрантарнă
Пилĕк пин çын ушкăнне.
Хăвату çиле час чарнă
Хумхатмарăн шыв хумне.

Апостолусем каланă
«Турă Ывăлĕ» тесе.
Шуйттансем санран хăранă,
Путнă кайнă шыв тĕпне.

Чирлĕ çынсене сыватнă
Пĕтĕм халăх умĕнче.
Хăватна пире кăтартнă,
Манас çук ăна тĕнче.

Чĕреме уçса кӳртетĕн
Хăвăн ырă хыпарна,
Çимĕç вырăнне илетĕп
Ăшăмпа Сан сăмахна.

Асапланнă çын халь илттĕр:
Чăнлăх çутăлса килсе.
Чăнлăх Туррипе пĕрлештĕр
Хăйĕн хĕресне илсе.

Аслă çул çине ан тăрăр:
Унăн вĕçĕ тамăкра.
Тăвăр çул тесе ан хурлăр:
Турă утнă умăрта.

Аслă çул çине пур çылăх
Çĕрĕн-кунĕн хутшăнать.
Ĕмĕр савăнмалăх канлĕх
Тăвăр çул çинче çӳрет.

Тăвăр çул çине тăратрăн
Хресӳне мана парса.
Çăлăнăç çулне кăтартрăн
Аллăмран мана тытса.

Эсĕ, Туррăмăр, çĕнтернĕ
Мăн кăмăллă шуйттана.
Унăн хăватне пĕтернĕ
Адама çăлса илсе.

Адампа пĕрле пур халăх
Сан çине савса пăхать.
Хăй çинчен этем хĕн-хурлăх
Сан çине илсе хурать.

Эсĕ пирĕншĕн юн тăкрăн,
Çамрăк айăпсăр Путек.
Вилĕм хăватне пĕтертĕн,
Чĕрĕлсе тăма патăн.

Эсĕ этеме çĕнетрĕн,
Унпала тач пĕрлешсе.
Çăлăнма пире вĕрентрĕн
Сăмахна итлеттерсе...

*1914*

# ÇЫВĂХРИ ЯЛ-ЙЫШСЕМ

*Ыръран ырах пулать,*
*Усалтан усал пулать.*

Чунăм савнă тăвансем,
Пĕрле пурăннăскерсем,
Кайрĕç нимĕçпе вăрçма,
Кайрĕç турккăпа вăрçма.
Вĕсене аса илсен
Ачаранпа вĕсемпе
Пурăнни аса килет.
Мĕн аса килнисене
Çырас терĕм хут çине.
Çамрăк çулсем иртнĕ чух
Пĕр-пĕринпе пĕрлешсе
Хĕпĕртесе савăнни,
Пĕрле-пĕрле пухăнса
Сăмах-юмах ваклани,
Ĕлĕкхине асăнса
Калаçни-пуплениcем,
«Хамăр ўлĕм малалла
Мĕнле пурăнăпăр-ши?»
Тесе шухăшланисем
Аса килчĕç, тăвансем.
Халĕ ун çинчен сире,
Паянхи кун пулнă пек,
Хăвăр куçпа курнă пек,
Каласа парас килет.
Ватă çынсем каланă:
«Кулянаканпа кулян,
Савăнаканпа савăн».
«Манăн кăмăла кура
Эпĕ мĕн каланине
Итлемĕр-ши пăртакках?» —
Тесе ĕнтĕ малалла
Сăмахăма пуçлатăп.
Сăмахăмăн ўкĕчĕ
Чи малтанах палăрмасть,
Анчах çакна астăвăр:

Тĕнчере пур çутăран
Çутă ырă хĕвел те
Тўрех çўлте тўпере
Пирĕн куçа курăнмасть.
Хĕвел тухаччен малтан
Хĕвел тухăç хĕрелет,
Тĕттĕм çĕр иртсе каять.
Ерипелен çуталса
Çап-çут хĕвел тухать те
Тĕнчипеле çутатать.
Ман сăмахăм ўкĕчĕ
Хĕвел пекех çутах мар;
Сăмах малтан сирĕншĕн
Тĕттĕм çĕр пек туйăнĕ.
Ерипелен итлесен,
Ырă, таса шухăшсем
Ăша ĕмĕтлĕ кўртсе
Тĕттĕм çĕрте çутатĕ.
Ырă шухăш хĕвел мар,
Хĕвел анса ларсан та,
Ăна ăшран ярас мар.
Вырăнлăрах шухăша
Нихăçан та манас мар.
Çутă хĕвеле ан ман:
Вăл çутăлса тухсанах
Пире çутта кăларать.
Эсĕ çавна сиссенех
Ырă пулма шухăшла...
Ĕнтĕ итле малалла,
Эсĕ ху кам пулсан та,
Итлесе лар, ан калаç...

Эпир пĕрре, кĕрхи каç,
Пĕр çын пўртне пухăнса
Пĕрле нумай лартăмăр,

Пĕр сăмахран тапратса
Нумай сăмаха çитрĕмĕр.
Çын патне кайса ларсан
Эсĕ хăвăн ăшăнта
Ырă шухăша ан ман.
Эсĕ ырă çын пулсан,
Намăс курмăн нихăçан.
Эпир пухăнса ларнă
Ырă çуртăн хуçисем,
Тимуххипе арăмĕ
(Тимуххие тутарсем
Яшмул тесе тутарла
Хушамат тупса панă),
Каç пулсассăн Çеçмере
Пуçани патне ĕçке
Тухса кайнă хăнана.
Пускилти хĕрачасем
(Уçарах пар хăлхуна)
Утатипе Ухина
Юлнă кил-çурт астума.
Улах пуласса ачасем
Виç кун малтан сисеççĕ,
Чунтан-вартан кĕтеççĕ.
Анчах çакă улаха
Пули-пулми çын пыман,
Улах пуçĕ Ухина
Яла-пăла ачана
Улах çинчен систермен.
Çавăнпа çак улаха
Пухăннă хĕрачасем
Тата арçын ачасем,
Тĕплĕ сăмах пуплесе,
Пурте ларнă ĕçлесе.
Çапла пирĕн тантăшсем,
Пĕрле-пĕрле пухăнсан,
Ырă ăса пуçтарса,
Пит тирпейлĕ ларатчĕç.
Ырă ăспа пурăнсан,
Кулянмастăн нихăçан.
Чăваш йăлисем çинчен
Халь каласрĕç нумайччен.
Йывăр пурăнăç çинчен
Пуринчен те ытларах
Çамрăк кун-çултанпалах
Шухăшлама вĕреннĕ
Тăлăх Васли Михали,
Çамрăк та мар, ватă мар,
Çак кĕркунне салтакран
Киле чипер килнĕ çын,
Хамăр чăвашсем çинчен
Çапла сăмах каларĕ:
«Чăваш çынни — начар çын:
Çителĕклĕ пурăнаймасть,
Кăмăлĕпе кăвакарчăн:
Çынна ытлах макăртмасть,
Кил-йышĕпе савăнать,
Кил-çурчĕшĕн тăрăшать.
Анчах чăваш хушшинче
Мильон тытакан çын çук,
Хаçат çапмалăх мул çук.
Выçă куçлă киремет
Чăваш мулне çаратнă,
Чăваша начарлатнă.
Халăх хăтлăрах пулма
Мулĕ çитнĕ, ăс çитмен.
Пирĕн халăх ухмахĕ
Питĕрпеле Мускава
Çитнĕ пулĕ янтратса.
Авалтанпах сăмах пур:
«Çула-йĕре тухсассăн,
Вырăс ăсне уйăрмасть,
Хăйпе пĕрле çӳретет.
Ăсĕ малта тутар пур,
Ăсĕ кайра хамăр пур».
Çавăнпа та чăвашран
Аякранах кулаççĕ:
«Сан кĕнекӳ çук, — теççĕ, —
Ĕне çинĕ тет», — теççĕ.
Çакна илтсен ачасем,
Питрен-куçран çапнă пек,

Чĕрене вут тивнĕ пек
Сикрĕç тăчĕç сак çинчен.
Пурте харăс тенĕ пек
Михалие каларĕç:
«Халь самана апла мар,
Пирĕн чăваш япăх мар:
Унта-кунта çитеççĕ,
Турă панă хăватпа
Аслă ĕçе тухаççĕ,
Чăвашсене манмаççĕ,
Чăвашла кĕнекесем
Çултан-çул кăлараççĕ,
Мĕнле майпа пурăнсан
Мĕнле ырă пуласса
Каласа та параççĕ,
Çырусем те çыраççĕ.
Пĕлес тесе тăрăшман
Юлхав, айван çынсене
Ĕмĕр выртнă ыйхинчен
Тăратаймăн виличчен».
Каларĕç те сак çине
Каллах ларчĕç лăпланса.
Михалийĕ чарăнмасть:
«Итлĕр, — терĕ, — малалла.
Ялти мĕскĕн халăха
Эрех ĕçме чарсан та,
Ĕссĕр* пулма юрататъ.
Килте тунă сăрине
Сахăрпала, пылпала
Виç тавлăкчен** йÿçĕтет.
Вара сăра ĕсĕртет,
Çыннăн тăнне пĕтерет.
Шур кăпăклă сăрапа
Карланкине йÿçĕтет.
Вара çапла ĕçнипе,
Хăйне кăмăл тунипе
Ун кăмăлĕ тин тулать.
Ĕçтермесĕр нихăçан
Кăмăлне çавăрма çук,
Кирлĕ ĕç тутарма çук.
Вĕрентни — вĕрентни мар,
Ăна ÿкĕт кирлĕ мар.
Ăна эсĕ ĕссĕр ту,
Вара вăл тин сан çынну.
Ĕçтермесен тăшману
Пулмĕ тесе ан кала:
Ĕçесшĕнех чăннине
Суя туса калаçать,
Чунне вăтаран хуçать.
Пĕр чĕлĕмĕн табакпа
Улталамалла ăна.
Ватă çынсем каланă,
Авалхи вăл суя мар:
«Чукмар пекех пулас мар.
Авал хурама чукмар
Яла тухнă мухтанса:
Пур çын мана кирлĕ мар,
Камăн вăй пур — эп унпа».
Çавăн майлă чăвашра
Чукмар вырăнне эрех
Тухнă çĕмĕрме ирех
Мĕскĕн, чухăн çынсене.
Эрех пулнă чун пахи:
Çын патне хăнана кай —
Сĕтел çинче çиме çук,
Эрех-сăра нумайран
Урай тăрăх шуса кай —
Тăка-тăках ĕçетчĕç.
Чĕлĕм тĕтĕм çăраран
Çăварна хуп — тухса кай.
Чĕлĕм туртакан çынтан
Усси пулчĕ-пулмарĕ,
Май килмесен — çунса кай,
Табакăн усси çав май.
Ку тĕнчери пурнăçра
Сывă пулма тимлемен,
Леш тĕнчери пурнăça

* Ÿсĕр.
** Талăкчен.

Кĕтсе илме пĕлеймен.
«Вилсен лаша тусан та,
Çуна туса туртсан та,
Хамшăн хама ним те мар»,
Тесе калакан пулнă.
Çĕлен-калта чĕлхипе,
Ӳпне çăпан чĕлхипе
Тухатма вăл пит пĕлнĕ.
Пăх, укçа ăçтан илнĕ:
Ниме тăман ĕçĕпе
Хăратнă вăл ялĕпе».
Вара çакна каласан,
Михали хаш! хуйхăрса
Калама та чарăнчĕ,
Пукан çинчен тăчĕ те
Алăк патне кĕтесех
Кайса ларчĕ пĕчченех.
Тӳрĕ сăмах калакан
Алăк патĕнче ялан,
Суя сăмах пуплекен
Тухман тет кĕрекерен.
Никам та ним чĕнмесĕр
Пăртак ларчĕç ĕçлесе.
Ним калама йӳтĕм çук,
Михалийĕн суйи çук.

Çав вăхăтра урамран,
Анат енчен, Ухванеç
Килсе кĕчĕ юрласа.
Кăçал унăн хулана
Салтак виçине тăма
Кайса килме ят тухса*.
Ялта ятлă Ухванеç
Юрă юрлама ăста,
Салтак юрри юрлама
Ачасем каларĕç те,
Урай варрине тăрса,
Ак çакăн пек юрларĕ:

* Тухнă.

«Çити-çитми пурнăçпа
Çамрăк чуна хуçас мар.
Ăшран тухми хуйхăмпа
Çынна хурлантарас мар.
Кăçал салтак каймалла,
Сыв пулăр, хĕрачасем,
Кăçал ман макăрмалла,
Тутăр парăр куç шăлма.
Тантăш хĕрсем, сыв пулăр,
Çыру ярăр ырă сунса.
Эсир мана ан манăр,
Сире нихçан манас çук.
Тантăш-тăванăмсемпе
Пурăнăттăм савăнса,
Кĕтсех тăр — пăшалсене
Тасаттарĕç васкатса.
Куç илме çук хĕрсене
Ăсатăттăм пуххалла.
Пухха каяс вырăнне
Каяс пулать салтака.
Салтак каяс ачасен
Мине* тулли шухăшсем,
Ăш-чик тулли хуйхăсем
Çывăрсан та каймаççĕ.
Тырă вырнă вăхăтра
Çурла илсе тухăттăм,
Тырă-пулă вырăттăм,
Пилĕк ывăç — пĕр кĕлте,
Пилĕк кĕлте тĕм тăвать.
Сыв пулсан, салтак кайăп,
Часах çурла тытаймăп,
Куçăм тулли уйсене
Часах килсе кураймăп.
Тĕмсем йăтас вырăнне
Кутамккасем йăтмалла.
Çурла-çава, канса вырт,
Урăх ĕçсем ман умра.
Ăсăм-пуçăм, ан кулян:

* Миме (пуç).

Салтак ячĕ — аслă ят.
Питĕр, Мускав пит пуян,
Курса килме мĕн тăрать».
Юратнă юррисене
Юрламашкăн чарăнсан,
Ачасене ал парса
Тухса кайрĕ улахран.
Улах çĕрте Ухванеç,
Ухатие юратса,
Салтак кайса килсенех
Качча илес пек калаçать.
Те илĕ, те илеймĕ,
Ун çинчен халь калама
Иртерех пек туйăнать.
Сăмах халех пĕтес çук,
Каламасăр юлас çук.
Ухванеç тухса кайсан,
Урăх ача, Игнатий,
Паçăр пӳлнĕ сăмаха
Татах тапратса ячĕ.
Малтан Ухванеç çинчен
Ак çапла вăл каларĕ:
«Акă пирĕн Ухванеç —
Калама çук ыр ача:
Нихçан ĕссĕр çӳремест.
Урăх ача пулсассăн,
Салтак кайнă вăхăтра
Тарăхса е хуйхăрса
Ĕссĕр çӳрет урамра.
Ак, Ухванеç апла мар,
Ырă юрăсем юрлать,
Хăйне ытла мухтамасть,
Никама та хурламасть.
Уй ĕççене асăнса
Сăвăсем туса юрлать.
Сăвăсăр пĕр юрламасть.
Çамрăк çыннăн ăс-хакăл
Çавăнтан пит палăрать.
Тепĕр айван ним пĕлмест,
Карать ярать çăварне,
Виç талăкри пăру пек.
Ухванеç ак апла мар.
Ун пек юрлама пĕлсен
Çамрăксене килĕшет.
Унăн юррине илтсен
Куç тулли уй курăнать.
Çу кунĕнче пурăнни,
Ун чух мĕнле ĕçлени,
Хĕпĕртесе савăнни
Хĕл хутра савăнтарать;
Хамăр ӳснĕ çĕр-шыва
Виличчен юраттарать.
Ĕссĕр ача ырă мар,
Юррисем те паха мар.
Ай мăнтарăн ĕссĕрĕ,
Çынна çăмăл ăс парать.
Ĕссĕр чухне пур çын та
Çăмăлланса калаçать,
Ларма-тăма пĕлмесĕр
Калле-малле уткалать —
Улпутăнах туйăнать,
Ăсĕпеле мухтанса
Пĕлнĕ-пĕлмен сăмаха
Пĕлнĕ пекех юмахлать.
Ним тăвасса пĕлмесĕр
Хăйне мухтаса юрлать:
«Мана пуян кирлĕ мар,
Эпир паян выçă мар,
Пире укçа кирлĕ мар,
Килте пинрен кая мар,
Вилсен çавах юлать», — тет.
Хăйĕн патне кайсассăн,
Сĕтел çине пăхсассăн
Çур çăкăртан мала мар.
Хăш ĕссĕр çын çакăнтах,
Кирек кампа пулсан та,
Вăрăçма сăлтав шырать,
Кирек мĕн сăмахранах
Çемьери çыннисене
Ĕссĕр чух пит макăртать.

Ёссӗр пулма кирлӗ мар,
Ёссӗр вӑл ҫынна пӑсать», —
Терӗ Игнатий пире.
Вӑлатимӗр кӗтесрен
Пӗчӗк ҫинҫе сассипе
Янтраттарса каларӗ:
«Хӗрачасем, итлӗр-ха
Ухванисӗн юррине
Тепӗр хутчен юрлӑр-ха.
Ухванеҫ юрланӑ чух
Пӗр хӗр йӗчӗ тӗпелте.
Куртӑм тутӑр вӗҫӗпе
Куҫне шӑлса илнине.
Пытармасӑр каласан,
Чӑнах, эппин, Утатин
Ухванеҫ юрланӑ чух
Чунӗ пӳлӗнсе килсе,
Пичӗ-куҫӗ хӗрелсе
Сентел пек пулса кайрӗ», —
Терӗ ыйхине сӳрсе.
Вӑлатимӗр — тӑрӑхҫӑ,
Ҫын ҫинчен вӑл тӑрӑхлать.
Ҫын умӗнчех хӗр ҫинчен
Тӑрӑхланӑ сӑмахпа
Пурте кӑмӑлсӑр пулса
Кулчӗҫ Вӑлатимӗртен.
Тӗлсӗр сӑмаха сӳрсе
Чипер Ухина пире:
«Чимӗр, сире пӗр сӑмах
Каласа парам халех, —
Терӗ ҫын ним каличчен, —
Халап айне пуличчен
Халех каласа парам,
Сӑмахпала каличчен
Юрласа та парӑттӑм,
Сирӗн итлеме кӑмӑл
Пулмӗ тесе хӑратӑп». —
«Юрла, Ухина аки!
Эсӗ юрлама ӑста», —
Терӗҫ ӑна ачасем.
Ухина шурса кайрӗ,
Вӑрӑм, хитре аллипе
Кӑнчалине якатрӗ,
Йӗкине ҫупса ярчӗ,
Вара пире каларӗ:
«Эсир, арҫын ачасем,
Шухӑшлӑр-ха лайӑхрах:
Акӑ ӗнтӗ самана
Урӑхланчӗ пулмалла:
Ёссӗр пулма пӑрахма
Килчӗ патшаран закон.
Ёлӗк усал киремет
Ёҫкӗ чухлӗ пӗтермен.
Халӗ тепӗр киремет —
Халӑха пӗтерекен
Эрех-хупах хупӑнать.
Ёнтӗ калӑр-ха мана:
Пӗтӗ-ши вӑл хупӑнсах?
Уҫмӗҫ-ши ӑна каллах?
Ырӑ Турӑ, ӑс парах,
Патшапа хӑват парах,
Эрехе тӗп тутарах!
Ёссӗр ҫынна пӗлетӗр,
Ун килӗнчи ҫыннисем
Хуйхӑрнине пӗлетӗр.
Эрех ӗҫнӗ вӑхӑтра
Хӗрарӑмӑн хуйхине
Курнӑ пулӗ пурсӑр та.
Эпӗ пӗрре сивӗре
Анчӑк пичче арӑмӗ
Хӑйӗн сивӗ пӳртӗнче
Хурланса макӑрнине
Куҫпа курса кулянтӑм.
Итлес кӑмӑлӑр пулсан,
Анчӑк арӑм юррине
Сире юрласа парам». —
«Чӑнласах, юрла, аки, —
Терӗҫ пур хӗрачасем.
Шӑпӑрт та ним чӗнмӗпӗр,
Эпир сана итлӗпӗр».

Ухина вара çапла
Ерипелен юрларĕ:

«Арçын ялтан ĕссĕр килет,
Хирĕç мĕнле тухам-ши?
Ĕссĕр чухне хирĕçкелет,
Мĕнле йӳнеçтерем-ши?

Чунăм сисет, чĕрем сикет
Паян ырă пулмасса.
Алри ĕçĕм çĕре ӳкет
Упăшкам хур тăвасса.

Ĕссĕр чух ялан вăрçать,
Мĕн каласа чарам-ши?
Чарма тăрсан çапать хуçать,
Мĕн тăвам, мĕн тытам-ши?

Чунтан-вартан юратăттăм
Упăшкам уррăн килсен.
Çиме хатĕр, халь лартăттăм
Апат çиесси килсен.

Вăл кайсассăн, пĕр вăхăт та
Нихăçан ахаль ларман.
Кил-çуртăмра тĕрлĕ ĕç пур,
Туса тăрасса манман.

Хĕвел тухăç хĕреличчен
Ик-виç йĕке арларăм,
Кашта çинчен чăх аниччен
Ирех ĕç тума тухрăм.

Карта ăшне хĕллехи юр
Кĕрсе тулнă шăтăкпа.
Пĕр качака, виç сурăх пур,
Шăнса тăнă каçранпа.

Упăшкам çĕвĕре çӳрет,
Укçа тупать ĕçлесе,
Тупнă укçи ахаль пĕтет,
Тăтăшах ĕçкелесе.

Вырса алла илес чухне
Ана çинчи ыраша
Нумайла мар, виç четвĕртле
Сутса ĕçрĕ аташса.

Çынсем авăн çапнă чухне
Лартăм пӳртре макăрса.
Упăшкам пур — ним хуйхине
Пĕлмест, çӳрет сулăнса.

Ак халь ĕнтĕ хĕлле пулчĕ,
Ларас пулать аптраса.
Чӳрече çине пăр тулчĕ,
Алăк хупăнми пулса.

Кусăрха çилпе тулнă юр
Нӳрĕ парать маччаран.
Вĕтĕ-шакă ачамсем пур,
Лараççĕ çара уран.

Пӳрт ăшăтма вут-шанкă çук,
Илтĕм улăм пускилте.
Улăм хутрăм, тӳсмелли çук —
Хăрăмĕ вĕçет пӳртре.

Кăмака çумĕнче виç чăх
Шип-шиплатать хĕлĕпе.
Хамăр паранкă çинĕ чух
Тăранкалать хуппипе.

Качча тухса килнĕ чухне
Тумланма тумтир пурччĕ,
Ĕçке ерсен, пĕр çуркунне
Упăшкам саклат пăрахрĕ.

Ан ĕç, терĕм, çапрĕ хуçрĕ,
Темĕн те пĕр каласа.

Вĕлеретех пулĕ терĕм,
Çăлăнтăм çав пытанса.

Тĕп сакайне кĕрсе лартăм
Ниçта тарма аптраса.
Вилес пекех хам хăрарăм,
Ăш тапранчĕ хуйхăрса.

Упăшкам кунĕпех ĕçрĕ
Ĕссĕр юлташĕсемпе.
Сакайĕнче пăрса çирĕ
Манăн ӳтĕм-пĕвĕме.

Ĕçкĕшĕн ман юлташăма
Паранкă сутса яма,
Тĕп сакайне кĕрсе тухма
Шухăш килнĕ пулмалла.

Тăпрас çинчен сиксе анчĕ
Паранкă купи çине.
Чĕрем çавăн чух тапранчĕ,
Куçăм хуралса килчĕ.

Çăварне хăй чĕлĕм хыпнă,
Тӳрех мана курчĕ те
Ĕссĕр, лăкăртăк сассипе
Сăнсăр кăшкăрса ячĕ:

«Çием, пусам, чунна татам,
Çакăнтах çакса хурам,
Сăнна-пуçна кăвакартам,
Çиттунине йăлт татам.

Çăва тĕпне кайса вилмен,
Вилех, маншăн хĕр пĕтмен,
Кăçалах халь ман çул иртмен,
Тĕнчере ыр хĕр пĕтмен».

Çапла сăмахсем каласа
Ярса илчĕ тăшманла,
Çапнă çĕртен кăвакартса,
Тăнтан ячĕ таптаса.

Юлашкинчен çӳçрен тытса
Туртса тухрĕ тулаллах;
Тӳсмелли çук ыраттарса
Чире ертрĕ выртмаллах.

Ачам-пăчам макăраççĕ,
Çамрăк чуна хускатса,
Çапла чăвашсем вăрçаççĕ
Ачисене хăратса.

Макăрнипе тăнран тухрăм,
Мĕнле пурăнас капла?
Ĕнтĕ хама хам каларăм:
Чăнах пĕтрĕм патакпа.

Эпĕ темĕн те пĕр тӳсрĕм:
Питĕм-куçăм кăн-кăвак.
Хĕненипех сăнран ӳкрĕм:
Ырă сăн кӳртмест патак.

Тĕп сакайне хыпса аннă
Çăварĕнчи чĕлĕмрен
Сакайĕнчи çӳппе тивнĕ —
Курман çын ĕненес çук.

Каçпа тула вут-хĕм тухрĕ
Пӳрт хыçнелли кĕтеспе.
Яла-йыша шăпах пухрĕ
Упăшкам ĕссĕррипе.

Чан сасси илтсе хусканнă
Ик çырма çинчи сала.
Хатĕрсемсĕр пырса тăнă,
Тытман витресем алла...

Ним тума те пĕлейместĕ,
Тăраççĕ анчах пăхса.

Шыв пухӑнма пӗвес теҫҫӗ
Ыран иртерех тӑрса.

Халӑх тӑнсӑр тӑнӑ хушӑ
Вут вӑйӗҫӗн ӑнасса.
Ҫыннисен аллисем пушӑ,
Пӳртӗм кӗл пулса кайса.

Пӳрте вут тивсе илнӗ чух
Ҫӑлса тухрӑм шӳлкема,
Куҫҫулӗпе макӑрнӑ чух
Ӗлӗкхине асӑнма.

Ҫамрӑкранпах усрасаттӑм
Вӑтӑр тенкӗлӗх ама.
Саклата ама пӑрахрӑм
Пуҫ чикмелӗх пӳрт лартма.

Хам хурлӑхӑма чӑтатӑп,
Ачамсемшӗн ӑш ҫунать,
Вӗсем вӗтӗ, пӑхаймастӑп,
Вӗсемшӗн чун хурланать.

Вӗсем хама пӑхмахланса
Шурса кайрӗҫ типшӗнсе.
Упӑшкам пур — ял култарса
Пурӑнать пӗрмай ӗҫсе.

Мӗн тупнине ӗҫсе ярать,
Кунӗн-ҫӗрӗн ятлаҫать,
Килне-ҫуртне япӑхтарать,
Тырӑ-пулӑ тӑратмасть.

Алли ылттӑн, хурламастӑп:
Мана ватма пит ӑста,
Ялан, ҫӑпата тунӑ чух,
Ҫапать илет калӑппа.

Пӳрт-ҫурт тума ӗҫе каять,
Тарӑхтарать ҫынсене.
Ялан ӗҫкӗшӗн тапӑнать,
Пӑсать юлташӗсене.

Ӗҫрен килеуррӑн килмест,
Ӗссӗр килет яланах.
Укҫи тӗлне хӑй те пӗлмест,
Ӗҫме илет хамранах.

Ӗссӗр килчӗ те хӗнерӗ,
Аптӑрарӑм патакпа.
Шӑтӑрт темен шӑм юлмарӗ,
Ҫапрӗ, тапрӗ тапкӑпа.

Ӗҫнӗ ҫӗре чӗнме кайрӑм
«Киле кайӑпӑр» тесе.
Аран киле тухса тартӑм
Ҫавӑнтах чикет тесе.

Вӑл киле килсе кӗрсессӗн
Пӗтӗм пӗтрӗм хӑраса.
Мӗн пулсан та тӳсеп терӗм,
Калам терӗм хурланса:

«Ачамсем тумтир ыйтаҫҫӗ,
Туса парччӗ вӗсене.
Ура сыррисӗр лараҫҫӗ,
Хӗрхенсемччӗ вӗсене».

Пӗрреҫех ман ҫине сиввӗн
Пӑхрӗ илчӗ куҫӗпе.
Мӗн калам-ши, тӗнче пӗтнӗн
Туйӑнчӗ хӑранипе.

«Эсӗ мӗн пӗлен, хӗрарӑм,
Лар лапчӑнса вырӑнта», —
Терӗ те тытса ӳкерчӗ
Вӑйӗпе пусмӑрлама.

Ним калама та пӗлмерӗм,
Тухрӑм пӳртрен тулалла.

Вĕтĕ туратсем пуҫтартăм
Апат ăшăтса пама.

Апатăма хăй ҫимерĕ
«Мĕншĕн ҫу яман тесе,
Ҫу илмелĕх ĕҫлейместĕн,
Мĕн усрас сана?» тесе.

Ҫиме пĕтсен панкка кайрĕ
Ҫăнăх илмелле тесе.
Ҫирĕм пилĕк тенкĕ илнĕ
Ҫул ҫинчех ĕҫсе яма.

Вăхăтĕнче тӳлеймерĕ,
Халь пӳрт сутма хут килсе.
Вăй-хăватăм сая кайрĕ
Ĕссĕр ҫыншăн ĕҫлесе.

Ачамсем ҫине пăхсассăн,
Чунăм пăртак лăпланать.
Вĕсем кĕт пысăклансассăн,
Ырă кун курса пули...»

Ҫапла пире Ухина
Ҫак хурлăхлă юрăпа
Пысăк шухăша ячĕ.
Хура халăх ĕлĕкрех
Мĕнле пурăнни ҫинчен
Калаҫтарчĕ нумайччен.
Хĕрачасем тĕпелте
Хăйсен пурнăҫĕ ҫинчен
Халапланчĕҫ нумайччен.
Вун ҫиччĕри Утати
Ачасене կаларĕ:
«Ку юрра час ан манăр.
Эрех каллех тухсан та,
Тутанса та ан пăхăр.
Ырăпала усала
Пĕлтерекен йывăҫ пек
Улталаса ан хутăр».

Анчăк арăмĕ чăнах
Хурлăх курса пурăннă.
Ача чухнех Анчăка
«Анчăк» тесе ахаль мар
Таса тĕне кӳртсенех
Улăштарса ят панă.
Ача-пăча пурăнман,
Ҫуратакан чухламан,
Пурăннă пĕрмай асса.
Ача ҫирĕп ҫуралман,
Ик ҫул ытла пурăнман.
Ачисем пурăнмантан,
Тĕшмĕшлĕ ăс хушнипе,
Ача пурăнтăр тесе,
Святай ятне пытарса,
Йытă ятне астуса,
Йытта ҫын пăсмасть тесе,
«Анчăк» ятлă хунă та
Тĕлĕнтернĕ ял-йыша,
Савăнтарнă тутара.
«Тухатмăш тухатаймасть,
Ача ятне тупаймасть,
Ăна тĕрĕс ячĕпе
Ҫын никам та асăнмасть», —
Тесе ятне пытарнă.
Ятне кура йăлийĕ
Ҫав май пулнă ҫĕр ҫинче.
Ҫапла Анчăк ҫын та мар,
Урăх ним калас та мар,
Пурăннă хăй ĕмĕрне
Ҫыннăн ĕмĕрне ҫисе.
Унăн ашшĕ-амăшĕ
Вилес умĕн пин тенкĕ,
Ҫара кĕмĕл, чăм ăшне
Ҫĕре алтса пытарнă.
«Кĕмĕл ҫутти — ҫĕр ҫутти,
Вилсен ҫутатса тăрать», —
Тесе вĕсем пахчара
Чалăха ҫух шăтăка
Чавса хунă укҫине.

Нумай пулмасть халь унта
Çын сăмахне астуса
«Çĕр çуттине» шыраса
Пĕр çын тăпра чавнă та
Тупнă пысăк чăмпала
Кĕмĕл укçа тем чухлех.
Çав укçапа çак хута
Çакăн чухлĕ тĕрлесе.
Анчах Анчăк арăмĕ
Мĕншĕн пит телейсĕр-ши?
Çут тĕнчере ун пекки
Урăх çук-ши тавралла?
Пăхсан, нумай курăнать.
Хăш хĕрача ача чух
Школа кайса вĕренмест;
Амăшĕ ухмах пулсан,
Хĕрĕ те çав ухмахах:
Шут илеймест, сăваймасть,
Калаçма пултараймасть,
Сăмах-юмах ваклаймасть,
Ним çинчен те калаçма
Шухăшласа тупаймасть.
Ӳссен ăна укçалла
Ашшĕ-амăшĕ таçта
Сутса ярать ют яла,
Нарăспие панă пек.
Нарăспие Тăхтаман
Саламатпа хĕненĕ.
Хĕрарăм хăй ĕмĕрне
Ирттерет тĕттĕм çĕрте.
Ăссăр упăшки килсен,
Хĕнет тăнне яриччен.
Ялта хĕрарăмсенчен
Элек сăмахран пуçне
Урăх ним сăмах илтмест.
Кинне хурлакан нумай.
Хуняшшĕпе хунямăш
Кинне вутпа вĕтнĕ пек
Сăмахпала вĕтеççĕ.
Çиме ларсан, çăкăрне
Миçе çăвар çинине
Куçран пăхса лараççĕ.
Çавăн пирки тем чухлех
Çамрăк арăмсем йĕрсех
Пурăнаççĕ ялсенче.
Ватăлсассăн хăйсем те
Хăйсем асап курнăшăн
Кинĕсене хĕсеççĕ.

Эпир çапла нумайччен
Пĕр-пĕринпе калаçса
Улах туса лартăмăр.
Тата шухăш тытрăмăр:
«Нихăçан та ĕçес мар,
Хамăртан култарас мар.
Хамăр ята çĕртес мар.
Никама макăртас мар.
Чипер, сывă пурăнсан,
Вăхăтĕнче авлансан,
Ача-пăчаллă пулсан
Хамăр хĕрарăмсене
Анчăк арăмĕ юррине
Юрламалла тăвас мар.
Хупах уçма тапратсан,
Халăхран ыйтсан-тусан,
Пăрикăвăр* парас мар.
Пачăшкăпа учитель,
Кантур тиекпе доктăр
Училище аслатма
Е аптекăсем лартма
Халăх кăмăлне ыйтсан,
Хĕпĕртесе пулăшар.
Халăх урă пурăнсан,
Россияна ырă ят.
Турă та пиллĕх парать.
Вăрăм ĕмĕр хушшинче
Ăса-пуçа пуçтарса
Чипертерех пурăнма
Турă пулăштăр пире.

* Приговор.

Пирĕн халăх ялĕнче
Пĕрле пухăнса ларма,
Хаçат, çыру вулама
Уйрăм çуртсем лартни çук.
Хулари пуян çынсем,
Мăн хуçасем, улпутсем,
Ăрасна çурт лартнă та
Курас килнĕ вăхăтра
Юри кайса кураççĕ,
Нумай усă кураççĕ.
Пирĕн мĕскĕн халăхсен
Музей лартма мул çитмест.
Хулана кайса курма
Вăхăт çитмест, ерĕçмест.
Хамăр пĕлнĕ-пĕлмен пек,
Килтех, пушă вăхăтра,
Пускил патне пухăнсан,
Пули-пулми сăмаха
Калаçмашкăн кирлĕ мар.
Ирсĕр, çĕрĕк шухăша
Аса илме кирлĕ мар.
Чипер, пĕрле пухăнса
Ĕçлемелли вăхăта
Алă ĕçсем ĕçлесе
Ларас пулать савăнса», —
Терĕç çамрăк ачасем.
Вĕсем вăхăт пур чухне
Усăллă кĕнекесем
Вулани те пит аван,
Юрлани те усăллă,
Тесе калаçса ларчĕç.
Халь калаçнă сăмаха
Сарас пулать тавралла:
Çывăхри ял ачисем
Пирĕн евĕрлĕ пулччăр.
Кулакансем кулсан та,
Пирĕн ĕмĕт усал мар,
Терĕç ăслăраххисем.
Çамрăк çынсен ĕмĕчĕ
Пултăр пурте вырăнлă.

Ача, ăссăр çитĕнсен,
Ватта-вĕтте палламасть,
Никама хисеп тумасть,
Ик аллине каялла
Тытса утма вĕренет,
Пурлăхне пуçтараймасть.
Çити-çитми пурнăçпа
Пурăннă пек пурăнмасть,
Паппирускăсем туртса
Çӳрет ялта мухтанса.
Калуш-камсал туянать,
Çиме илсен тавăрмасть,
Никама та пулăшмасть,
Хăйне ырă тунине
Манса каять хыççăнах.

Ларсан-ларсан Михали
Тухса тăчĕ çуттарах.
Пурте Михали çинелле
Пăхрĕç: мĕн калать тесе.
Михали, тав тунă пек,
Çынсем çинелле пăхса
Пуçне сулса илчĕ те
Юрра ячĕ ак çапла:
«Пирĕн мĕнпе мухтанас?
Кам умне мала тухас?
Эпир чи кая юлса*,
Пĕтĕм тăнсăра тухса**.

Пирĕн халăх ним пĕлмест,
Пĕлес тесе тимлемест.
Нумайтарах вĕренмест,
Ырă вырăна кĕмест.

Вĕренсен те вĕрентме
Пирĕн паталлах килмест.
Чăвашсенчен йĕрĕнет,
Сурать, тăванне тӳсмест.

* Юлнă.
** Тухнă.

Тăван чĕлхине манать,
Каласмашкăн вăтанать,
Унăн чунĕ çывăрать,
Мĕскĕн çынна пулăшмасть.

Эпир çапла пурăнса
Хăçан ырă курас пур?
Хăçан эпир тĕттĕмрен
Çутта тухассăмăр пур?

Ним пĕлмесĕр тĕттĕмре
Пурăнатпăр тертленсе.
Каяс пулать школсене,
Тухас пулать тĕнчене».

Михали юрланă чух
Урам алăкĕ сасси
Сысна çухăрнă пекех
Кариклатни илтĕнчĕ.
Çуна сасси илтĕнет.
Кил хуçисем хăнаран
Килсе кĕчĕç юрласа.
Кĕрчĕ* пӳрте кил хуçи —
Сĕм вăрманти арçури!
Куçĕ-пуçĕ чап-чарлак!
Алăк урлă каçсанах,
Тискер сăнсăр сассипе
Хирти выçă кашкăр пек
Карса ячĕ çăварне.
Ĕссĕр çынна пĕлетĕр,
Эсир хăвăр ĕçетĕр,
Ĕçетĕр те юрлатăр,
Калас пулать хурласах:
Юрланă чух ухмах пек
Пĕр сăвăсăр юрлатăр,
Пĕр халап çук, сăмах çук:
Ай-ай тетĕр айван пек,
Ай-уй тетĕр кушак пек,
Ай-ар тетĕр автан пек,

Ӳлетĕр упасем пек, —
Çын пек юмахламастăр.
Ăс-пуçа палăртмастăр,
Каратăр çăварсене
Хирти выçă кашкăрла.
Хăйпе пĕрле Яшмула
Кĕрхи йĕпе чăхă пек
Кӳтсе çитнĕ арăмне
Тĕксе кӳртрĕ пӳртнелле.
Анчах пирĕн Ухина
Çын кăмăльне çавăрать,
Сăмах хушма май тупать.
«Чипер çитсе килтĕр-и?
Лайăх ĕçсе çирĕр-и?
Чипер пулсам-ха, мучи,
Килемийĕн вăй сахал,
Аплах тĕкме юрать-и?
Лайăх илсе çӳресей?
Кӳр-ха, мучи, тумтирна,
Хурар чипер пуçтарса.
Пиçиххине салтар-ха,
Çĕлĕк-алсине кӳр-ха,
Хурам кăмака çине.
Ыран тăрсан тăхăнма
Ăшă вырăнта тăччăр.
Пуçанусем аван-и,
Хăна нумай пухăнни?» —
Тесе ыйтрĕ Ухина.
«Ерипелен йăпшăнса
Кайăрах ĕнтĕ киле», —
Терĕ вăл ачасене.
Яшмулла ним те чĕнмест,
Тавăссине каламасть,
Шăлне качăртаттарать,
Икĕ кашта шурă шăл
Çăвар тулли курăнать,
Сухал тăрăх епресе
Сĕлехи юхса анать.
Килемие питĕнчен
Пĕреççех çупса илет.

* Кĕчĕ.

Чӗлхи хытнӑ килеми
Хӑвӑрт сӑмах хушаймасть,
Ҫурпа килнӗ тӑрна пек
Кукӑр-макӑр уткалать,
Урисемпе пускалать,
Лапах йӗпе кӑркка пек.
Кӑркка ӗссӗр пулнипе
Кайрӗ ӳкрӗ каялла!
Ҫӗрте выртма канлӗ мар,
Тӑчӗ, ӳкрӗ малалла!
Ак мӗн турӗ пыл-сӑра!
Юрлас килет пӗр ҫӑвар,
Анчах ҫӑвар таса мар,
Хӑсӑк тухать, тутлӑ мар!
Нӑш-нӑш туса макӑрать.
Эх, намӑссӑр килеми,
Ку таранччен ме ӗҫсе? —
Тесе калассӑм килет.
Пӑртак тӑрсан килемин
Чӗлхе-ҫӑвар уҫӑлать:
«Ачамсем, ан айӑплӑр, —
Тесе юрлама пуҫлать.
Ӗҫсен ӗссӗр кам пулмасть,
Хӑсӑк тухсан кам хӑсмасть,
Ура шуҫсан кам ӳкмест,
Ӳкнӗ ҫӗртен кам тӑмасть?» —
Тет те кӑл-кӑл ҫеҫ хӑсать!
Йывӑр шӑршӑ сарӑлать,
Сӑмсана ҫитсе ҫурать!
Кӑркка аҫи — арҫури,
Туркӑ ҫинчен килнӗ пек
Выртрӗ канма, вилнӗ пек,
Анчах чунӗ тухман та,
Сикрӗ тӑчӗ сак ҫинчен,
Ячӗ илчӗ арӑмне
Вӑрӑм йӗпе ҫӳҫӗнчен.
Ухина ӑна чарать:
«Яшмула мучи, итле:
Килемие ан питле,
Сып шыв хӑвӑрт ҫӑварна», —
Терӗ ӑна Ухина,
Хӑвӑрт ӗҫме шыв парса.
Сӑра чанӗ — килеми,
Нихҫан сӑра курман пек,
Ытла ӗссӗр пулнипе
Тӗкнӗ-тӗкмен тайӑлать,
Тута-ҫӑвар хупӑнмасть,
Упӑшкине ятлаҫать:
«Ме ҫапрӑн мана питрен?» —
Тесе урипе тапать,
Пӗтӗм пӳрчӗ кисренет!
Кӑтраланнӑ ҫӳҫӗнчен
Упӑшки ҫулса илсен
Ҫӗре персе ҫӗхӗртет!
Пуҫри ҫӳҫӗ юхнипе
Килемие тӑн кӗчӗ,
Пичӗ-куҫӗ шывланчӗ,
Шывланмарӗ — юнланчӗ.
Чӗлхе-ҫӑвар уҫӑлчӗ,
Йӑвашланса калаҫать
Упӑшкине мухтаса,
Ҫӳҫне-пуҫне якатать,
Ҫурӑмӗнчен лӑпкаса,
Сухаллинчен ачашлать!
Лӑпкамасан май килмест,
Ҫиллентерсен хӗн пулать.
Юрла-юрла макӑрать,
Ҫав вӑхӑтрах савӑнать —
Нимӗнне те пӗлес ҫук.
Хӑвӑр куҫпа курмасан
Калама та пӗлес ҫук.
Упӑшкуна юрассу пур —
Макӑрсан та кулса тӑр!
«Тавӑ сире, ачасем:
Сӑра курки сарлака,
Тӑвансене юратса
Ларсах ӗҫрӗм сарӑлса.
Алран курка каймарӗ,
Ӗссӗр пултӑм ҫавӑнпа.
Ай, Яшмулла, ан ятла,

Арăмна ан айăпла.
Пĕрлех ĕçме кайрăмăр,
Пĕрлех киле килтĕмĕр.
Атте-анне ячĕпе
Ырă ĕçсе çирĕмĕр.
Турта тулли лашипе
Çулта чипер çӳресе.
Чул муклашки чунăм пур,
Чулпа çапсан тухас çук.
Хаяр тиек — упăшкам,
Çыншăн пулсан ним те мар,
Хамшăн анчах тем пекех,
Юрататăп чун пекех.
Ют çын çапать, ыратать,
Упăшкамăн çу хăвать...»
Ĕссĕр килеми юрри
Мыскараллă туйăнса,
Пурте кулчĕç аптраса.
Пăртак тăрсан пурсăмăр
Килелле салантăмăр.
Ухинапа Утати
Ĕссĕр пулнă çынсене
Пирĕнтен кая юлса
Çураçтарса хăварнă.
Тепĕр кунне килеми
Кĕпи-йĕмне типĕтме
Çуса çакнă пӳрт хыçне.
Чул пек çирĕп килемин
Куç лупашки кăн-кăвак,
Пит çăмартисем шыçмак,
Паллă хăварнă патак!
Тепĕр ĕçкĕ пулаччен,
Ан ман, каллех тӳрленĕç.
Элек сăмах тăрăхах
Патак çиет пĕрмаях.
Яшмулана пускилсем,
Пĕр хĕрарăм, каланă:
«Сан арăму канлĕ мар,
Ĕссĕр чух шанчăклă мар,
Унта-кунта пăхкалать,
Ытла йăваш юмахлать».
Çакăн пек сăмах илтни
Темиçе çул иртнĕ пуль,
Анчах ăна Яшмулла
Хальхи кунччен астăвать.
Тăват енчен пăхсан та,
Хĕр чух хĕрсем пит аван,
Анчах усал арăмсем
Ăçтан тупăнаççĕ-ши?
Пĕр-пĕрин çинчен элек
Мĕншĕн пит параççĕ-ши?
Яшмулла хăй ĕçкелет,
Укçа та çухаткалать.
Пĕрре çулла хулана
Ĕнесем сутма кайнă.
Икĕ ĕне сутнă та,
Сутнă çинчен ĕçнĕ те,
Сĕмех ĕссĕр пулнă та,
Каç пулсассăн вăрманпа
Киле килме тухнă та
Урапи çинче çулла
Çывăрнă ним пĕлмиех.
Чее çынсем тĕл пулса
Утмăл тенкĕ укçана
Касса илнĕ çумĕнчен.
Пулать ĕссĕр çӳресен!
Çак сăмаха пĕр çынна
Вуласа кăтартрăм та,
Мана вăл çын каларĕ:
«Ку сăмах сан тĕкĕр пек;
Тĕкĕр виттĕр пăхрăм та
Хам сăнран хам хăрарăм».
Тепĕр çын тата каларĕ:
«Эсĕ манăн сăнăма
Ĕссĕр чух пăхса тăрса.
Урăлсан хам та курма,
Малашне чипер пулма
Çырнă. Уншăн тав сана».

Вăхăт çитсен Ухванеç
Салтак кайрĕ Мускава.
Уншăн килте Утати
Юлчĕ хытах макăрса.
Халь вĕсене хăварса
Ырă Ухина çинчен
Калас килет малалла.
Ухинана ял пĕлет,
Ачаранпах тирпейлĕ.
Арман хуçи хĕрĕ пек,
Сарă, вăрăм çитĕнет.
Ырă ашшĕ-амăшне
Савăнтаракан ача
Унăн чаплă ашшĕне
Палламан çын сахал пуль.
Чăвашла çыру çинче
Тырă пулнă çул çинчен
Калакан кĕнекере
Буртеми ятлă çынна
Илтнĕ эсир тахçанах.
Çавăн хĕрĕ Ухина,
Çирĕм çула халь кайса.
Ăшă кăмăлĕпеле
Савăнтарать пурне те.
Ухинана мухтаман
Пĕр çын пуласчĕ ялта, —
Пĕр çын та тупăнас çук.
Кирек кама курсан та
Сăмах хушмасăр иртмест,
Йĕркесĕр çынсене мар,
Ырă çынсене анчах.
Ватă çынпа — ватă вăл,
Тантăш хĕрсем хушшинче
Килĕшӳ пуçлăхĕнче,
Унтан никам та иртмест.
Хĕрарăмсем хушшинче
Йăваш Ухина çинчен
Усал сăмах çӳремест.
Çапла пирĕн Ухина
Хăвăрт ӳссе çитрĕ те
Пулчĕ чипер, хитре хĕр.
Çирĕм çулалла кайсан
Пулчĕ тăчĕ савнă хĕр.
Каччăсем уншăн пайтах
Шухăш тытса çӳрерĕç.
Ăна юраллă ача
Тупăнчĕ хамăр ялтах.
Тăлăх Васли Михали
Килчĕ хĕрĕн кăмăлне.
Буртеми Михалие
Хĕрĕ патне йышăнчĕ.
Михалипе Ухина
Пĕрне-пĕри юратса
Арлă-арăмлă пулма
Сăмах татрĕç çемьере.
Хăтасемпе хăтасем —
Лайăх çынсем тĕл пулчĕç.
Михалипе Ухина
Венчете кĕнĕ кунне
Михалисен килĕнче
Туй çимĕçне ирттерчĕç.
Туй ĕçкине теместĕп,
Мĕншĕн тесен çамрăксем,
Михалипе Ухина,
Сăра тавраш ĕçмеççĕ.
Хăйсен ырă туйĕнче
Никама та ĕçтерсе
Ĕссĕр тăвас темерĕç.
Ĕссĕр пулнин усси çук.
Тĕрлĕ апат-çимĕçпе
Хăнисене пăхрĕç те
Пурте пĕтĕм ялĕпе
Калама çук тĕлĕнчĕç.
Кусем капла тунипе
Çĕнĕ йăла кăларчĕç.
Пурте урă, ĕссĕр мар.
Курма пыракан нумай.
Вăрăм сĕтелсем çинче
Чей чашкисем çап-çутă,
Пиçнĕ çырла сахăрлă.

Тул ҫӑнӑхӗнчен хурса
Тунӑ кукӑль-ҫӳхӳсем,
Хулӑн, тутлӑ чӑкӑтсем,
Тӗрлӗ тутлӑ ҫимӗҫпе
Тиркӗсенче купипе —
Ҫийӗр, ӗҫӗр, савӑнӑр,
Савса пӑхать кил хуҫи!

Тата пирӗн тӑвансем
Ухванеҫпе Утати
Мӗнле пурӑнаҫҫӗ-ши?
Мӗнле пурӑнни ҫинчен
Кӗскен каласа парам.
Пӗрне-пӗри юратса,
Пӗр сӑмахран тухмарӗҫ.
Ухванеҫ салтак кайсан,
Виҫ ҫул ҫурӑ ытларах
Утатие ҫын курман,
Вӑй выляма вӑл тухман.
Калаҫса хунӑ хӗр пек,
Ниҫта та ларма тухман.
Сӑмах-халап хыҫҫӑнах
Хирӗҫмешкӗн юратман.
Пӗрре панӑ сӑмахне
Сӳтсе яма чун туртман.
Ашшӗ малтан самаях
Вӑрӑҫкаларӗ, терӗҫ.
Ӑна ҫисе пуплекен
Виҫ-тӑват ҫул хушшинче
Пайтах пулчӗ ял ҫинче.
Утати, тӳсӗмлӗскер,
Сӑмах вӗҫне шырамасть.
Ҫулла пулсан, пахчара
Ухванеҫе асӑнса
Юрлать ҫапла хурланса:
«Чунӑм савни, Ухванеҫ,
Куҫӑм умӗнче пекех
Сана асра тытатӑп.
Эсӗ халӗ килте ҫук,
Сана халех курас ҫук.
Шухӑш сан ҫинчен каймасть.
Чунӑм сансӑр пурӑнаймасть.
Чунӑм савни, Ухванеҫ,
Эсӗ халӗ ӑҫта-ши?
Хӑҫан киле килӗн-ши?
Вӗҫейӗттӗм кайӑк пек,
Мана халӗ ҫакӑнта,
Ҫак илемлӗ пахчара,
Курӑнаттӑн шӑпчӑк пек.
«Юрататӑп, Утати»,
Тесе мана калӑттӑн.
Ухванеҫӗм, Ухванеҫ,
Сан ҫинчен шухӑшласа
Манӑн ыйӑх те килмест.
Ҫывӑрнӑ чух тӗлӗкре
Сана куртӑм килте пек,
Уйра тырӑ вырнӑ пек,
Хӑвӑн ыраш кӗлтӳне
Ман кӗлтепе юнашар
Пӗр тӗм ҫине хутӑн пек.
Шухӑшлатӑп ҫӗрӗпех,
Сана курсан тем пекех», —
Тесе ларать пахчара.
Сирӗн ӑна курасчӗ.
Вӑл мӗн тери ыррине,
Йӑвашшине, хитрине
Тӗкӗр витӗр курнӑ пек
Чипертерех курасчӗ!
Ытам тулли кӗлетки,
Ҫурӑм тулли ҫиттуни,
Чипер ҫамки хӗрринчи
Кӑтра вӗҫлӗ ҫӳҫӗсем
Чечек пекех илемлӗ.
Куҫ харшисем айӗнче
Пӗлӗт тӗслӗ куҫӗсем
Ирхи сывлӑм шӑрҫи пек
Илемленсе пӑхаҫҫӗ.
Ҫын пӗрре чипер курсан
Ӗмӗрӗнче манас ҫук.
Ӑшӑ кӑмӑл, юрату,

Çынна савса пăхакан
Пит илемлĕ куçĕсем
Курăк çинчи сывлăм пек
Йăлтăртатса çутатни —
Хĕр илемне кӳреççĕ.
Çын хăйне хăй сисмесĕр
Утати патне утать.
Унтан пĕр сăмах илтсен
Вăл сăмаха тахçанччен
Ăшĕнче тытса çӳрет.
Çав тери çав Утати
Хăйĕн ăсне палăртать.
Вун çич çулхи Утати
Хăйне пускил çыннисем
Çисе калаçнисемшĕн
Пăшăрханса макăрать,
Анчах çынна палăртмасть:

«Кĕрлет, сĕрлет сĕм вăрман
Хаярланнă çилпеле.
Çил вĕрсен те, вăрманта
Ӳкмест çирĕп хурама.
Тухать ăссăр çăвартан
Элек сăмах, хĕлĕпе
Хурлать çынсене ялта.
Вилмест уншăн пĕр çын та.

Тăр шыв çине хур ларать,
Хур ларать те хум ярать,
Хум шыв питне хумхатать,
Пăртак тăрсан лăпланать.
Усал çын сăмах пуплет,
Мана çисе пĕтерет.
Тӳсĕмлĕ чунăм сисет,
Усал çынтан йĕрĕнет.

Атăл тăрăх шыв юхать.
Шыв айĕнчи çирĕп чул
Çăвăнса çеç юлаять.
Çынсем мана çисен те,
Хам тӳррине пĕлетĕп.
Тем сăмах çӳретсен те,
Хирĕçессĕм пĕр килмест.
Çын тӳррине çын пĕлмест.

Çутă хĕвел уяр кун
Илемленнĕ çĕр çине
Сарать вăйлă çутине,
Савăнтарать пурне те.
Ухванеç çыру çырать,
Çырăвĕнче яланах
Ман пата салам ярать,
Хăйне кĕтме йăлăнать.
Манран кулакан çынсем
Ăшă чĕре вырăнне
Çурçĕр енчи вăрманти
Кăмпа ӳснĕ хĕсĕнсе.
Кăмпа çутта юратмасть,
Типсе каять çутăра.
Çĕртен çӳллĕ çĕкленмест,
Йӳçсе ларать çырмара».

Çапла çамрăк Утати,
Ухванеçе юратса,
Вăл киле килессине
Кĕтрĕ виç çул ытларах.
Ухванеçĕ салтакра
Пĕр сехет те ерĕçмест,
Ир тăрать те каçченех
Пит тăрăшса вĕренет.
Пушă вăхăт пулсанах
Çĕвĕçĕ те пулать вăл.
Килтех атă ăстиччĕ,
Халь салтакра чистиех
Ăста пекех май кӳрет.
Унпа юлташ салтаксем
Килтен пынă укçана
Хăш вăхăтра ахалех
Пĕтереççĕ салатса.
Ухванеç апла çын мар:

Унӑн чунӗ пушӑ мар.
Юлташӗсем илӗртсен,
Вӑл вӗсенчен пытармасть,
Утатие вӑл манмасть.
Кулакан юлташӗсем
Хӑш чухне унтан кулаҫҫӗ:
«Ытла хӗр пекех», — теҫҫӗ,
«Хулана тухмасть», — теҫҫӗ.
Ухванеҫӗ вӗсене
Вӑтаннипе хӗрелсе
Ҫапла калать тӳррипе:
«Эй, ман савнӑ юлташсем!
Эпир хресчен ҫыннисем.
Пирӗн килти тӑвансем
Эпир чипер пуласса
Чун пек ӗмӗтленеҫҫӗ,
Пире киле кӗтеҫҫӗ.
Манӑн килте савни пур,
Турӑ парсан, пурӑнсан,
Киле-ҫурта таврӑнсан
Ман авланма ӗмӗт пур,
Тӗллесе хунӑ хӗр пур.
Унччен эпӗ ҫакӑнта
Чипер пулам чӑткӑнса».
Юлташӗсем ҫук чухне
Шухӑшлать вӑл йӗркипе:
«Утатиҫӗм, Утати,
Сана асӑмра тытни,
Тӳрӗ чунпа пурӑнни
Мана халӗ ҫакӑнта,
Кил-ҫуртӑмран аякра,
Сыхлатӑрччӗ ултавран,
Юлташӑмсем чейинчен.
Турӑ панӑ тӑн-пуҫпа,
Ырӑ, таса кӑмӑлпа
Киле чипер ҫитиччен,
Сана куҫпа куриччен
Аванах пурӑнасчӗ».
Ухванеҫ хӑй шухӑшне
Ҫырса хурать хут ҫине.
Киле ҫыру янӑ чух
Хӑй мӗнле пурӑннине,
Мӗн шухӑшланисене
Ҫырса ярать йӗркипе.
Ҫавна-ҫавна саламсем
Тесе ҫырса ярать те
Пӗрмаях апла ҫырмасть.
Ҫын салам анчах кӗтмест.
Тата урӑх хыпарсем
Ҫырса ярсан аванрах
Тесе тӗрӗс шухӑшлать.
Вара вӑл ҫырӑвӗнче
Тӗрлӗ халӑхсем ҫинчен,
Тӗрлӗ хуласем ҫинчен,
Мускав чапӗсем ҫинчен,
Тӗрлӗ пӗлӗмлӗх ҫинчен
Ҫырса ярать майласа.
Ҫырӑвне вуланӑ чух
Итлес килет тӗлӗнсе.
«Ӑҫтан пӗлсе ҫырать-ши,
Апла пӗлсе ҫырмалӑх
Ӑна ӑс кам парать-ши?»
Тесе вара вулатӑп,
Ухванеҫ пит ыррине
Ху савӑнса мухтатӑн.

Ухванеҫпе Утати
Чиперех тӑват ҫула
Ӑса тирпейлӗ тытса,
Пӗрне-пӗри тем пекех,
Кӑвакарчӑнсем пекех
Кӗтсе илме пултарчӗҫ.
Ухванеҫ киле килсен,
Пулчӗ кӗтмен ырӑ туй.
Кӑвакарчӑнсем пекех
Савӑнсаччӗ хальччenex.
Вӑрҫӑ тухрӗ нимӗҫпе,
Ҫитрӗ йывӑр самана.
Ухванеҫ вӑрҫа кайрӗ.
Ҫынсем нумай макӑрчӗҫ.

Халĕ çырура çырать:
«Утати, сана салам,
Эсĕ маншăн ан кулян.
Эпĕ халĕ сыв пуçпах
Çак вăрçăра çӳретĕп.
Кăкăр çинче Георгий*
Йăлтăртатса çутăлать.
Çĕрĕн-кунĕн ăшăмран
Чун тухассăн туйăнать.
Тӳрем аслă уй çинче
Вилесенчен ту пулать.
Тупă ятри** ӳкнипе
Çĕр пичĕ шыв пек вĕрет.
Уяр пулас кунсенче
Тĕтĕм-сĕрĕм тĕтре пек
Куç-пуçа ыраттарать», —
Тесе çырура çырать.
Ачисем халь пĕчикрех,
Вĕсем çинчен калаçма,
Шухăшлатăп, иртерех.
Ĕлĕк, вăрçă пуçличчен
Ырă çынсем юратса
Вĕсем патне праçникре
Хăналама çӳретчĕç.
Анчах ырă хăнасем
Эрех-сăра ĕлĕкех
Вĕсем панче ĕçместчĕç.
Тутлă сăмах калаçса,
Апат-çимĕç çиетчĕç.
Çутă сăнлă сăмавар
Сĕтел çинче килĕшет.
Тутлă сăмах сахал мар;
Ырă вăрлăхсем çинчен,
Ана-çарансем çинчен,
Выльăх-чĕрлĕхсем çинчен,
Суту-илӳсем çинчен
Калаçатчĕç савăнса.

Тĕнчере мĕн пулнине
Хаçат çинче вуласа
Хăйсен хăнисемпеле
Калаçатчĕç хăш чухне.
Ухванеç хăй арăмне
Хĕвел ырăннех хурать,
Çăлтăр ырăннех хурать,
«Ангел» тесех хисеплет.
Мĕн чухлĕ юратнине
Сăмахпала калама,
Тĕрĕсех, сăмах çитмест.
Хăвăр чунăр мĕн чухлĕ
Çынна савма пултарать,
Унтан тата виçĕ хут
Ытларах мар, нумайрах
Юрататъ-и, тен, чăнах!
Чăвашсене çутатма
Чĕмпĕрпеле Хусанта
Тухнă кĕнекесене
Пит юратса вулатчĕç.
Праçник çитсен, чиркӳре
Юрлакансемпе пĕрле
Ухванеçĕ тăратчĕ,
Сехет кĕлли, апостол
Вулама пултаратчĕ.
Мĕн пур ялти çынсем те,
Тавралли ял-йышсем те,
Вĕсем ыррине курса
Ирĕксĕрех мухтатчĕç.
Вĕсен аслă пахчара
Тĕрлĕ тĕслĕ çырласем,
Тĕрлĕ тĕслĕ улмуççи,
Каласа ĕненес çук,
Çитĕнеççĕ сарăлса.
Çулсеренех сутмалăх
Вĕтĕ хунав ĕрчетсе
Тавралли çынсене те
Туянтаратчĕç сутса.
Турă панă вăй-хăват
Тӳрĕ чунлă этеме

* Георгий хĕресĕ (орден).
** Йĕтри.

Тӗнчере пит савӑнма
Тытса усрать йӗркере.
Ухванеҫпе Утати
Мӗн пур ачаранпалах
Ҫав тӗрӗслӗх йӗркипе,
Ҫынсем кулчӗҫ пулсан та,
Хӑйсене хӑйсем вӗсем
Тытса тӑчӗҫ тасара.

Вӑхӑт, кун-ҫул сисӗнмест,
Ир пулать те каҫ пулать,
Ҫултан ҫулах ҫул иртет.
Ҫамрӑк ача ҫитӗнет,
Ҫитӗннӗ ҫын ватӑлать.
Михалипе Ухина
Пит тирпейлӗ пурӑнчӗҫ,
Пӗрре ӗссӗр пулмарӗҫ,
Никампа вӑрӑҫмарӗҫ.
Ҫавӑнпа та вӗсенӗн
Ырӑ, ӑслӑ ачисем
Чӑваш ятне ҫутатрӗҫ:
Халӗ аслӑ ывӑлӗ
Вӗреннӗрен вӗренсе
Тухса каять улпута.
Нумай пулмасть Мускавра
Офицер ӗҫне тума
Хурав парса тухнӑ та
Вӑрҫа кайнӑ кӑмӑлпа,
Хӑйӗн чунӗ туртнипе.
Тепӗр хӗрӗ Чӗмпӗрте
Тата ик ҫул вӗренсен
Учительница пулать.
Килте тата ачисем
Кӗҫӗннисем ӳсеҫҫӗ.
Михаил Василичӑн
Тырӑ-пулӑ тӳпемрен,
Укҫа-тенкӗ тулӑхлӑ,
Такама та пулӑшать,
Такам та ӑна паллать.
Ҫулта-йӗрте, нушара
Чӑваш ҫыннине курсан,
Таҫтан ҫитсе пулӑшӗ.
Ӗҫлекен ҫынсем валли
Курӑс илсе хатӗрлет,
Хӗлӗпех ӗҫлеттерет,
Пӗрмай чӑпта ҫаптарать.
Вӗсен ялӗнчи ҫынсем
Усӑ нумай кураҫҫӗ:
Улавҫа* та каяҫҫӗ,
Укҫаран аптрамаҫҫӗ,
Аван ҫуртсем лартаҫҫӗ.
Ырӑ чӑваш ҫыннисем
Турӑ пулӑшнипеле
Пӑртак пурлӑх пухрӗҫ те,
Усӑ пулчӗ пурне те.
Вӑрҫӑ тенӗ вӑхӑтра
Чӑпта кайрӗ пит хакла.
Халӑхсем чӑпта ҫапса
Пулӑшу нумай пачӗҫ.
Ухванеҫпе Михали
Ӗҫкӗ тавраш ӗҫмерӗҫ.
Ӗссӗр пулакан ҫынна
Ырӑ пурӑнӑҫ ҫинчен
Хӑйсен пурнӑҫӗсемпе
Кӑтартса пурӑнатчӗҫ.
Иккӗшӗ пӗрле пулсан
Калаҫса ларнӑ чухне
Ӑслӑ сӑмах пуплетчӗҫ.
Пӗрре вӗсем ак ҫапла
Калаҫнине илтрӗм те
Ҫырса хутӑм хут ҫине.
Михали хӑй тарҫине
Сӗтел хушшине лартнӑ,
Ухванеҫпе иккӗшӗ
Ак ҫапла ӑс параҫҫӗ,
Михали ӑна калать:
«Таҫта кайса ҫитсен те,
Эсӗ хӑвӑн ӑшӑнта

* Лавҫа (ямшӑка).

Ырă шухăшна ан ман.
Яла-йыша тухсан та,
Çакна ан ман ăшăнта:
Эсĕ ырă çын пулсан
Намăс курмăн нихăçан.
Малтан хăвна ху пĕлсен
Пĕлсе çитĕн çынсене.
Çынна пĕр усă кӳрсен,
Ху ыррине пĕлтерсен,
Кĕтмен çĕртен пур енчен
Усă курăн пуринчен.
Тӳрĕ ĕçшĕн хĕпĕрте:
Тӳрĕ ĕç вăл таварăть,
Хăйпе пĕрле виçĕ хут
Пысăк ырăлăх кӳрет.
Çынна ырăлăх тусан,
Пĕрре çех мар, темиçе
Тĕрлĕ ырăлăх тусан,
Эсĕ халех вăл çынтан
Хушăн усă ыйтмасан,
Ырă ĕç тăвас çĕрте
Хăвна хуçа тумасан,
Чура пек анчах пулсан —
Курăн пархатар кайран.
Ху сăмахна ан ĕнен,
Çын сăмахне ан ĕнен —
Ĕнен хăвна ĕçӳнтен,
Ĕнен çынна ĕçĕнчен.
Хăвна хушăн ырă ту,
Çынсемшĕн те ырă ту;
Çынтан сăмах кĕтиччен,
Сăмахран ĕнениччен
Ĕçĕнчен пĕлсе ĕнен.
Сăмахпала хăвна ху
Ырă тăвас киличчен
Ырăрах пул ĕçӳпе».
Михалие итлесе
Ухванеç сăмахĕ те
Нихăçан асран каймасть.
Вăл каларĕ ак çапла:

«Никам çине çитиччен
Хăвăн чĕрӳпе ăсна
Виçсе пăхма ан ӳркен.
Эсĕ çынсем хушщинче
Палăртатăн-и ăсна?
Санран кулакан çук-и?
Култаракан çын мар-и?
Эсĕ ху çине ялан
Çын çине пăхнă пек пăх:
Ху çине таçтан пăхсан
Хăвнтан* хăвах кулмăн-и?
Хăвна ху куçран ан яр:
Йăллуна хăватлăн тыт,
Йĕвенна алран ан яр.
Йĕвенна пуçран хывсан
Тăхăнаймăн нихăçан.
Ятна ярас мар тесен
Ĕссĕр ан пул, урă пул,
Табак ан турт, ĕçлĕ пул.
Ĕçлемелли вăхăта
Табак туртса ан иртер.
Çынсенчен табак ыйтса
Хăвăнтан ан йĕрĕнтер.
Ĕçкĕпеле ăс ярса
Ху кил-йышна ан йĕрттер.
Çиме ларсан асра тыт:
Тĕнчере, çĕр-шыв çинче
Санран чухăнни нумай.
Ху умăнти çимĕçӳ
Ху ĕçленипе пултăр.
Ĕçес-çиес çимĕçсем
Ӳсчĕр хамăр пахчара.
Ана-çаран юсанма
Çуллен ĕçле пĕр алпа:
Пăхнă-пăхман çĕр-шывран
Усă нумай курма çук.
Ютра курнă япала
Ӳлĕм пултăр хамăрта.

* Хăвăнтан.

Кирек ăçта кайсан та
Ху халăхна ан хурла.
Кирек ăçтан килсен те
Халăхушăн усă кӳр.
Эпир чăваш, пĕр ухмах,
Тесе апла ан хурла.
Туррăн хура халăхне
Хурламашкăн юрамасть.
Санăн чĕлхӳ авалтан
Начар тесе ан кулян.
Çыннăн ырă пуласси
Ырă кăмăлтан килет.
Ырă, ăшă кăмăла
Ырă сăмах палăртать.
Кирек мĕнле чĕлхе те
Ку таранччен пурăнать.
Çухаласси тахăçан;
Ăна кĕтсе пурăнсан,
Ху чĕлхуна ху мансан
Кая юлăн выльăхран,
Вĕçсе çӳрен кайăкран.
Шăпчăк юрлать шăпчăкла,
Кукку тата кукуклать,
Путенен те юрри пур, —
Çĕр çинчи пур кайăксен
Харпăр хăйĕн юрри пур —
Кам вĕсене хупăрлать,
Хăйсем пĕлнĕ юррине
Кам вĕсене мантарать? —
Вĕт никам та мантармасть.
Çавăн пекех çынна та
Мантарччен нумайрах
Вĕрентмешкĕн çулне уç.
Калаç, вĕрен, ăса кĕр.
Ырă, канлĕ пурăнма
Пулăш пултăр пĕлнинчен».
Çапла пирĕн тăвансем
Михалипе Ухванеç
Пĕрне-пĕри юратса
Пурăнсаччĕ çак кунччен.

Халĕ вĕсем иккĕш те
Турă хута кĕнипе
Вăрçăра та пĕр çĕртех.
Михалийĕн ывăлĕ,
Паçăр ăна асăнса,
Çамрăк поручик пулса
Вăрçăра чунне парса
Россияри халăхшăн.

Утатипе Ухинан
Упăшкисем ырă та,
Пурăнăçĕсем аван.
Вĕсем ĕнтĕ хăйсем те,
Сăмах тупса каласан,
Нимĕнтен мар, ылтăнтан
Туса янă темелле.
Упăшкисем аякка
Инçе çула кайсан та
Килте вĕсен татăксăр
Пĕрмай вылять тараса:
Тырă виçме пĕлеççĕ,
Курăс виçме пĕлеççĕ.
Укçа шутлас тĕлĕшрен
Çук вĕсенчен иртекен.
Вĕсем хăш чух калаççĕ:
«Вăхăтра ĕç ĕçлесен
Усă пулать кунсерен.
Чухăн çын ыйтма килсен,
Памалăх пур, ан хĕрхен.
Турă пире пуянлăх
Çук çынсене пулăшмах
Хушса парать яланах.
Хытă пуян — пуян мар,
Мĕскĕн çынран мĕскĕнрех,
Вилет вăл çын хыттипех.
Çынна пулăшакан ал
Пушă пулман тет авал».

Çав вăхăтрах Анчăкăн
Арăмĕпе ачисем

Вăрăм кун-çул курмарĕç.
Патак нумай çинипе
Мĕскĕн Анчăк арăмĕ
Йывăр ĕслĕке ерчĕ,
Сывалмалли пулмарĕ.
Хĕрĕх çула çитиччен
Çĕре кĕчĕ хурлăхпах.
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ
Вырăна çитеймерĕ.
Вăл хăй ачисем çине
Ĕмĕтленсе пăхатчĕ,
«Ырă пулĕç-ши?» тесе
Чунне лăплантаратчĕ.
Анчах унăн ачисем
Ĕссĕр çынпа пулнăран
Е урăх япаларан
Пит имшеркке çитĕнчĕç,
Пĕрне-пĕри ăмăртсах
Вилсе пĕтрĕç çамрăклах.
Çук тесрен пĕр ывăл пур,
Пурăнать-ха пысăк мур:
Çирĕм çулхи пуçĕпе
Çын кĕлетне кĕнĕ те
Вăрă ĕçпе çекленсе
Патак çинĕ вилесле.
Халь те пулин ĕсĕрсе
Çӳрет çĕтĕк кипкепе.
Пасар кунĕ пасара
Тӳрĕ кайса килеймест,
Вăрламасăр тӳсеймест.
Çулла пухăсем пулсан
Е вăйăсем пуçлансан
Пичĕ-куçĕ кăн-кăвак,
Патак çиет яланах.
Çапла вăл та пит пуçтах,
Ĕссĕр çын ачи, паллах.

Яшмулапа арăмин
Ача-пăча юлмарĕ.
Ялан, пĕрмай ĕçкĕпе
Пурăнчĕç пурăнасса.
Çавăнпа та ватлăхра
Ача-пăча хӳтлĕхне
Кĕрсе тăма пулмарĕ.
Пĕрре вĕсен, çамрăк чух,
Вилĕ ача пулнă тет.
Тепĕр чухне Яшмула
Шутсăр ĕссĕр пулнă та,
Хăйĕн ĕссĕр арăмне
Хырăмĕнчен тапнă та
Пăрахтарнă ачине.
Унтан вара малалла
Ача-пăча çуралман.
Халĕ вĕсен çĕр-шывне
Урăх çынсем акаççĕ.
Яшмулапа арăмĕ
Ватăличчен пурăнман.
Пĕрре çавсем шăрăхра
Ĕçме кайнă хăнана.
Хăнана кайнă çĕрте
Шăварман тет лашине.
Каç пуласпа ĕссĕрсем
Тухнă киле таврăнма.
Иккĕшĕ те çул çинче
Çатан урапа çинче
Сиккеленсе пынă чух
Сăпкари пек çывăрнă.
Лаши ĕçес килнипе
Арман пĕви хĕрнелле,
Пысăк кĕпер патнелле,
Çитнĕ тет те шывалла
Урапи-качкийĕпех
Сĕм тарăн шыв тĕлнелле
Кĕрсе ӳкнĕ шалалла.
Ĕссĕр çынсем вăранман,
Урапа çинчен анман,
Шыва путнă аплипех.
Кала ĕнтĕ чăвашла:
Эрех ĕçме юрать-и?
Табак туртма юрать-и?

Ачу-пӑчу таса-и,
Сан ӑрӑву хӑватли,
Ёссӗр усси куртӑн-и,
Ҫурт ҫумне ҫурт хушрӑн-и?
Мӗн пек сиен пулнине
Илтрӗн ӗнтӗ ҫакӑнтах.
Ырӑран ырах пулать,
Усалтан усал пулать.

Эпир халь калаҫнинчен
Ҫын шухӑша кайӗ-ши?
Хӑй пурнӑҫӗ мӗнлине
Пахаласа пӑхӗ-ши?
Эпир халь калаҫнинчен
Ҫын хӑй ӑсӗ-пуҫӗшӗн
Пӑртак усӑ курӗ-ши?
Ҫырас тесен сӑмаха
Ҫырма пулать нумайччен.
Ку вуланӑ кӗнекен
Усси хӑҫан пулмалла?
Халӑхсен ӑсланмалла,
Вара усӑ пулмалла.
«Эпир халь те ухмах мар,
Мӗншӗн тӗлли-тӗллипе
Пире хурласа ҫырса?» —
Тесе калакан пулсан,
Вулас тесе вулакан,
Тата тепӗр хут вула.
Хӑш ҫын вулать — шухӑшлать,
Сӑмах туппине тупать.
Тепӗр ҫын ҫав вӑхӑтрах
Сӑмах туппине тупма
Нимӗн чухлӗ тӑрӑшмасть.
Ҫиелтен пӑхса тухать,
Тата пӑртакках кулать,
Вара ним те пӗлмесӗр
Пӑрахать те уттарать.
Ҫавӑн пек ан пултӑрах,
Ҫакӑ ҫырнӑ сӑмахах
Ҫывӑракан ҫын чунне
Пӗр ыйхинчен вӑратах,
Ырӑ Турӑ, ҫырлахах,
Унӑн вилӗмсӗр чунне
Ырӑланма кун парах.
Ку сӑмаха ҫыракан
Сиен тӑвасшӑн ҫырман,
Сана чӑваш мӗнлине
Куҫ умӗнче кӑтартать.
Ӳлӗм ӑслӑрах пулма
Мӗнле кирлӗ пурӑнма,
Ҫавӑн ҫинчен ерипен
Ху ҫырса хур, ан ӳркен.
Кӗнеке вӑл пыл пек мар,
Тутанса пӑхмалли мар.
Пӗтӗмпе вуламасӑр
Ун туппине тупас ҫук.
Хура халӑх кӑмӑлӗ
Тула тухса мухтанмасть.
Ӑна ӗмӗр юратни
Ҫынна сиен кӑтартмасть,
Ҫынна усӑ кӑтартать.
Ырӑ кӑмӑл, юрату,
Турра ӗненсе тӑни,
Пӗр-пӗрне шанса тӑни
Хура халӑхра нумайрах.
Уншӑн Турруна тав ту.
Ача-пӑча ачаран
Ваттисенӗн сӑмахне
Кӑмӑлпала юратать,
Ача чухне илтнине
Ӗмӗрӗпе астӑвать.
Хӑш чӗлхепе илтнине
Нихӑҫан та вӑл манмасть.
Ӑслӑ чӑваш умӗнче
Пуҫсӑртараххи малта.
Кунӗ ҫынна кун-ҫул ҫук,
Хирӗҫмешкӗн майӗ ҫук.
Пуҫсӑр ҫын пуҫсӑрланать,
Йӑвашшинех хӑратать.
Апла-капла пуласран

Çыру вĕрен ачаран.
Ним пĕлмесĕр юласран
Çырусем вула ялан.
Укçу арчара чухне
Капăрланас тĕлĕшрен
Виçĕ пусна ан хĕрхен,
Кĕнекесем курсанах
Илсе вула яланах.
Кĕнекепе çутталла
Тухса тăрать пур çын та.
Пăх-ха йĕри-тавралла:
Çут тĕнчери халăхсем
Çырăва вĕреннĕ те
Пуйса кайнă пур енчен:
Чукун çулпа çӳреççĕ,
Пароходпа çӳреççĕ,
Килĕсенче чул çуртсем
Аякран йăлкăшаççĕ.
Чăвашсем ак арантан
Хытă çăкăр çиеççĕ.
Тăванăмсем, тусăмсем,
Çыру пĕлекен çынсем!
Пĕрне-пĕри юратса,
Пулăшмашкăн тăрăшар!
Саншăн ырă хам пулам,
Эсĕ маншăн ырă пул.
Хăвăн тăванна хĕрхен,
Вĕрент ăна, ан ӳркен.
Санăн ĕмĕтӳ пит аван:
Пурăнасахчĕ, тăван —
Çут тĕнчере пур халь кун.
Эпир вилсен, ачасем
Кун-çул курччăр малалла.
Тĕрĕс тусах калатăп:
Эпĕ сана шанатăп,
Ман сăмахăма ĕнен,
Тархаслатăп чĕререн:
Пурăнассăвах килсен,
Сыхлăхлă пул ӳлĕмрен,
Ыр ĕç ту — ан ӳркен,
Усал-тĕселтен сыхлан,
Ман сăмахăма ан ман.

*1915*

## ӐНЛАНТАРУСЕМ

Тарас Кириллов чи малтан поэт пулнипе паллă. Вăл прозăлла илемлĕ хайлавсем çырман. Çавăнпа ку кĕнекене унăн сăввисемпе поэмисене çеç кĕртнĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ автор пурăннă чухнех тухнă, ку кăларăмра çав текстсемпе усă курнă. Ал çыру хальлĕн упранса юлнисене кĕнеке ум сăмахĕнче палăртнă пирки ăнлантарусен пайĕнче тепĕр хут асăнман.

Çыравçăн пултарулăх еткерĕнче публицистика хайлавĕсем чылай тĕл пулаççĕ. Вĕсенче тĕн, культура тата истори ыйтăвĕсене хускатнă. Т.Кириллов куçару ĕçĕнче те вăй хунă, фольклорпа этнографи материалĕсем пухнă. Çакăн çинчен кĕскен те пулин каласа хăварни çыравçă пултарулăхне туллинрех курма пулăшĕ.

Т. Кирилловăн прозăлла çырнисем те сахал мар. Вĕсене тĕпчени халиччен тĕл пулмарĕ. Ку тĕслĕхсене хак пама çыравçăн çырнисен пуххине пичетлесе кăларманни питĕ чăрмантарать. Вĕсем публицистика, ял хуçалăхпа медицина ыйтăвĕсемпе çырнă статьясем шутланаççĕ, пĕри истори очеркĕ шутне кĕрет: «Çутăра çӳрĕр» (1905), «Поучения и речи сельским жителям при их работах» (1904), «Защита Веры, Царя и Отечества в 1812 году» (1912).

«Çутăра çӳрĕр» кĕнекере автор хура халăха хутла вĕренме йыхăрать, çакă çынна мĕнле усă кӳнине ăнлантарса парать.

Тарас Кириллов тĕн вĕрентĕвĕшĕн кăна мар, пĕтĕмĕшле пĕлӳ илессишĕн те тăрать. Çак туртăм И.Я. Яковлевпа Н.В. Никольский халăхсене çутта кăларассишĕн ертсе пынă юхăмпа пĕр кĕвĕллĕ, вăл çĕр-шывра çырулла культура сарăлса пынине тивĕçтернĕ.

«Защита Веры, Царя и Отечества в 1812 году» («1812 çулта Чăн тĕншĕн, Патшашăн, Тăван çĕр-шывшăн тăни») — истори очеркĕ. Ăна çĕр-шывăн пĕрремĕш вăрçи иртнĕренпе çĕр çул çитнĕ май çырнă. Ку очерка автор пичетлесе кăларма ĕлкĕреймен. Унта çĕр çул каяллахи вăрçăра Раççейри халăхсем французсемпе паттăррăн çапăçнине сăнласа панă. Ал çырăва вырăс пичетĕнче тухнă кĕнекесем тăрăх хатĕрленĕ. Очерк пуçламăшĕнче чăваш халăх юррисемпе усă курнă. Авторăн тĕллевĕ — вулаканра патриотизм туйăмне вăйлатасси, Раççей историйĕнчи паллă тапхăрпа паллаштарасси.

Т. Кириллов пултарулăхĕнчи прозăлла текстсен тепĕр ушкăнĕ вăл — Н.В. Никольский патне янă çырусем. Вĕсен шучĕ чылай пысăк. Ку материалсене халиччен ятарласа пухман, хак паман. Эпистоляри жанрĕн çак тĕслĕхĕсем çыравçă ĕç-хĕлне тĕплĕрех çутатса пама пулăшаççĕ. Вĕсенчен эпир сăмах ăстин шухăш-ĕмĕчĕсене, ĕç планĕсене, хайлавсен историне, ытти çĕрте тупăнман хыпарсене пĕлме пултаратпăр. Вĕсем Т. Кирилловăн пултарулăх еткерне анлăрах пĕтĕмлетме май параççĕ.

Поэт çырăвĕсенчен иккĕшĕнче силлабо-тоника сăвă хывăмĕ çинчен самаях каланă. Ку çырусен пысăк пайĕ «Революцичченхи чăваш литератури» хрестоматин II томăн 2-мĕш кĕнекинче 2001 çулта пичетленсе тухрĕ. Ăна, çырусене вырăсла çырнине кура, «Переделка стихов нарушает музыкальность» ятпа кăларнă. Çак текстсене автор пичетлеме хатĕрлемен. Унта сăмах тăван поэзири çĕнĕ сăвă хывăм çинчен пынăран ку çырусем уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Пĕрремĕшĕнче «Çар çынни 1914 çулта вăрçă тухсан юрланă юрăсем» поэмин текстĕнче корректорсем хăйсем тĕллĕн вырăнсăр тӳрлетӳсем тунине сивлет, хăй силлабо-тоника виçипе (хорейпа) çырнине хӳтĕлет. Вăл çирĕп йĕркене кĕртсе çырнă сăвă йĕркисене пăсасран асăрхаттарать. Асăннă кĕнекере икĕ çырăва пĕрлештерсе хатĕрленĕ статья ятĕнчи шухăша уйрăмах палăртать: сăвă йĕркисене урăхлатни кĕвĕлĕхе пăсать. Ку шухăша поэт 1914 çулта каланă. Хăй те силлабо-тоника виçисемпе çак вăхăталла сăвăлама тытăннă.

Иккĕмĕш çырăвне Н.В. Никольский патне 1915 çулта янă. Кунта та сăвăç асăннă поэма текстне А. Михайлов улăштарса тӳрлетнисене йышăнмасть. Самар кĕпĕрнинчи чăваш силлаботоникăпа çырнă хайлава прозăлатса янă, сăвă ритмне пăснă: «Почти везде нарушен ритм, и стихотворная форма превращена

в прозу. Все исправление в общем превращает стихотворение в прозаическое и в то же время рифмованное произведение без всякого соблюдения ритма, т.е. правильно чередующихся ударений и числа ударов в строках». Кунта автор сăвă хывăм вĕрентĕвĕн терминĕсемпе те лайăх усă курнă.

Пурпĕрех çак çырусем чăваш сăвă хывăмĕн историйĕшĕн палăрмаллах хаклă пулса тăраççĕ, Т. Кириллов Çеçпĕл Мишшиченех Европăра анлă сарăлнă силлабо-тоника çинчен чăнласах тарăн шухăша кайнине кăтартса параççĕ. Çакна эпир унăн сăввисемпе поэмисенчен те лайăх куратпăр. Калас пулать, Т. Кирилловччен те асăннă сăвă хывăм виçисемпе çыракансем пулнă (Е. Рожанский, Г. Кореньков, Г. Комиссаров, Турхан Энтри). Пичетре кун пирки 1913 çулта Г. Комиссаров хăйĕн сăнавĕсене палăртса хăварнă. Пирĕн шутпа, Çеçпĕл Мишши çавсенчен хăшне-пĕрне пĕлсе тăма пултарнă.

1914 çул вĕçĕнче «Çар çынни 1914 çулта вăрçă тухсан юрланă юрăсем» поэмăн ал çырăвне Хусана ярса панă май Т. Кириллов акă мĕнле шухăшсене пĕлтерет: «О настоящей войне будут писать все народы и на разных языках, а потому хотелось бы видеть книжки на нашем языке. Следствием этого желания представленные Вам песни воина. При написании этих песен мною было употреблено все старание, чтобы уловить настроение народа, его мысли и чувства, и вложить это в уста воина, уходящего на войну. Как замечал, в начале войны у всех настроение было бодрое, теперь несколько изменилось: от многих солдат не получаются письма уже третий месяц. Задаюсь мыслею: собрать всевозможные рассказы о войне, о видениях, снах, болтовне, рассказы раненых о битвах и проч. Все это будет интересно в том отношении, что будет показывать картину жизни, как жил простой народ, и что он мыслил и чувствовал в настоящую войну.

В бытность мою у Вас в сентябре Вы посоветовали мне написать о помощи раненым для предполагаемого сборника патриотических статей и говорили, что средства для издания найдутся. Трудно рассчитывать, чтобы откуда и кто-нибудь помог издать такого рода сочинения, как мои стишки, а потому я решил уплатить в типографию за напечатание песен [1 сл. нрзб.] надеждой на Вас, что Вы, как и раньше, часть издания распространите путем рассылки разным лицам... Предупредите центральную типографию, чтобы она не назначала дорогой

цены на чувашские издания, уверяйте ее, что чуваши — самый бедный народ. Действительно, чуваши в нынешнем году весьма бедствуют: хлеба уродилось мало. Многие весь домашний скот распродали за бесценок».

Малтанхи сыпăкра çырнине автор кайран хăй пухнă юрăсемпе çырусен ум сăмахĕнче сăнарласа кăтартнă, ăна ятарласа сăвăланă («1914 çулта вăйлă вăрçă тапранса кайсан çырса хунă сăмахсемпе салтак юррисем, çырăвĕсем»).

Тепĕр çырура Т. Кириллов хăй вырăсларан куçаракан ал çыру ятне пĕлтерет. Ку кĕнекене чăвашла хатĕрлени çинчен калани урăх çĕрте ниçта та курăнмарĕ. Çавăнпа ун пек хыпарсем çыравçă ĕçне туллинрех кăтартма пулăшаççĕ. Акă çав хыпар: «Занимаюсь переводом «Беседы о смерти детей в младенческом возрасте, нечаянно приспанных и мертворожденных». Перевожу по желанию одного прихожанина, который хочет пожертвовать на напечатание. Готовлю стихотворное произведение о нравах чуваш».

Çыру вĕçĕнчи сăмахра «Çывăхри ял-йышсем» поэмăна 1914 çултах çырма тытăнни курăнать (çырăва 1914 çулта çырнă).

1904 çулта чăвашла «Тырă вырни» ятпа пĕчĕк брошюра пичетленнĕ. Унта авторне кăтартман. Ăна çыраканĕ Т. Кириллов теме сăлтав пурччĕ. Анчах кĕнекене Матвей Никифоров çырнă иккен. Т. Кириллов ун текстне редакцилеме кăна пулăшнă. Ку хыпара поэтăн 1904 çулхи çырăвĕнчен пĕлтĕмĕр.

Т. Кириллов Н.В.Никольский патне янă ытти çырусенче литература ыйтăвĕсене хускатса çырнисем çукпа пĕрех. Пуррисем çĕннине темех пĕлтермеççĕ. Илсе кăтартнă çырусен сыпăкĕсем хăйсен темипе те, пĕлтерĕшĕпе те XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăвашсен эпистоляри жанрĕн еткерĕнче хисеплĕ вырăн йышăнаççĕ.

Чăваш Республикин патшалăх архивĕнче Т. Кириллов ал çырăвĕсен пĕр томĕ упранать (ăна ашшĕ вилнĕ хыççăн поэт ывăлĕ Анатолий Кириллов пухса панă). Унта халиччен тĕл пулман ал çыру пур. Ăна çапла ят панă: «Наставление о воздержании в браке (по учению Св. Максима Омологета) («Арлă-арăмлă çынсен чарууллă пурăнăçĕ»). Унăн калăпăшĕ пысăк форматлă хутăн вунă листине яхăн. Ку ал çыру пичетленсе тухни паллă мар. Ятне кура ăна вырăсла текстпа усă курса çырнă.

Т. Кириллов 1904 çулта кăларнă кĕнекине та асăнмалла. Хуплашки çинче ун ятне çапла кăтартнă: «Поучения и речи

сельским жителям при их работах». Кĕнекене Т. Кириллов пухса хатĕрленĕ тесе пĕлтернĕ.

Асăннă прозăлла текстсенче те çыравçă çивĕч ыйтусем хускатнă, тăван публицистика жанрне пуянлатнă.

Т. Кириллов куçару ĕçĕнче те вăй хунă. Вăл поэзипе проза тексчĕсене куçарнă. Унăн куçарнă тексчĕсене хальлĕхе палăртса çитермен. Вĕсене никам та тишкерсе хак паман. Куçару ĕçне çыравçă хăйĕн пултарулăх пуçламăшĕнчех тытăннă. Малтан вăл прозăна куçарас енĕпе ĕçленĕ. Поэзие куçарнисем 1915 çултан тин курăнма тытăнаççĕ. Вĕсем «Вăрçă» альманахра пичетленнĕ. Ку текстсене тăлмач маларах та хатĕрлесе хума пултарнă. Çак пĕчĕк хайлавсем чиркӳ кĕллисен шутне кĕреççĕ.

Пĕрремĕшне пĕр йĕркерен тăракан хайлав темелле. Унăн вырăсла ячĕ — «Многолетие». Пĕр йĕркене чиркӳре юрласа каланине палăртма ултă хут çырса панă. Юрланă чух ăна вырăсла «многие лета» тесе каланă. Автор хайлав ятне куçарман, вырăсла хăварнă, мĕнле кĕвĕпе юрламаллине цифрăллă нотăпа палăртнă.

**Ĕмĕр вăрăм пултăр**

Ĕмĕр вăрăм пултăр,
Ĕмĕр вăрăм пултăр,
Ĕмĕр вăрăм пултăр,
Ĕмĕр вăрăм пултăр,
Ĕмĕр вăрăм пултăр,
Ĕмĕр вăрăм пултăр.

Тепĕр иккĕшĕ Раççей патшине халалланă кĕлĕсем. Пĕрин ятне «Народный гимн» тесе кăтартнă. Текстăн кĕввине те нотăпа çырнă. Вуланасса вăл прозăлла вуланать.

**Народный гимн**

Эй, Турă, патшана сыхла.
Хăватлă патшамăр,
Пирĕншĕн чаплă, мухтавлă пул.
Чăн тĕне тытакан патша,
Хăвăн тăшманусене çĕнтер.
Эй, Турă, патшана сыхла.

Теприне вара «Славься, славься, наш Русский Царь!» ят панă, ăна чăвашла куçарман. Ку текст сăвăлла вуланать.

Славься, славься, наш Русский Царь!
Савăнăç, савăнăç пултăр Сана!
Пирĕн юратнă Патшамăр Атте!
Кун-çул вăрăм пултăр Сана пурăнма,
Санпа патшалăх савăнмалла пултăр. Урра!

Савăнăç, савăнăç пултăр Сана!
Пирĕн юратнă Патшамăр Атте!
Мускав, Питĕр, пĕтĕм Россия юрлать.
Патша, паян праçник туса, Турра тав тăвать.

Савăнăр, савăнăр пурте паян,
Юрлăр, пурте пысăк праçник туса.
Патша паян халăха тухса курăнать,
Халăх чун пекех Ăна кун-çул сунса савăнать.

Савăнăç, савăнăç пултăр Сана,
Пирĕн юратнă Патшамăр Атте!
Кун-çул вăрăм пултăр сана пурăнма,
Санпа патшалăх савăнмалла пултăр. Урра!

Пĕрремĕшпе виççĕмĕш текстсенче силлабо-тоника виçисем уçăмлă сисĕнеççĕ. Малтанхи хорей, тепринче дактильпе амфибрахи çемми палăрать. Илсе кăтартнă тĕслĕхсенче сăнарлăх çук. Вĕсенче ертӳçĕсене кулленхи сăмахсене ырă сунса калани тĕпре тăрать. Пĕр текстне те рифмăламан, тĕрлĕрен илемлĕх мелĕсем те курăнмаççĕ. Ку вăл, паллăх, хайлавсене чиркӳре юрлама çырнăран килет.

Сăвăлла çырнă тăваттăмĕш хайлава «Автан» тесе ят пама юрать. Оригиналта ячĕ çук, автор текста татăклăн вĕçлесе çитермен пулас. Ăна ачасем валли вырăсларан куçарнă сăвă теме май пур.

Эй, сар автан, сар автан,
Сан çĕлĕкӳ ылттăнтан.
Ирех тăран ыйхăран, ыйхăран,
Çунат çапса юр юрлан.

Кикӳрекку юрру пур, юрру пур,
Çур çĕр çитсен вăл янрать,
Яла-йыша вăрататать, вăратать —
Вăхăт пĕлме пит аван.

Эй, сар автан, сар автан,
Пурăнуçу пит аван, пит аван,
Кил хушшинче уткалан,
Тутарсем пек пурăнан.

Сăвă тӳрех вырăс халăхĕ хушшинче сарăлнă «Петушок» юрра аса илтерет. Т. Кириллов ăна 1918 çулта пирĕншĕн паллă мар текстран куçарнă темелле (ал çырура вырăсларан куçарнине асăнман). Вырăссен юрри тĕрлĕ вариантпа çӳрет. Акă вĕсенчен пĕри:

Петушок, петушок,
Золотой гребешок.
Масляна головушка,
Шелкова бородушка.
Что ты рано встаешь,
Голосисто поешь,
Деткам спать не даешь.

Текст юрă валли хывнăскер пулни сăмах çаврăнăшĕсене темиçе хут каланинченех сисĕнет. Мăшăр рифмăсем хайлав янăравлăхне вăйлатаççĕ. Автан авăтни вăхăта пĕлме пулăшни çинчен вырăс юррисенче час-часах асăнаççĕ. Т. Кириллов суйласа илнĕ текстра автана тутарсемпе танлаштарса калани те пулнă ахăр. Ку деталь автан сăнарне кăштах кулăш сĕмĕ те кӳрет. Тишкерекен сăвă чăвашла халиччен пичетленмен. Ун хыççăн поэт хайлавсем çырни паллă мар.

Сăвăçăн прозăлла куçарăвĕсем пирки те пĕр-икĕ сăмах каласа хăвармалла. Хальлĕхе вăл икĕ кĕнеке чăвашла куçарса кăларни татăклăнах паллă теме юрать. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче ун пек кĕнекесене кам куçарнине кăтартман. Çавăнпа вăл-ку кăларăма кам хатĕрленине тĕрлĕрен документсем урлă кăна пĕлме пулать. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх библиотекинче упранакан «Отец Иоанн Ильич Сергиев (Кронштадский)» кĕнекере Н.В. Никольский хăй аллипе çапла çырса хунă: «Перевод (XII/17 1903—1904 II/17) Т. Кириллова в кварт[ире] надз[ирателя] К[азанской] Д[уховной] С[еминарии]. Там же было редактирование (с II/17—IV/27) у чуваш Н[иколая] В[асильевича] Н[икольского], И[вана] Д[митриевича] Н[икитина], Т[араса] К[ирилловича] К[ириллова], В[асилия] Н[икифоровича] Н[икифорова]». Ку хыпара шанчăклă документ тесе йышăнмалла. Вăл пире куçарусене Н. Никольский хăй çеç мар, ытти çынсем те юсаса тӳрлетни çинчен пĕлтерет. Çавăнпа прозăлла куçарусенче диалектизмсем сахалрах тĕл пулаççĕ (Т. Кирилловăн сăвăлла тексчĕсенче вырăнти калаçу сăмахĕсене сахал мар асăрхарăмăр). Асăннă кĕнеке тĕн лите-

ратури шутне кӗрет. Вăл Т. Кириллов куçару ӗçне 1904 çулта тытăннине кăтартать.

Поэт куçарнă иккӗмӗш кӗнеке «Беседа о смерти детей в младенческом возрасте, нечаянно приспанных и мертворожденных» («Ачасем пӗчӗклех вилни çинчен, çывăрнă чухне амăшӗсем айне пулса вилнӗ ачасем çинчен тата унсăр çуралакан ачасем çинчен») ятпа 1914 çулта пичетленнӗ. Ăна кам куçарнине те архиври хут пӗлтерет: Тарас Кириллов 1914 çулта Н. Никольский патне янă çырура шăпах çак кӗнекене куçарма тытăнни çинчен каланă. Вăл та илемлӗ литература шутне кӗмест.

Кун пек куçарса кăларнă брошюрăсем Т. Кирилловăн татах та пулма пултараççӗ. Унăн килти архивӗнче вунна яхăн çӳхе брошюрăна пӗрле çӗлесе хунă хулăн кӗнеке юлнă. Унта «Пулăшăр» ятлине те кӗртнӗ, ыттисем вара пурте прозăлла. Анчах вӗсене кам çырнине те, кам куçарнине те палăртман. Поэт хăй куçарнисене çапла пӗр çӗре çӗлесе хума та пултарнă. Ку ыйтăва малалла тӗпчемелле.



Сулахайран сылтăмалла: лараççĕ — **Т.К. Кириллов, Е.В. Кириллова;**
тăраççĕ — **Хусанти тĕн семинарин студенчĕсем.**
Хусан, 1905 çç.



**«Тырă пулнă çул» поэмăн малтанхи варианчĕ, хайлав вĕçĕ.**
1904 ç. ЧПГĂИ ĂА. I, 151. С. 191.

# БИБЛИОГРАФИ

*Никольский Н.* Взгляд у чуваш на воинскую повинность // Православный собеседник, 1905. Янв. 179—188 с. Февр. С. 362—370.

*Сироткин М.* Тарас Кирилловăн юрри-сăввисем // Тăван Атăл, 1947. 30№. С. 95—98.

*Тукташ И.* Чăваш литератури. 8—9 классем валли учебник. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1952.

*Сироткин М.Я.* Т.К. Кириллов // Очерки дореволюционной чувашской литературы. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1967. С. 231—238.

*Юрьев М.* Тарас Кириллов // Чăваш календарĕ, 1970. Шупашкар, 1969. С. 30.

*Юмарт Г.* Революцичченхи чăваш лирикин çул-йĕрĕ // Сб. Чувашский язык, литература и фольклор. Вып. 1. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1972. С. 277—320.

*Юмарт Г.* Тарас Кириллов // Тăван Атăл, 1975. 2№. С. 79—80.

*Долгов В.* Юрăхсăра ырланине хирĕç // Ялав, 1976. 12№. С. 29—30.

*Титов Г.М.* К вопросу об идейных направлениях в дореволюционной чувашской литературе // О чувашской литературе. Сб. ст. ЧНИИ, вып. 77. Чебоксары: Чувашское книжное издательство, 1977. С. 3—24.

*Юмарт Г.* Уямасăр хурланине хирĕç // Ялав, 1990. 12№. С. 28—29.

*Артемьев Ю.М.* Т.К.Кириллов // Ĕмĕр пуçламăшĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1996. С. 158—173.

*Комиссаров Г.И.* Чăвашсем çинчен. Шупашкар: Издательство Чувашского университета, 2003. — 179 с.

*Юмарт Г.* Н.Никольский пилленĕ çыравçă // Çамрăксен хаçачĕ, 2005.03.11.

*Афанасьев П.В.* Кириллов Тарас Кириллович // Писатели Чувашии: Библиографический справочник. Чебоксары: Чувашское книжное издательство, 2006. С. 204—205.

*Пантелеймонов Н.П.* Тăванĕсем Т.К. Кириллов поэт ятне упраççĕ // Художественная словесность и проблемы чувашской духовной культуры. Сборник материалов научно-практических конференций отдела литературоведения и фольклористики. Чебоксары: ЧГИГН, 2008 (На рус. и чув. языках. Серия «Эткер»). С. 119—128.

## ТУПМАЛЛИ

*Г. Юмарт, И. Трофимова.* **Тарас Кириллов поэзийĕ**....................5

**С Ă В Ă С Е М**....................*35*
**Турра манса ан кайăр**....................*35*
**Пулăшăр**....................*37*
**1861 çулхи нарăсăн 19-мĕшĕ — 1911 çулхи нарăсăн 19-мĕшĕ**....................*42*
**Патша çинчен хывнă юрăсем**....................*48*
**Çӳлти Сион**....................*51*
**Львовпа Перемышле илни çинчен хунă юрă**....................*52*
**1914 çулта вăйлă вăрçă тапранса кайсан çырса хунă сăмахсемпе салтак юррисем, çырăвĕсем**....................*53*
**Салтак арăмĕ сăпкари ачине сиктерсе ларнă чух юрланă юрри**....................*55*
**Чăваш халăх юрри**....................*58*

**П О Э М Ă С Е М**....................*61*
**Тырă пулнă çул**....................*61*
**1812 çулхи вăрçă çинчен хывнă юрăсем**....................*70*
**Хресчен хăй ĕçĕ çинчен хывнă юрăсем**....................*73*
**Турă тăрăшакана юрататъ, тăрăшакан ырă куратъ**....................*79*
**1914 çулта вăрçă тухсан çар çынни юрланă юрăсем**....................*96*
**Турă çинчен**....................*102*
**Çывăхри ял-йышсем**....................*125*

**ĂНЛАНТАРУСЕМ**....................*151*
**БИБЛИОГРАФИ**....................*161*

Чувашский государственный институт
гуманитарных наук

**Тарас КИРИЛЛОВ**

# ИЗБРАННОЕ

**стихи, поэмы**

На чувашском языке

Составитель *Геннадий Федорович Юмарт*

Художественный редактор *А.А. Трофимов*
Редактор *Т.Н. Таймасова*
Корректор *Г.И. Алимасова*
Компьютерная верстка *Н.И. Никифоровой*

Подписано к печати 1.11.2010. Формат 60x90 $^1/_{16}$
Гарнитура типа Times. Печать оперативная. Физ.печ.л. 8,55 а.л.
Тираж 100 экз. Заказ №45.

Отпечатано в типографии Чувашского государственного
института гуманитарных наук
428015, Чебоксары, Московский пр., 29/I